## Хурапа шурă

1

Пĕрремĕш тĕнче вăрçин виççĕмĕш çулĕнче эпĕ фронтра йывăр суранлантăм. Госпитальте сулахай урана чĕркуççирен аяларах татса сыватнă хыççăн мана киле ямалла турĕç. Çав вăхăтра эпĕ çирĕм икĕ çулхи çамрăк кăначчĕ-ха, çавăнпа малтан ытла кулянма та пĕлмерĕм. Килте атте-анне пур, йăмăк тата икĕ инке пур, пăрахмĕç-ха, пăхкалĕç тесе шухăшларăм; пиччесем ку вăхăтра çартаччĕ.

Тăван килте мана чăнахта хавассăн кĕтсе илчĕç, аван пăхрĕç. Аттепе анне ывăлĕ мĕнле сусăрланнине курсан малтан чăн та хытă кулянчĕç, ăшăрханчĕç. Каярахпа вара, лăпланнă пек пулса, хуйхăрнине питех палăртмарĕç.

Килте те эпĕ салхуланмах пĕлмерĕм-ха. Пурăна киле акă ура валли протез туса парĕç те чиперех çӳреме пуçлăп тесе шухăшларăм. Пăшăрханмалли те пĕр сăлтав çеç пулчĕ. Ку сăлтав - салтака кайиччен хампа туслă пурăннă хĕр, Анюк, хăй сăмахне тытманни пулчĕ. Вăл эпĕ йывăр суранланнă тенине илтсенех урăх çынпа - вăрçăран пĕр шĕвĕр пӳрнине кăна татса таврăннă йĕкĕтпе - туслашнă таваскасах качча тухнă. Анюк пăрахни мана хытах кӳрентерчĕ. Анчах халь ĕнтĕ ăна эпĕ хам та часрах манма тăрăшрăм. Тата хам инвалид пулни те мана хĕрсем çинчен сахалрах шухăшлама хушрĕ.

Пӳртре те, кил хушшинче те ларса йăлăхсан костыльсем çине уртăнса пахчаçимĕççемпе ешерекен анкартине тухаттăм. Унта купăстапа çĕрулми çеçкисем çинче вĕлтĕртетсе вĕçекен сарă лĕпĕшсем çине пăхса йăпанаттăм, сарай хыçĕнчи пĕчĕк йывăç пахчине кĕрсе пилешпе çĕмĕрт тĕмĕсем хушшине лараттăм та шухăша каяттăм. Шухăшсем ман нумайччĕ. Çеремри чечексем çинче сĕрлесе вĕçекен тĕкĕлтурасем пикенсе ĕçленине сăнаса ларнă хушăрах фронтри пиччесемпе çывăх тус-юлташсене аса илеттĕм. Чĕрĕ-ши, сывă-ши вĕсем çак сехетре? Тĕрĕс юлайĕç-ши ку вĕçĕ-хĕрри курăнман вăрçăран?

Киле таврăннăранпа пĕр уйăх иртсе кайрĕ. Ял çыннисем утă çулма тухрĕç. Пирĕн килтисем те пурте сарана каяççĕ. Хирти ĕçсем пуçланиччен ман пата час-

часах кӳршӗ ҫыннисем пырса ларатчӗҫ. Халь вара кӑнтӑрла никам та пымасть. Мана, пӗчченрен пуль, тӳсме ҫук кичем пула пуҫларӗ. Ҫитменнине тата суранлӑ ура шыҫса кайрӗ, ыратса канӑҫ пами пулчӗ.

Пӗррехинче каҫпала хамӑр кил умӗнче ларнӑ чух манӑн утӑ ҫулса таврӑнакан Анюка курма тӳр килчӗ. Вӗсем упӑшкипе пӗрле ещӗклӗ урапа ҫине иккӗшӗ ик енне пӑхса ларнӑ та лашине ерипен уттарса пыраҫҫӗ. Пуҫне шурӑ тутӑр ҫыхнӑ, шурӑ кӗпе тӑхӑннӑ чӑмӑр питлӗ Анюк, пирӗн кил енчи урам кассинелле пӑхса лараканскер, малтан пӗр хускалми пыратчӗ. Патӑрах ҫывхарсан хайхи мана асӑрхарӗ те хӑвӑрт хусканка-ласа илчӗ, пӗрре малалла, тепре каялла пӑханҫи пулчӗ, унтан упӑшки аллинчи тилхепене ҫулӑхса илчӗ те лашине хыттӑн турткаларӗ. Лаши хӑвӑрт юртса кайрӗ. Пирӗн умпа иртнӗ чух, ним асӑрхаман пекех, Анюк ман ҫине кӑшт та пӑхмарӗ. Чылай кайсассӑн тин каҫхи ӗнтрӗкре ун шурӑ кепи те тӗксӗммӗн курӑнма пуҫласан вӑл каялла ҫаврӑнса пӑхнӑ пектуйӑнчӗ...

Манӑн кӑмӑл хуҫӑлчӗ...

Пулаҫҫӗ иккен ҫӗр ҫинче тупа туса панӑ сӑмахне те тытман ҫынсем!

Хӑй мана темиҫе хут та ӗмӗр манмӑп тесе сӑмах панӑччӗ. Пуҫу ҫеҫ таврӑнтӑр, кирек мӗнле аманса килсен те эпӗ сана пӑрахас ҫук, ӗмӗр пӗрле пурнӑпӑр тенӗччӗ. Халӗ вара мӗнле?! Эпӗ йывӑр аманнӑ тенине пӗлсенех вӑрҫӑран хӑтӑласшӑн пӳрнине кӑна татса таврӑннӑ йӗкӗте курнӑ та васкасах ӑна качча сиксе тухнӑ! Иртсе кайнӑ чух упӑшки сисмен хушӑра та. пулин аллипе сӗлтсе йӑл кулаясчӗ хуть! Эпӗ сапах та кӑмӑллӑ юлнӑ пулӑттӑм...

Анчах ҫав вӑхӑтрах тата пуҫра тепӗр шухӑш та тӗвӗленет. Чӑнах та, мӗншӗн ҫаплах кӗвӗҫетӗп-ха эпӗ? Анюк, тен, тӗрӗс те турӗ пулӗ... Кама кирлӗ, мӗне юрӑхлӑ ҫын ӗнтӗ эпӗ халь? Кам качча тухтӑр мана? Сывӑ хӗре илсе ӑна нушана чикмелле-и? Ҫук, тӗрӗс мар ку! Хам тӗрӗс мар шухӑшлатӑп эпӗ. Мана тек нимле хӗр те юратас ҫук, хам та вӗсем ҫине пӑхма тивӗҫлӗ мар. Малашне манӑн юрату ҫинчен калаҫма та, шухӑшлама та пӑрахмалла.

Ҫакӑн хыҫҫӑн эпӗ чӑнах та хӗрсемпе юрату ҫинчен калаҫма хӑяймарӑм. Кам пӗлет, тен, нумай та пурӑнаймӑп. Хамӑн кӗске ӗмӗре хусаххӑн, пӗр-пӗччен ҫеҫ

ирттермелле пулать тесе çех шухăшларăм... Çĕнĕрен уçăлнă суран хытăран хытă ыратма пуçларĕ, сывлăх начарлансах пычĕ, çакна пула манăн кăмăлăм та кунран-кун салхуланчĕ, пĕтĕм пурнăçăма йывăр сӳрĕклĕх тытса илчĕ. Салхулăхпа сӳрĕклĕх пуснă май çынпа та калаçас килми пулчĕ.

Эпĕ хама больницăна илсе кайма ыйтрăм. Атте килĕшрĕ.

Çывăхри больницăра врач та çук, выртмалли вырăн та пулмарĕ. Çакăн пирки хамăртан çирĕм пилĕк çухрăмри Нурăс больницине кайса выртмалла пулчĕ.

Нурăс - пирĕннипе юнашар вулăсăн центрĕ, пасарлă пысăк сала. Кунта уездри влаçăн çывăхри тăвата вулăсне пăхса тăракан виççĕмĕш стан чиновникĕсем пурăнаççĕ. Çавăнпа больници те пысăкрах, - унта пĕр врач, икĕ фельдшер ĕçлеççĕ.

Врач, вăтам çулалла çитнĕ ăшă кăмăллă та самăр хĕрарăм, суранăма пăхсан:

- Больницăна хурас пулать, пĕр-икĕ уйăхах выртма тивет, - терĕ.

Вăл каланипе эпĕ пĕр сăмахсăрах килĕшрĕм.

**2**

Нурăс больници, пĕр вун-вуникĕ çул ĕлĕкрех уçнăскер, чылаях кивелнĕ лутра йывăç çурта вырнаçнă. Унта пурĕ те икĕ палата та чирлисене пăхмалли тепĕр хĕсĕк пӳлĕмпе кирлĕ хатĕр-хĕтĕре хурса усрамалли чăлан пекскер çех. Больница хыçĕнче - çăра çулçăллă йывăç пахчи. Унта çăка, тирек, пилеш, çĕмĕрт, шĕшкĕ тĕмĕсем. Тикĕс сукмак хĕррисемпе акаци хунавĕсем лараççĕ. Йывăç пахчипе юнашар - апат пĕçерекен кухня çурчĕ, урам кассинче — фельдшерсемпе санитарсем пурăнмалли икĕ пӳрт. Чылай аякра, пасар пухăнакан урам уçлăхĕн кĕтессинче, врач пурăнакан тăваткал тăрăллă йывăç çурт ларать.

Больницăри палатăсенчен пĕринче арçынсем, тепринче, пĕчĕкреххинче, хĕрарăмсем выртаççĕ. Вĕсенче пурĕ вунпилĕк койка. Арçынсен палатинче мансăр пуçне т а та икĕ чăваш, икĕ нимĕç, пĕр мадьяр выртаççĕ, икĕ койки пушах. Нимĕçсемпе мадьяре Германипе Австрии тыткăна лекнĕ салтакĕсем иккен.

Вĕсем вăрманта ĕçленĕ чух чирлесе ўкнĕ-мĕн.

Хуласенчен инçетре, улах кĕтесре ларакан салари пурнăç, паллах, çав тери лăпкăччĕ ĕнтĕ. Уй ĕçĕсем пуçланнипе ку лăпкăлăх пушшех те сисĕнетчĕ. Салари пĕр шăв-шавсăр пурнăç пире, чирлĕ çынсене, пĕтĕм тĕнче ыйха кайнă пекех туйăнтаратчĕ. Салинче эрнере пĕрре, вырсарникун, пасар пулса иртет. Анчах та халь вăрçă вăхăчĕ пирки тата уйри ĕçсем пуçланнине пула пасарĕсем те сисĕнми, шăппăн пуçтарăнса иртеççĕ, вĕсене çын пит те сахал пухăнать...

Больницине таса тытаççĕ. Çимелли тĕлĕшĕнчен те аптрамаллах мар-ха. Анчах таврари шăплăха пула манăн килте пуснă кичемлĕх иртсе каймарĕ. Вăхăта ирттерме хаçат-кĕнеке вулас килет. Анчах больница çумĕнче библиотека пекки çук. Юрать-ха пĕр чăваш фельдшерĕн хăйĕн кĕнекисем пулнă та, эпĕ ыйтнипе вăл мана вĕсене илсе пырса паркалатчĕ.

Малтанхи виç-тăватă кун маншăн, килти пекех, чĕрене пăвакан йывăр туйăмпа шуса иртрĕ. Пуçри салхуллă шухăшсем хăçан та пулин е мĕнле те пулин сирĕлсе каясса эпĕ пĕлме те пултарайманччĕ. Анчах пурнăçăм пĕр кĕтмен çĕртенех хăвăрт улшăнчĕ. Лăпкă та кичем больница палатисенче, çурхи хĕвел шевли кĕрсе выляна евĕр, чĕрене сиплĕхлĕ пурнăç çути кĕрсе вăй-хала çĕклесе ячĕ. Ку улшăну çакăн пек килсе тухрĕ.

Июль пуçламăшĕнчи пĕр уçă çанталăклă ир. Палатăра кĕç-вĕç врач пырса кĕрессе кĕтсе выртатпăр. Çак самантра алăк шăппăн уçăлчĕ те, çăмăл çил хумĕ пек вăркăшса пўлĕме шап-шурă халат тăхăннă çамрăк санитарка кĕрсе тăчĕ. Вăл тин çеç ўссе çитĕннĕ çинçешке те йăрăс пўллĕ хĕр, çийĕнчи тумĕ пекех шурă, таса сăнлăскер, алăкран кĕрсенех пуç тайса пурне те сывлăх сунчĕ.

- Ой, Лена çитрĕ! Лена!.. - хавассăн кăшкăрса ячĕç палатăри çынсем.

Нимĕçсенчен пĕри, Биллем Шульц, тĕрлĕрен мыскара тума юратаканскер, санитарка патне чупса пычĕ те ăна аллинчен тытса чуптума та ĕлкĕрчĕ. Санитарка аллине нимĕçрен туртса илсе ăна, хăйне ыталама пуçланăскерне, çăмăллăн тĕксе ячĕ. Нимĕç шўтлесе, юриех кăлтăрмач пек çаврăнса пĕр кĕтеселле чупса кайрĕ. Палатăри çынсем пурте кулса ячĕç.

Ăшшăн йăлкăшса кулакан сенкер кăвак куçлă хĕр палата варринелле иртсе

тăчĕ, унталла-кунталла пăхкаларĕ, унтан мана тĕллесе илчĕ те хуллен кăна:

- Çĕнĕ çынсем те пур-çке кунта! - тесе хучĕ.

- Пур-ха, пур, - терĕм те эпĕ алăри кĕнекене çумри тумбочка çине хутăм. Илемлĕ хĕрĕн таса сăн-пичĕпе йăрăс пĕвĕ çине ытараймасăр пăхнă май кăмăлăм çĕкленсе кайрĕ, чĕрем йăвинчен вĕçсе тухма тытăннă кайăк евĕр тăпăртатрĕ. Анчах та ăна мĕн те пулин калама урăх сăмах тупаймарăм-ха.

Хĕр манăн бинтпа чĕркенĕ татăк урана тата койка айĕнче выртакан костыль вĕçĕсене курчĕ те пăртак шухăшласа тăнă хыççăн:

- Вăрçăра аманнă пулĕ ĕнтĕ?.. Ыратать-и? - тесе ыйтрĕ.

- Çавăн пек çав. Ыраткалать, - хушса хутăм эпĕ ун çинеллех пăхса выртса.

Санитарка эпĕ тинкерсе пăхнинчен именсе пулас хăйне чĕннĕ çынсем еннелле çаврăнчĕ те вĕсемпе калаçма пуçларĕ.

- Хăçан килтĕн вара, хĕрĕм?.. Эпир кунта сансăр йăлтах тунсăхласа çитрĕмĕр ара! - терĕ ăна чирлисенчен пĕри, ватăрах чăваш.

Хĕр ĕнер каçхине тин çитни çинчен каласа паче. Вăл чăвашла аван калаçать, анчах унăн çемçен тухакан сăмахĕсенче çапах та вырăс чĕлхи акценчĕ пурри палăрать. Санитаркăпа кашниех пĕр-икĕ сăмах та пулин калаçса илме тăрăшать. Эпĕ вара ун çинчен куçăма та илейместĕп. Чăнах та ытарайми илемлĕ хĕр вăл: кăшт тăрăхларах пĕчĕк пит-куçлă та тӳрĕ сăмсаллă, яштак хăва хулли евĕр çинçе пӳллĕ; çăт çыхса янă çӳхе шурă тутăрĕ айĕнчен унăн ука пек çутă сарă çӳç пайăркисем тухса тăраççĕ...

Илемлĕ хĕрсене эпĕ госпитальсенчи сестрасемпе санитаркăсем хушшинче чылаях куркаланă. Анчах хуласенчи хитре хĕрсем нумайăшĕ хăйсене мăн кăмăллă тыткалаççĕ. Хăшĕсем тата çăмăлттай та вылянчăк ăслăччĕ е ачаш кăмăллăччĕ - ун пеккисем мана килĕшмеççĕ.

Ку санитарка, лăпкă кĕтесри чăваш хушшинче ӳснĕскер, пĕрре тĕл пулсанах хăйĕн сăпайлăхĕпе тыткăна илчĕ. Вăл хăйне кăшт именчĕкреххĕн тыткалать, анчах пуринпе те уçă кăмăлпа, ăшшăн калаçать. Ку ĕнтĕ вăл никама та кӳрентересшĕн марринчен килет пулмалла - чирлисене пăхакан санитаркăн çавăн пек пулма кирлĕ те. Лена хуласенчи буржуа е мещен-хĕрарăмсен

йăлисене йышăнса пăсăлман-ха. Ку хĕр хресчен хушшинче ӳссе йывăр ĕҫсемпе те, нушапа та паллашса ҫитнĕ пулмалла. Ҫапла шухăшларăм эпĕ ҫамрăк санитарка палатăри чирлĕ ҫынсемпе йĕркеллĕн калаҫнине итлесе выртнă вăхăтра.

— Эсир кунта ĕҫлетĕр пулмалла? Ăҫта кайса килтĕр-ха апла? – ыйтрăм эпĕ вăл тепĕр хут ман енне ҫаврăнсан.

- Кунта ĕҫлетĕп... санитарка. Курма тесе пилĕк кунлăха киле кайнăччĕ те... Пилĕк кун мĕнех вăл?!. Часах иртсе кайрĕ. Ĕнер атте леҫсе хăварчĕ. Ҫĕрле пулсан тин ҫитрĕмĕр, - каласа пачĕ хĕр ман койка пуҫне пырса тăрса.

Пирĕн хушăра лăпкă калаҫу пулса иртрĕ. Эпир пĕр-пĕринчен хамăр ăҫтисем иккенне ыйтса пĕлтĕмĕр. Лена Нурăсран ҫирĕм ҫухрăмра ларакан тепĕр вулăс центрĕнчен иккен. Чăваш хушшинчи вырăс хĕрĕ, вăл чăвашла лайăх вĕренсе ӳснĕ.

Ансăр коридорăн тепĕр енчи хĕрарăм палатинчен врачпа фельдшер калаҫни илтĕнчĕ. Лена ура вĕҫҫĕн утса унталла тухса кайрĕ. Эпĕ хамăн улăм тӳшекпе утияла лайăхрах тирпейлесе хутăм та кравать хĕррине лартăм.

"Илемлĕ хĕр... Калаҫасса епле сăпай калаҫать тата!" - шухăшларăм эпĕ врач пырасса кĕтсе ларнă май.

...Ҫак кунран пуҫласа манăн ҫамрăк санитаркăпа пĕрмаях курнăҫмалла пулчĕ. Вăл ирпе те, кăнтăрла та, каҫпала та тĕрлĕрен ĕҫпе текех палатăсене пыра-пыра каять. Кашни пымассерен манпа пĕр-ик сăмах та пулин калаҫса илет: ара, больницăра выртакансем хушшинче эпĕ пуринчен те ҫамрăкраххи-ҫке-ха!

Пурăна киле, ĕҫрен пушаннă вăхăтсенче, Лена ятарласах ман пата калаҫса ларма та пыма пуҫларĕ. Эпир хăюллăрах та нумайрах калаҫма тытăнтăмăр. Анчах темĕнле вылятса, кулса калаҫсан та палатăри ҫынсем умĕнчех юрату ҫинчен калаҫма хăяймастăмăр-ха. Эпĕ ăна пуринчен ытла фронтри пурнăҫ ҫинчен, хам мĕнле суранланни тата тĕрлĕрен госпитальсенчи пурнăҫ йĕркисем ҫинчен кала-кала патăм. Вăл ҫак хушăрах манăн килти пурнăҫ ҫинчен тата юратнă хĕрсем пулни-пулманни ҫинчен те тĕпчесе пĕлчĕ. Ăна уйрăмах эпĕ Анюк ҫинчен, унпа ĕмĕр пĕрле пурăнма сăмах татни тата вăл эпĕ йывăр сусăрланнине

пĕлсен мана пăрахса урăххине качча кайни çинчен каласа пани хытă тĕлĕнтерчĕ.

- Ай, пулаççĕ те çав ултав чĕреллĕ, хăйсен сăмахне тытма пултарайман хĕрсем! Каччи вăрçăра çунать, йывăр суранпа асапланать, а вăл ăна хĕрхенес, унăн чунне лăплантарас, асапне çăмăллатас вырăнне хăй панă сăмахне манать те урăх каччăпа пурăнма тытăнать! - терĕ вăл.

- Çавăн пек çав хăш-пĕр хĕрсем, Лена. Аманса сывă çын ретĕнчен тухнă каччăсене юратмаççĕ те, хĕрхенмеççĕ те... Ну, ун пек чух пурте çавнашкалах писеççĕ пуль вĕсем, - тесе хутăм эпĕ вăл мана хĕрхенсе пăшăрханнине хирĕç.

Лена аллине сулчĕ.

- Ах, апла ан шутлăрах эсир! Пурте ун пек мар, ун пек пулас çуках. Хĕрарăмсем хушшинче таса кăмăллă тӳрĕ çынсем сахал мар, - тавăрчĕ вăл мана сасартăк кӳреннĕ пек пулса.

- Чим-ха, Лена. Тĕрĕссипе калăр: эсир хăвăр çав Анюк пек пулмăттăр-и вара? - терĕм эпĕ ăна пӳлсех.

Лена сăн-питне хытарса пуçне сулкаласа илчĕ те хуллен кăна:

- Çук, килĕшмест ку... Тĕрĕссипе каласан эпĕ халь çамрăк-ха. Пурнăçа сахал пĕлетĕп, тата юратса та курман темелле. Çапах та хам пĕрре панă сăмаха улăштарса çынна улталассăн туйăнмасть мана... Эпĕ нуша-инкек тӳсекенсене, уйрăмах вăрçăра аманнă çынсене, хĕрхенетĕп, - тесе хучĕ...

## 3

Эрне ытларах выртнă хыççăн ман урари шыçă чакрĕ. Анчах та суран тӳрленмерĕ-ха. Врачпа фельдшерсем аван пăхрĕç: сурана куллен çурĕç, тасатрĕç, пур пек эмелĕпе сиплерĕç, Лена ăна тăрăшсах бинтсемпе тирпейлĕн çыха-çыха ячĕ. Шыçă иртнĕ хыççăн врач мана утса çӳреме те ирĕк пачĕ.

- Эх, вăрçă, вăрçă! Мĕн чухлĕ вăйпитти арçын. вăхăтсăр пĕтет!.. Пирĕнне те икĕ пиччене илсе кайрĕç. Пĕри, асли, ним хыпарсăр çухалчĕ. Çыру ямании çулталăк çитет ĕнтĕ. Тепри çыркалать те, анчах темле хăтăлкаласа таврăнĕ,

паллă мар. Атте-анне текех вĕсемшĕн кулянать, - каласа парать мана Лена сурана çыхнă чух.

Ăшă кунсенче эпĕ уçă сывлăшпа сывлас тесе (тата Ленăпа тĕл пулас сăлтавпа та) тăтăшах йывăç пахчине тухса ларма пуçларăм. Унта хăйăр сапса якатнă сукмак хĕрринчи тенкел çине вырнаçатăп та фельдшертан илнĕ кĕнекесене вулатăп. Пахча таврашĕнче автансем шарлаттарса авăтаççĕ, чĕкеçсем, çерçисем чĕвĕлтетеççĕ. Лена пырса çитсен манăн кăмăл уçăлсах каять, вара кĕнекене тенкел çине хуратăп та вулассине те йăлтах манатăп. Темиçе кун хушшинчех эпĕ çак сăпайлă санитаркăна çав тери хăнăхса çитрĕм. Ăна ман пĕр вĕçĕмсĕр курас килекен пулчĕ, чĕрем ун еннеллех туртăна пуçларĕ. Çакăнпа пĕрлех шăмшака та темĕнле чĕрĕ вăй кĕнĕ пек туйăнчĕ, салхулăхпа кичемлĕх сирĕлчĕç. Эпĕ çынсемпе те хавассăн калаçма тытăнтăм, - ăна хампа пĕрле выртакансем те

асăрхарĕç.

"Чăннипех юратса пăрахрăм-ши вара эпĕ ку хĕре? Унăн сăнĕ асран пĕрре те тухмасть-çке! Мĕнле ку ытла та хăвăрт пулчĕ-ха капла?" — шухăшлама пуçларăм эпĕ хам улшăннинчен хам тĕлĕнсе.

Анчах кĕçех тата пуçа урăхла шухăш та кĕрсе пăлхатать. "Эпĕ юратăп та, вăл хăй юратас çук çав. Кама юрăхлă çын ĕнтĕ эпĕ çак касса-çуркаласа пĕтернĕ урапа? Хĕрсем юратма тивĕçлĕ каччă мар! Калаçса ларни те ахалех, вăхăта йăпанса ирттерни çеç", - тесе шухăшлатăп.

Çакăн пек кичем шухăшсем хыççăн каллех тепĕр майлă ĕмĕт тухса чунчĕрене пусарать: "Ах, чим-ха... Мĕн пирки вăл хăй те манпа лайăх, ăшă кăмăлпах калаçать-ха тата? Калаçать çеç мар, тăтăшах манпа тĕл пулма та тăрăшать. Вĕçĕмсĕр калаçса ларма та килĕшнĕ пулĕччĕ, анчах ĕçĕсем васкатнипе çеç уйрăлса каять... Мĕншĕн ку? Тен, ялсенче сывă çамрăксем çуккипе пулĕ? Каччăсене пурне те тенĕ пекех çара илнĕ, вĕсем фронтсенче çапăçаççĕ. Яла ман пек чăлах-уксахсем кăна таврăнкалаççĕ. Тен, вăл ирĕксĕртен çеç манпа калаçкаласа йăпатать хăйĕн çамрăк хĕр чунне?" - тесе пĕр вăхăтрах темĕн тĕрлĕ иккĕленетĕп те, лăпланатăп та.

Шăрăх кунсенче йывăç пахчинчи çăра çулçăллă шĕшкĕ тĕмĕсем хÿттинче тĕл пулса эпир унпа кун каçиччен виç-тăвата хутчен те калаçатпăр..Эрне хушшинчех пĕр-пĕрин пурнăçне пĕлсе çитрĕмĕр. Ленăна ашшĕ ячĕпех чĕнсе каласан Елена Яковлевна теççĕ.

Лена больницăри хĕрарăм врача - Нина Петровна Любимовăна - чĕререн хисеплет, юратать. Лешĕ вĕсен салинчи пуп çемйинчен тухнă çын иккен. Ленăсем çав пуп çемйинчен инçетре те мар пурăннă. Унăн ашшĕ ăста столяр пулнă. Тÿрлĕхĕшĕн тата ĕçченлĕхĕшĕн ăна пурте хисепленĕ. Çак врач та, тăван ялĕнчи ватă амăшĕ патне тăтăшах пырсаçÿрекенскер, Лена ашшĕне лайăх пĕлнĕ, ăна хисепленĕ. Больницăра мĕнле те пулин пысăкрах япала тутармалла е юсаттармалла пулсан вăл яланах çак столяра чĕнсе илнĕ. Ашшĕне хисепленĕ май врач унăн хĕрне те юратнă. Хăйсен салинчи земски училищĕрен вĕренсе тухсан çак врач пулăшнипех Лена уезд хулинчи прогимназие кĕрсе виçĕ çул вĕреннĕ. Анчах вăрçă сиксе тухнă та, пурнăç йывăрланнипе унăн малалла вĕренме май килмен— ăна пулăшса тăма ашшĕ вăй çитереймен. Врач та хăйĕн те ачисем пур пирки çак йывăр вăхăтра çын ачине текех пулăшма пултарайман. Вăрçăпа япăхнă пурнăçра Лена малалла вĕренесси çинчен хытах иккĕленме пуçланă. Çакна пула вăл врачран хăйне санитаркăна илме ыйтнă, ку вара вăл ыйтнипе килĕшсе ăна кунта илсе килсе вырнаçтарнă. Çамрăк пурнăçĕнче сахал мар пулăшнăшăн Лена çакăнти врача чăннипех те хисеплет, ăна ырă ятпа кăна асăнать.

Эпĕ больницăна килнĕренпе çур уйăх ытла иртсе кайрĕ. Çак хушăра Ленăпа тахçан паллашса иленнĕ пекех тусланса çитрĕмĕр. Йывăç пахчинчи улах кĕтесре тĕл пулсан пĕр-пĕринпе ытарайми калаçатпăр. Эпĕ ăна хам чăнласах та таса юратупа юратнине пĕр иккĕленмесĕрех ĕненетĕп ĕнтĕ. Ку юрату мана канăç пами пулчĕ. Маншăн халĕ çутçанталăк та илемлĕн туйăнать, малтанхи кунсенче кичеммĕн курăннă Нурăс сали те аван та кăмăллăн курăнать. Лена сăнĕ куç умĕнчен каймасть, сасси хăлхаран тухмасть. Ăшра юрату хĕмĕ çунать пулин те эпĕ çакăн çинчен Ленăна хăйне каласа пама хăяймастăп-ха. Ку тĕлĕшпе

ăна майĕпе шахвăртса систерме те чĕлхем çĕкленмест, мĕншĕн тесен мана хам чăлах пулни иментерет.

Уйăх иртсен, август вĕçĕнчи пĕр хĕвеллĕ ир, врач мана приемнăйне чĕнтерчĕ. Тўрлене пĕлмен сурана тĕплĕн пăхса илчĕ те пăртак шухăшласа ларнă хыççăн çапла каласа хучĕ:

- Шыçă иртсе кайрĕ. Ку аван-ха. Анчах сурану юхма чарăнмасть. Эпĕ хирург мар, пĕлместĕп. Сирĕн унта, тен, осколка е шăмă ванчăкĕ юлнă пулĕ. Çавăнпа тўрленмест пулĕ вăл... Кунта текех темĕн таран выртсан та усси пулас çук. Сире Хусана, çар госпитальне, ямалла пулать... Киле çыру çырса ярăр: илме килччĕр. Çар госпитальне ăсатмалли хут туса парăпăр. Хăвăр килĕртен чугун çул станцийĕ те инçе мар. Унтан хальтерех Хусана кайма тăрăшăр...

Врач калани тĕрĕс иккенне эпĕ ĕнентĕм. Мана пĕр уйăх çурă патнеллех лайăх пăхса тăнăшăн тата ас панăшăн эпĕ ăна чĕререн тав тума та хавас. Анчах часах Ленăпа уйрăлмалла пуласси мана çав тери хытă кулянтарса ячĕ. Ăшчик вăркама пуçларĕ. Чĕрем çĕçĕпе касса çурнă пекех пулчĕ. Çапах та мĕн тăвăн-ха ĕнтĕ? Больница пуçлăхĕ мĕн калать, ăна итлемеллех. Эпĕ хам та питĕ лайăх ăнланатăп: больницăра ĕмĕр выртма юрамасть, унта темиçе уйăх пурăнсан та ытарайми юратнă хĕрўпе пурпĕрех ĕмĕрлĕхе пĕрлешеес çук. Эпĕ врач мĕн каланине Ленăна пĕлтермесĕрех палатăна тухса утрам.

Мана каллех салхулăх пусса илчĕ. Киле çыру çырса ятăм. Ленăпа пĕрле пурăнас вăхăта пăртак та пулин тăсас тесе аттене тепĕр эрнерен кăна илме пыма чĕнтĕм.

...Лена чирлисене кăнтăрлахи апат парса çўрет. Эпĕ ăна нимĕн те каласшăн марччĕ-ха. Анчах ман çумри койка çинче ларакан ватăрах чăваш эпĕ пĕр кĕтмен çĕртен:

- Лена йăмăкăм, питех те шалккă: пирĕн Çерушăн кĕçех каймалла пулать вĕт. Халапа аван çапаттăмăр. Кичем пулать пире вăл кайсан, терĕ хучĕ.

Лена малтанах нимĕн илтмен пек, ăнланман пек пулса чĕнмесĕрех пăхса тăчĕ. Унтан:

- Каймалла пулать?! – тесе ыйтрĕ те ерипен хусканса пирĕн паталла

çывхарчĕ.

- Врач калана ăна паян. Хусанти больницăна кайма хушнă, - терĕ старик.

Лена сăн-пичĕ шуралса кайрĕ, сенкер кăвак куçĕсемпе вăл ман çинелле пăхрĕ.

- Чăнах-и, Сережа? Халь сурану та ыррăн тӳрленсе çитмен вĕт-ха санăн?!. Мĕнле вара халех каймалла?! - ыйтрĕ вăл хăй пăлханнине пытараймасăрах.

- Врач çапла каларĕ. Чăнахах пулĕ ĕнтĕ, Лена, - терĕм эпĕ ăна.

- Апла, - терĕ те вăл пăртак пăхса тăнă хыççăн кăшт хĕрелнĕ питне аллипе сăтăрса хăвăрт тухса кайрĕ.

Вăл каялла пырса пушаннă апат чашăккисене пуçтарнă вăхăтра эпĕ çывăрнă пек пулса выртрăм. Ăшчик вăркать, никампа та калаçас килмест.

Каçхи апат умĕн тин кĕнеке илсе йывăç пахчине тухрăм. Никама та курăнас мар тесе пĕр кĕтесри акаци тĕмĕсем хупласа илнĕ чăтлăха кĕрсе лартăм.

"...Манас пулать, пурне те манас пулать! Мĕн унта хĕрсем çинчен шухăшласа ăша çунтармалли? Кам юратма пултартăр мана? Лена ахаль вăл, йăпатма анчах... Ун пек илемлĕ хĕршĕн каччă тупăнмасть-и вара?!. Вăрçă чарăнтăр çеç акă, ман пек инвалидсем çине сурать кăна вăл!.. Ăна пуçран сирсе часрах лăпланмалли анчах юлчĕ. Пĕччен, пĕччен иртмелле манăн пурнăç!" - шухăшлатăп хам ăшра уçса хунă кĕнеке çине пăхса ларнă май.

Инçе те мар ура сасси, унтан хуллен кăна:

- Сережа, ăçта эс? - тесе чĕнни илтĕнчĕ.

Пуçăма çĕклесе сасă енне пăхрăм. Шĕшкĕ тĕмĕсем витĕр сенкер платье хусканкалани курăнса кайрĕ.

- Кунта, кунта, - терем эпĕ алри уçă кĕнекене сулкаласа. Чĕрем хăвăрт сикме пуçларĕ.

Тепĕр самантран утмăлтурат чечекĕ пек кăвак куçлă Лена тухса та тăчĕ. Малтан вăл савăнăçлăн пек, унтан салхуллăн пек пăхрĕ.

-Мĕншĕн кунта тĕттĕм кĕтесе пытанса лартăн-ха капла?! - ыйтрĕ вăл

пăртак тăнă хыççăн.

- Ăш вăркама пуçларĕ... Йывăр мана, Лена... питĕ йывăр! – терĕм эпĕ.

-Мĕншĕн апла-ха ку?! Каяс пирки-и? - пĕлме тăрăшрĕ хĕр.

- Хăнăхса çитнĕччĕ эпĕ сирĕн больницăна. Уйрăлса каяс килмест çав, - тетĕп ăна.

Мана вăл сукмак хĕрринчи сак çине чĕнчĕ те, унта тухрăмăр. Ларсан хăй те асăрхамарĕ пулас, хĕр ассăн сывласа илчĕ, унтан ман патăрах сиксе ларчĕ те:

- Йывăр-и, Сережа?.. Эсĕ кайни мана та кулянтарать! - тесе хучĕ.

Пĕр самант вăл питне хăрах аллипе тытса çĕрелле, шăрăхпа типсе

сарăхнă курăксем çинелле, пăхса ларчĕ. Эпĕ мĕн каласшăн пулнине Лена ăнланчĕ пулмалла: эпĕ хăйне юратнине вăл халĕ туять ĕнтĕ. Çав вăхăтрах тата эпĕ хамăн шухăшсене ăна мĕн пирки уçса калайманнине те чухлать пулмалла. Анчах хăй те çамрăк пирки ăшри шухăшĕсене мана уççăн каласа пама хăяймасть. Çавăнпа та сăмаха эпĕ хам пуçларăм.

- Врач мана Хусана, çар госпитальне, ăсатас тет. Кам пĕлет, тен, каллех операци тăвĕç. Эх, хăшкăлтарса çитерчĕç мана çав операцисем! Татах темĕн чăтмалла пулать ĕнтĕ... Ну, çапах та вĕсене тӳссе ирттеркелĕп-ха. Анчах мана кунтах питĕ килĕшетчĕ-çке, Лена. Пĕр санпа курнăçса калаçниех кăмăла çĕклесе яратчĕ... Сансăр тунсăхласах вилĕп ĕнтĕ, - терĕм эпĕ ирĕксĕр кулкаласа.

Ленăн таса сăн-пичĕ хĕрелсе кайрĕ.

- Кай, суеçтеретĕн пуль? - терĕ вăл хăй те шăппăн йăлкăшса кулса. Унтан кăшт шухăшласа ларнă хыççăн: - Эх, Сережа! Чăнах, ытла та шел сирĕн пек çамрăксене! - тесе аллине ман хулпуççи çине хучĕ. - Саванса пурăнас чух çак вăрçă пирки тĕрлĕрен асап тӳсмелле!.. Çапах та врачсем чухлаççĕ пуль ĕнтĕ: тепĕр операци тусан, тен, çăмăлрах пулĕ. Унтан протез туса парĕç те лайăхах çӳреме пуçлăн... Анчах кунтан кайсан сана урăх курасси пулас çук вара: сывă пул тесе алăпа сулмалли çех юлать...

- Мана курас пиркиех калаçмалли çук-ха кунта. Ман пек çынна инвалид

теççĕ. Кама, мĕне кирлĕ ĕнтĕ эпĕ?!. Эсир сывă каччă тупса мăшăрланма пултарăр. Ман пеккисен виличченех хăраххăн, хусаххăн пурăнмалла пулать, - тавăртăм эпĕ ăна.

Лена аллине ман хулпуççи çинчен илчĕ те куçранах пăхрĕ.

- Ах, чим-ха! Мĕншĕн ун пек шухăшлатăн эс, Сережа?!. Эсĕ, мĕн, уксах-чăлах е суккăр çуралнă çын-им вара?.. Фронтра сусăрланнă! Сирĕн пек çынсене пирĕн хисеплес пулать, пăхас пулать, кăмăла килсен - юратас та пулать! - хĕрӳленсе каласа хучĕ вăл.

Эпĕ кулса илтĕм.

- Эсĕ ун пек калатăн та-ха, хĕрсем çавах пăрăнаççĕ çав пирĕн пеккинчен. Мана ав кирек мĕнле таврăнсан та пĕрле пурăнма сăмах панă савни те пăрахрĕ. Çакăн хыççăн хĕрсемпе юрату çинчен калаçма та хăяймастăп ĕнтĕ, - терĕм эпĕ.

- Эх, калăçатăн та! - терĕ хĕр ман çине тарăхнă евĕр пăхса. - Хăй каччă тата! Ытла та хăюсăр-çке эсĕ, хĕрача пек... Хăюллăрах пулмалла!.. Мĕнпур хĕре хăй сăмахне тытман пĕр чунсăр хĕрпе танлаштарма юрамасть.

- Хăюллă пулма халăм çитмест, Лена. Юратупа çулăмланса çунсан та ун çинчен хĕрсене пĕлтерме тивĕçлĕ мар тесе шутлатăп хама, -терĕм эпĕ пуçа кĕрсе тымарланнă шухăшран çаплах хăтăлаймасăр.

- Апла айван эсĕ! - хĕрӳленсех каларĕ вăл каллех. — Инвалид пулсан та санăн кĕлеткӳ-сăнару мĕнрен начар?! Ăсу мĕнрен катăк? Катăк мар, ăслăрах та!.. Тĕрĕссипе каласан аван çын эсĕ! Мана пуринчен ытла санăн кăмăлу килĕшет...

Манăн кăмăлăм çĕкленсе кайрĕ. Лена хăй пулăшнипе эпĕ хăюлантăм. Çак хĕрпе кĕçех уйрălса каймалла пулассине, шута илни мана хамăн чунăма халех уçса кăтартма хистерĕ.

- Итле, Лена, Халь ĕнтĕ эпĕ ăшри сисĕм-туйăма нимĕн те пытăрмастăп. Мĕншĕн тесен эсĕ мана хăвах хăюллă пулма сĕнтĕн... Эпĕ сана малтанхи хут курсанах ытарайми кăмăлларăм, унтан юрату пуçланса кайрĕ. Çакна эсĕ ху та эпĕ каласа паричченех туйрăн пулĕ тетĕп. Анчах мĕнле çунса

юратни çинчен калама халиччен хăюлăхăм çитмерĕ. Мĕншĕн калайманнине эсĕ пĕлетĕн ĕнтĕ: эпĕ хама хĕрсем çинчен шухăшлама та тивĕçлĕ мар, хам юратсан та - вĕсем юратас çук тенĕ... Канăç паман юрату çинчен, ăшра тĕлкĕшсе çунакан шухăшсем çинчен хам кунтан кайиччен сана пĕлтерсе хăвармаллах манăн. Тен, ку сана килĕшмест те пулĕ? Килĕшмесен каçар. Тӳррипех каласа панăшăн ан курен... - терĕм те эпĕ вăл мĕн те пулин каласса кĕтсе пĕр хушă ун çине пăхса лартăм.

Вăл чĕнмерĕ, пуçне пĕксе умри çерем çинелле пăхрĕ те шухăша кайрĕ. Хĕр хирĕçлеменнине кура эпĕ аллăма ун çурăмĕ çине хутăм та ăна лăпкарăм, унтан хам çумарах лартрăм.

Пăртак ларсан вăл ман алăсене ерипен сирсе хуллен калаçма пуçларĕ:

- Итле-ха, Сережа, эс мĕншĕн хăвна çавăн пекех мĕскĕне хуратăн вара?!. Аван мар вăл ун пек шутлани... Салтак пулнă çамрăк çын - хăюллăрах пулмалла. Инвалид тетĕн-и? Вăрçăра аманнă-çке-ха! Уншăн кăшт та именме кирлĕ мар. Акă лайăх сывалса çитсен чиперех çӳреме пуçлăн. Нимĕне пăхмасăрах эпĕ те сана кăмăлларăм. Юлашкинчен, юратрăм та пулĕ тетĕп. Эпĕ халиччен юратса курман, çамрăк пулнă-ха. Ак халĕ, ху калана пекех, чĕрене темĕнле вут-хĕм хыпса илчĕ. Эсĕ асран кайми пултăн. Чунăм сан еннеллех туртăнать! Паллах, ку çав юрату тени пулчĕ пулĕ ĕнтĕ вăл...

Лена ман çинелле ăшшăн пăхса кулчĕ. Эпĕ ăна çавăнтах ыталаса пăчăртарăм та питĕнчен чуптуса илтĕм. Хамăн савăннипе шăмшак сăрăлтатса кайрĕ, чĕрем сиксе тухас пек тапать. Лена хăй те пĕтĕм пĕвĕпе ман çума çыпçăнчĕ. Анчах та ку нумая пымарĕ, вăл темле ăшă ыйхăран вăраннă çын пек ерипен хусканчĕ те ман алăсене сирсе кăшт аяккарах сиксе ларчĕ.

- Чим-ха, ан ашкăн аплах. Çынсем курсан аван мар, - терĕ вăл хĕрелсе кайса.

— Пĕтĕм чун-чĕремпе юрататăп сана, Лена! Çавăнпа... чуптурăм. Анчах... кĕçех уйрăлмалла пулать!.. Уйрăлсан та пурпĕр манаяс çук: пĕрмай çыру çырса тăрăп... Эсĕ те çыр. Тен, часах... тĕл пулма та май тупăнĕ, - терем эпĕ.

Пирĕн калаçу эпĕ хăçан каясси çинчен тата çырусем мĕнле ярса тăрасси çинчен пуçланса кайрĕ. Çитес кунсенчех уйрăлмалла пуласси пире иксĕмĕре те хытă пăшăрхантарчĕ. Ку пăшăрхану туйăмĕ пирĕн чĕресене чулпа пусса хĕснĕ пекех ыраттарчĕ. Эпир хамăр таçта кайса темле пурăнсан та пĕр-пĕрин патне çырсах тăма сăмах татнипе çеç лăплантăмăр.

Ленăн ĕçе каймалли вăхăчĕ çитрĕ. Каяс умĕн вăл васкасах çапла каласа хучĕ:

— Туяттăм эпĕ, Сережа, эсĕ мана юратнине. Ун çинчен мана калама хăйманнине те сисеттĕм. Эпĕ çавăн пиркиех сан патналла туртăннине эсĕ ху та чухлаттăн пулĕ?.. Малтан эпĕ ырă, сывă каччă çакăн пек аманса сусăрланнине кура сана хĕрхентĕм кăна. Хĕрхенӳ туйăмĕ ӳссе юрату çине куçрĕ. Юлашкинчен хытах юратса пăрахрăм. Текех курас килекен пулчĕ. Анчах эсĕ ху юратни çинчен уçăмлăн каласа паманни мана юлашки вăхăтра иккĕлентерме те пуçларĕ. Ку ахаль çавăн пек ăшшăн калаçакан çын çех пулĕ тесе шухăшлама тытăнтăм... Ну, халĕ пĕр-пĕрин шухăшĕсене уççăнах пĕлтĕмĕр ĕнтĕ. - Вара вăл çутă кăвак куçĕсемпе шевле пек çиççе манăн алла тытса илчĕ.

Унăн хăюлăхне курса эпĕ ăна çавăнтах тата тепĕр хут пĕтĕм хĕрӳлĕхĕмпе хыттăн-хыттăн чуптурăм.

## 4

Вăйлă çумăрпа тулнă пĕве шыв капланса хирнипе умри тĕмескене сирсе пăрахать те пĕрре кĕрлесе юхнă хыççăн часах лăпланса тăрăлать, каллех шăппăн шăнкăртатса юхма тытăнать. Пит те аван çав лăпкă шыв хĕвел çутинче йăлтăртатса юхнине пăхса тăма. Анчах çак илемлĕ шыв юххи туран анакан шыв чакса пынипе часах типсе ларасран та хăрамалла. Пирĕн Ленăпа иксĕмĕр хушăри пурнăç та çавăн пекех пулса тăчĕ. Уйăх çурă хушши вăрттăн ӳссе пынă юрату хĕрӳлĕхĕ умри именӳ чăрмавĕсене пĕр сехетре татса пăрахрĕ. Пирĕн малтанхи пек шахвăртса-вăлтса çеç калаçасси пĕтрĕ. Çакăн хыççăн ăшра çуралакан шухăшсене эпир пĕр-пĕрне ним пытармасăр, уççăнах каласа пама пуçларăмăр. Калаçусем лăпкăн та ирĕклĕн юхса пыракан пулчĕç. Хамăр пĕр-

пĕрне юратнипе савăнтăмăр, хавхалантăмăр. Çамрăк кăмăлсем хаваслăхпа тулса çĕкленчĕç. Кунта пире хамăр юратăвăн малашлăхĕ кăна шиклентерчĕ. Эпĕ кайсан иксĕмĕр хушăмăр инçетленесси тата çав инçе хушша кĕтмен чăрмавсем тухса тăма пултарасси çеç пăшăрхантарчĕ пире.

Лена ĕçрен пушаннă вăхăтсенче эпир тăтăшах сад пахчинче калаçса лартăмăр. Халь ĕнтĕ пирĕн калаçу хамăр пурнăçсене пĕрлештерме мĕнле майсем тупмалли çинчен пычĕ.

-Ăçта пурăнас тетĕн-ха эсĕ, ялта-и, хулара-и? Чăн та, сана хресчен ĕçĕпе пурăнма хĕн пулать, Сережа... Эпĕ хамăр уезд хулинчех вăрçă инваличесене çĕвĕ ĕçне тата атă-пушмак тума вĕрентекен мастерскойсем уçмалла тенине илтнĕччĕ. Пĕр-пĕр çавăн пек мастерскоине кĕмелле мар-ши? Е тата мĕнле те пулин çавăн пек ларса ĕçлемелли ремеслана вĕренсен? Вара эпĕ те унта куçса пырăттăм, — тет мана Лена.

Эпĕ ăна ун пек ремесласем кăмăла кайманни çинчен каласа патăм.

- Госпитальтен тухсан эпĕ Хусанах юлма тăрăшăп. Унта çырăва пĕлекен инвалидсем валли бухгалтери курсĕ уçаççĕ тенине вуланăччĕ пĕр хаçатра. Хусан пирĕн кĕпĕрне хули, пысăк хула. Унта сан валли те вырăн тупма çăмăлрах пулĕ...

Лена ман шухăшпа хаваслансах килĕшет.

- Чăн, бухгалтер пулни аванрах... Эх, унта медицина сестрисем хатĕрлекен курс уçăлсанччĕ! Савăнсах пырăттăм. Вара пирĕн пĕрле пурăнма та май пулать, - тет вăл ача пек хĕпĕртесе.

* * *

Мана илме килтен час пыраймарĕç.

- Килне çырса ятăн-и? Мĕншĕн илме килмеççĕ?! - тесе ыйтаççĕ манран врач та, фельдшерсем те.

- Çыртăм. Ĕççи вăхăчĕ-çке-ха. Ерçмеççĕ пуль, - тетĕп эпĕ вĕсене.

- Ĕççи çав. Ерçмеççĕ пуль, — тет врач та манпа килĕшсе.

Çапла вара эпĕ больницăран тухса кайиччен татах вунă кун ытла иртсе кайрĕ.

Ку вăхăтра эпир Ленăпа нумай калаçрăмăр, шухăшларăмăр. Анчах çапах та шухăшсене пат татса вĕçлени пулаймарĕ. Пирĕн малалли пурнăç çулĕ çаплах тĕтрепе витĕнсе тăчĕ.

- Кирек ăçта каяс пулсан та мана атте чарас çук-ха. Ну, анне чăрмантарма пултарать вара. Унăн сывлăхĕ те хавшакрах тата. Çавăнпа вăл мана халь кунта та пит ярасшăнах мар, киле тавăрасшăн, - каласа парать мана Лена малашлăхĕ пирки кăшт шикленерех; сăмахне калана май хăйĕн сенкер кăвак куçĕсемпе ман çине тем ыйтнă пек тинкерсе пăхса ларать.

Çыру çӳретес тĕлĕшпе çеç эпир уçăмлăн калаçса татăлтăмăр. Хуть ăçта кайсан та, кирек мĕнле вăхăт пулсан та кашни эрнере çыру ярса тăмалла терĕмĕр.

Эпир Ленăпа туслашнине, иксĕмĕр текех пахчара е больница крыльци çинче калаçса ларнине врачсăр пуçне пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Фельдшерсем, кухньăра ĕçлекенсем, чирлисем тăрăхласа шӳтлеме те тытăнчĕç.

- Сана Сережа хăйĕнчен хăвармасть пулмалла. Пĕрлех илсе каять пуль?.. - тесе кулаççĕ хăш-пĕрисем Ленăран.

Лена ун пек тăрăхлакансене хирĕç ним те шарламасть, йăл кулса илет те çаплах хăйĕн ĕçĕсене туса унталла та кунталла чупкаласа çеç çӳрет.

Уйрăлас вăхăт çывхарса çитнĕ май вăл пушшех те хăюланчĕ, мана юратнине çынсенчен пытарми пулчĕ. Ерçнĕ сехетсенче хăех ман пата пырса йывăç пахчине тухма чĕнет. Хăш чухне калаçмалли сăмахсем пĕтсен вăл хуйхăллă та йăваш куçĕсемпе ман çинелле минучĕ-минучĕпе пăхса ларать. Эпĕ те ăна хирĕç пăхатăп. Çакăн пек самантсенче ман пуçа яланах иккĕлентерекен шухăшсем пырса кĕреççĕ. Çак шухăшсем чĕрене усал кĕве çинĕ пек чăрмалама тытăнчĕç. Иккĕлентерекен шухăшсем, паллах, Лена чĕрине те кăшлатчĕç пулмалла. Анчах вăл вĕсене мана систересшĕн марччĕ. Хамăр ĕмĕтсем çитессине хăйне те, мана та ирĕксĕрех ĕнентерме тăрăшатчĕ.

* * *

Эпӗ киле çыру янӑ хыççӑн вунпӗрмӗш кунне тин мана илме атте пырса çитрӗ. Манӑн Ленӑпа уйрӑлмалли сехет çитсе тӑчӗ.

Вӑхӑт кӑнтӑрла тӗлнеллеччӗ. Фельдшер мана врач хатӗрлесе хунӑ хутсене илсе пырса пачӗ. Килтен илсе пынӑ тумтирсене тӑхӑнтӑм та кайма хатӗрленсе пуринпе те сывпуллашатӑп. Анчах та Лена курӑнмасть! Манӑн чӗре ыратма пуçларӗ.

"Ӑçта кайса кӗнӗ-ха вӑл?! Мӗне пӗлтерет ку капла?!"

Мана ӑсатаканеем больница крыльци умне пухӑнса тӑчӗç. Лена çаплах çук та çук! Акӑ эпӗ ӑсатакансенчен уйрӑлса хапха умӗнче тӑракан лав патне пыратӑп. Унта мана атте кӗтсе ывӑннӑ ӗнтӗ. Вӑл часрах килелле кайма васкать. Шӑпах çак самантра чылай инçетре ларакан врач хваттерӗ енчен, пасар пухӑнакан урам вӗçӗнчи уçлӑхран, шурӑ халатлӑ Лена лӗпӗш пек вӗлтлетсе чупса тухни курӑнчӗ.

- Тӑхта-ха. Пӑртак чарӑнса тар, - терӗм эпӗ лава хускатнӑ аттене.

- Мӗн татах? — терӗ те атте лашана чарчӗ. Пирӗн лав патне Лена чупса пычӗ.

- Ах, каçарсамӑр!.. Кайнине кураймасӑрах юлаттӑм вӗт!.. Иван Александров фельдшер, юриех пуль, темскер хучӗпе врач патне чуптарчӗ те... Ну, сывӑ пул, Сережа, лайӑхрах сывал! - терӗ вӑл. Унтан манн патӑрах пырса хуллен пӑшӑлтатса калаçма пуçларӗ: - Ну, эсӗ шут туса татнӑ сӑмахсене ан ман!.. Таçта, тӗнче хӗррине каймалла пулсан та - асту мӗн-мӗн калаçнисене... Çыр!.. Час-часрах çырса тӑр... Эх, мӗнле пурӑнам ӗнтӗ? Ӑçта кайса кӗрем! Тӳсме çук кичем те тунсӑх пулать мана эсӗ кайнӑ хыççӑн!.. Ну, сывӑ пулӑр!.. Чипер кайӑр!

Урапа ещӗкӗн тепӗр хӗрринче ларакан атте, эпир мӗн калаçнине илтмен, ӑнланман пек пулса чупса килнипе тата хумханнипе хӗрелсе кайнӑ хӗр çине тинкерсе пӑхрӗ те:

- Ну, кайма юрать-и ӗнтӗ? - тесе ыйтрӗ.

- Халь юрать пулӗ. Чипер кайӑр. Сывӑ пулӑр! - терӗ йӗрсе ярас патне

çитнĕ хĕр аллипеле сĕлтсе.

Пирĕн лав хускалса кайрĕ. Лена хыçала тăрса юлчĕ. Анчах пирĕн пĕр-пĕрне тĕлленĕ куçсем нумайччен уйрăлаймарĕç.

Атте лашана тилхепипе турткаларĕ те чăпăрккипе сулса хăмсарчĕ. Лаша укăлча еннелле юртса кайрĕ.

Эпĕ çаплах Лена енне пăхса ларатăп. Вăл манпа аллине вĕттĕн кăна сула-сула сывпуллашать. Больница хапхи умĕнче виç-тăватă çын çеç ĕнтĕ. Вĕсем те мана, те Ленăна темскер кăшкăрса хуллен кулкалаççĕ. Çак самантра чĕрем çурăлса икĕ пая уйрăлнă пекех туйăнчĕ: пĕр пайĕ хамрах, тепĕр пайĕ юратнă хĕр аллине тăрса юлнă евĕр пулчĕ.

"Текех курайăп-ши? Тен, ĕмĕрлĕхех уйрăлтăмăр пулĕ?.." текен шухăш пусса илчĕ.

- Кам вара ку? Сестра-и, хвершăл-и? Ытла та çамрăк-çке? - ыйтрĕ атте лавăмăр укăлча патне çывхарсан.

- Пире пăхса пурăннă санитарка, - терĕм эпĕ, хуллен кăкăра темĕн капланса килнипе калаçас та килменскер.

- Санитар-и? Çамрăк... - терĕ атте тем систернĕ пекрех.

Эпĕ чĕнменнине кура вăл тилхепене турткаласа илчĕ те лашана çурăм тăрăх чăпăрккапа çапрĕ. Начарах мар тур лаша уй ĕçĕнче самай ĕшеннĕ пулин те хытах юртса Нурăс салинчен уялла тухрĕ.

Кăкăрăм час уçăлса çитмерĕ. Çакна пула киле çитичченех аттепе сахал калаçрăм, унăн темиçе сăмахĕ çине пĕрер-икшер сăмах кăна хушкаласа пытăм. Лена сăнарĕ умран пĕрре те сирĕлмерĕ: хăлхамсенче унăн лăпкă сасси янăрарĕ, пуçăмра унпа калаçнă хыççăн çуралнă ĕмĕтсем вĕрерĕç.

Чунтан юратнă хĕрпе уйрăлнă пирки ăшăм хытă вăркарĕ пулин те халь ĕнтĕ эпĕ хама нимĕне юрăхсăр инвалид темерĕм. Ялти савнă хĕр Анюк пăрахнă хыççăн йывăр шухăша путса салхуланнăччĕ, ĕмĕтĕм хуçăлнăччĕ, пурăнас та килми пулнăччĕ. Илемлĕ Лена юратăвĕ манăн ĕмĕте çĕнĕрен чĕртсе ячĕ, кăмăла çĕклерĕ. Манăн каллех пурăнас килекен пулчĕ.

Çук, пĕтнĕ çын мар-ха эпĕ... Анюкран илемлĕрех хĕр те юратрĕ пулсан,

пуҫа усни ахалех пулнӑ. Тӗрлӗрен хӗрарӑм, тӗрлӗрен кӑмӑл пур. Юратманни те, юратаканни те пур. Хампа пӗр кӑмӑллӑ хӗре тупса пӗрлешмелле анчах. Вара каллех хама савӑнӑҫлӑ та телейлӗ туйма пултаратӑп. Пурӑнмаллах манӑн. Пурнӑҫра пуриншӗн те усӑллӑ тата хам тума пултаракан ӗҫе ҫеҫ вӗренмелле. Вара пурӑнма та савӑнӑҫлӑ пулӗ.

5

Вӑхӑта тӑсмарӑм, ик-виҫӗ кунранах Хусана тухса кайрӑм. Унта мана Арское поле текен ҫӗртен инҫетре те мар ларакан пӗр пысӑк ҫар госпитальне вырнаҫтарчӗҫ.

Госпитальтен Лена патне кашни эрнерех ҫыру ҫырса тӑтӑм. Вӑл та ҫырчӗ. Иксӗмӗр те пӗр-пӗрне тунсӑхлани ҫинчен пӗлтеретпӗр. Эпӗ унӑн ҫырӑвӗсене ытарайми паха япаласем вырӑнне хурса пуҫ вӗҫӗнче матрас айӗнче усратӑп. Вӗсене час-часах вулатӑп, вуланӑ чух чуптуса та илетӗп. Ӑшӑ кӑмӑлтан ҫырнӑ ҫырусене юратса чуптуни мана Ленӑна хӑйне чуптунӑ пекех туйӑнать, вӗсене кӑкӑр ҫумне тытса пӑчӑртани - ӑна хӑйне тытса ыталанӑ пек.

Пӗр эрнерен врач-хирург мана операци турӗ, тӳрленме пӗлмен сурантан шӑмӑ ванчӑкӗсене кӑларса илчӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн суран чӑнах та часах тӳрленчӗ.

- Юрать-ха уруна чӗркуҫҫирен аялтан ҫеҫ татмалла пулнӑ. Аптрамастӑн! Протез туса парсан аванах ҫӳреме пуҫлатӑн. Ан кулян, - терӗ мана ырӑ кӑмӑллӑ, анчах та сахал калаҫакан ватӑ хирург. - Ҫапах та ҫӗр ӗҫӗсене туса тӑма йывӑр пулать сана. Ҫӑмӑлрах ӗҫе, ларса тумалли ӗҫе вӗренмелле.

Тепӗр икӗ уйӑхран протез туса пачӗҫ. Протеза урана тӑхӑнсан эпӗ костыльсӗрех пӗр пӗчӗк туяпа ҫех ҫӳреме пуҫларӑм. Ку вара мана чун-чӗреренех савӑнтарчӗ. Пуҫа пусса тӑнӑ йывӑр шухӑш сирӗлчӗ, кӑмӑлӑм та ҫӗкленсе кайрӗ.

Хамӑн савӑнӑҫ ҫинчен пӗлтерме васкасах Лена патне ҫыру ҫырса ятӑм. Манӑн тулли ӗмӗт-шанчӑксемпе хавасланса ҫырнӑ пысӑк ҫыру ӑна та чунтан савӑнтарнӑ.

"...Каларӑм-ҫке эпӗ сана: тепӗр операци тусан, тен, лайӑхах та ҫӳреме

пуçлăн тесе. Акă халь эпĕ калани тĕрĕсех пулса тухрĕ... Ах, Сережа, мĕнле те пулсан курасчĕ ман сана?" - çырчĕ вăл ман çырăва илсе вуланă хыççăн.

Лена Хусана куçса пырасшăн пулчĕ, анчах та вырăн тупас пирки хăраса тăчĕ, каллĕ-маллĕ шутласа иккĕленчĕ.

"...Пысăк хулара ман пеккисем ахаль те туллиех пулĕ çав унта. Çар госпиталĕсене мана каплипех йышăнас çук. Малтан ăçта та пулин медицина сестрисен курсĕнче вĕренесчĕ... Çук-ши ун пек курссем? Пĕлме тăрăш. Пулсан часрах çырса яр. Вара ман Хусана пымалли сăлтавĕ те лайăх пулать, ун чух иксĕмĕре пĕрлешсе пурăнма та май килет", -тенĕччĕ вăл çав çырăвĕнчех.

Лена ĕмĕчĕ ман кăмăла çĕклерĕ. Эпĕ васкасах унăн ыйтăвне татса парас пирки çӳреме пуçларăм: Хĕрлĕ Хĕрес обществине, кĕпĕрнери земски управăн халăх сывлăхне упрас тĕлĕшпе ĕçлекен уйрăмне тата ытти учреждениесене те çитрĕм, хама кирлĕ ыйтусем тăрах тĕпче-тĕпче пĕлтĕм. Хĕл ларнă вăхăталла Лена патне медицина сестрисем хатĕрлекен курс пурри çинчен тата çав курса тепĕр уйăхран çĕнĕрен çынсем йышăнасси çинчен çырса ятăм. Çакăн хыççăн кунран-кун чăтаймасăр çунса Ленăран çыру çитессе кĕтрĕм, çакăнпа пĕрлех унпа каллех курнăçасси çинчен ĕмĕтленме тытăнтăм. Анчах уйăх та, иккĕ те иртсе кайрĕ - кĕтнĕ çыру çитмерĕ. Сестрасен курсне çынсем илмелли срук та иртрĕ, Ленăран çаплах хыпар çук! Ман чĕрене усал хурт кăшласа ыраттарма пуçларĕ. Ку хĕр урăх качча́па туслашрĕ пулĕ, апла пулсан мана манать ĕнтĕ вăл тесе пăшăрхантăм.

Хĕлле пулсан тин чунтан кĕтсе пурăннă çырăва илтĕм. Анчах вăл мана лăплантармарĕ, пушшех те салхулатрĕ, кулянтарчĕ. Акă мĕн пĕлтерчĕ Лена çак çырăвĕпе:

"...Хытă ӳпкелешсех кĕтрĕн пуль, Сережа, манăн çырăва. Анчах... нимĕн тума та çук! Атте-анне эпĕ ыйтнипе килĕшмерĕç. Вĕсем мана ниçта та ямаççĕ. Инкек çине синкек тенĕ пек, çак вăхăтрах тата анне йывăр чирлесе ӳкрĕ. Çакна пула пушшех вĕсем мана хăйсенчен уйăрасшăн мар. Аяккалла яма мар, татах та ытларах кил енне çывхартма, хăйсем патнелле илсе пыма тăрăшрĕç. Атте тăрăшнипе халь мана хамăр салари больницăна куçарчĕç, санитарка вырăнĕ

тупса пачĕç. Больници пирĕн пысăк мар: кунта икĕ фельдшер, пĕр сестра-акушерка тата икĕ санитарка анчах. Больницăри ĕçсенчен пуша вăхăтсенче хамăр килтех пурăнатăп, килти ĕçсене тăватăп, чирлĕ аннене пăхатăп... Икĕ çул пурăнса хăнăхнă вырăнтан куçса килесси маншăн пысăк ĕç пулса тăчĕ. Атте-анне ниçта та ярасшăн пулманни, вĕсем ман шухăш-ĕмĕтсемпе килĕшменни кăмăла питĕ хуçрĕ, тата анне чирлесе ӳкни те пĕтĕм хаваслăхăма çапса çĕмĕрчĕ. Чĕрене йывăр кăмăл пусса тăнă вăхăтра манăн сан пата çыру çырма та алă çĕкленмерĕ... Чăнах та, мĕнле чунпа пăрахса хăварам-ха эпĕ хамăн чирлĕ аннене?!. Хытă тунсăхлатăп, Сережка. Курас килет сана. Анчах темĕн тĕрлĕ шухăшласан та çывăх вăхăтрах курнăçма май пуласси палăрмасть!.. Пĕртен-пĕр шанчăк çеç: анне часрах сывалтăрччĕ хуть. Вара мĕнле те пулин килтен вĕçерĕнсе тухма май пулĕ-и, тен". Çакăн хыççăн эпĕ ун патне татах темиçе çыру ятăм, хĕре хамăн сивĕнме пĕлмен юратăвăн хĕлхемлĕ сăмахесемпе хĕртсе паттăрлатма тăрăшрăм. Вăл та çырсах тăчĕ, анчах унăн çырăвĕсенче иксĕмĕр каллех курнăçассине тата пĕрле пурăнмалла пулассине ĕненни вăйсăрлансах пыни палăрчĕ. Апла пулин те эпĕ ăна манаймарăм-ха. Манăн умра çаплах çамрăк хĕрĕн таса кăвак куçлă лăпкă сăн-сăпачĕ тăчĕ, хăлхасенче унăн уçă та çемçе сасси янăрарĕ.

Пĕр савăнăçлă мар вăхăтра, - вунсаккăрмĕш çулăн çу кунĕсенче, -мĕншĕнне хам та пĕлместĕп, мана тăтăшах Лена сăн-сăпачĕ аса киле-киле аптратрĕ. Манăн ун пурнăçĕ çинчен пĕлес килчĕ. Анчах та ун чух почта япăх ĕçленипе çыру тăрах çыхăну тытса тăрасси çăмăл марччĕ. Почта кантурĕсенче конверт та, марка тавраш ĕ те çук. Хут листине виç кĕтеслĕн хуçлатса çыпăçтаратăн та çиеле адресне çырса ăна почта ещĕкне яратăн. Çитеет-и вăл çитмелли вырăна е çук - ку иккĕленчĕклĕ. Апла пулин те Лена текех аса килнĕрен эпĕ ун патне çыру çырса ятăм. Çак вăхăтрах хам унран ответ илессине шанма та пултараймарăм.

Икĕ эрне иртсе кайрĕ. Кĕтмен çĕртен ман пата Лена çырăвĕ персе çитрĕ. Саралса ларнă кăштăркка хут çине çырнă пысăк мар çыру. Ăна алла илсен эпĕ пĕрре савăнса, тепре шикленсе кайрам. Савăнтăм - ку çырăва чĕререн юратнă хĕр çырса янă пирки; шикленетĕп, пăлханатăп -вăл мана мĕн те пулин лайăх мар хыпар

пĕлтерессинчен. Юлашки туйăмĕ улталамарĕ. Çыру мана чăнах та пăшăрханупа куляну шухăшĕсене кăна чĕртсе ямалли хыпар кӳрсе пачĕ.

Хĕр çырăвĕ кӳренӳ, ӳпкелешӳ сăмахесемпе пуçланать:

"...Çулталăк ытла пĕр хыпарсăр пурăнтăн. Эпĕ виçĕ çыру ятăм, -эсĕ пĕрре те... Çакăн хыççăн çырма та пăрахрăм вара", - тенĕ вăл.

Вăл пĕлмест иккен: вăл асăннă çырусене эпĕ пĕрне те илмен. Ку, паллах, çав вăхăтра нумай вулăссемпе ял хушшинчи почта йĕркеллĕ ĕçлеменнинчен килнĕ. Сӳрĕклĕн ĕçленĕ е вăхăчĕпе пачах та ĕçлеймен пĕчĕк почта уйрăмĕсене кайса хунă çырусем эрни-эрнипе выртнă та унтах çухалнă. Лена мана ответ памастăн тесе ӳпкелешни ахалех, вăл çак тапхăрти йĕркесене лайăх пĕлменнинчен килнĕ.

Малалла хĕр хăй амăшĕ сывалса çитни çинчен тата уншăн пĕр вĕçĕмсĕр хĕпĕртени çинчен пĕлтерет. Ку хыпар мана та хаваслантарчĕ. Анчах та юлашкинчен вара çыруне çакăн пек сăмахсемпе вĕçленĕ:

"...Сережа, малашне пирĕн пĕр-пĕрин патне çырса тăни ахалех пулать пулĕ, тата çырса тăма та кирлех мар пулмалла... Пĕр пытармасăрах çырса пĕлтерем: ман пата евчĕсем çӳреме пуçларĕç. Вĕсенчен пĕри - хамран сакăр çул аслă хусах, вăрçăччен вулăсри писарь помощникĕ пулса ĕçленĕ çын, атте-аннене хăй майлă çавăрса çитерчĕ ĕнтĕ, мана хама та аптратрĕç. Каччи хăй ман кăмăла каймасть: темĕнле çăмăлттайрах та вĕçкĕнрех çын пек туйăнать. Çавăн пирки тата сана асрах тытнипе те нумайччен хирĕçрĕм, килĕшмерĕм. Анчах та мĕн тума пултарăп-ха эпĕ пĕр-пĕччен?!. Сан çинчен темĕн тĕрлĕ шухăшласан та - пĕрлешсе пурăнма май пуласси курăнмасть. Иксĕмĕре çĕр алла çухрăм уйăрса тăрать. Эсĕ пирĕн салана килес çук, эпĕ те сан патна пыма вăй çитерейместĕп. Шутла-ха хăвах: çак инçете мĕнле майпа çĕнтерсе пĕрлешĕпĕр-ши? Халĕ тата аяккалла тухса çӳреме çулĕсем те йывăр, хуласенче ĕçе кĕрсе вырнаçма та майĕ çук теççĕ. Çаксене пурне те шута илсе эпĕ парăнтăм... Çитĕннĕ хĕрĕн ашшĕ килĕнче ватăлса ларни килĕшмест: качча тухмаллах пулĕ тетĕп. Çапла, Сережа... Ан ӳпкелеш, ан вăрç, -каçар мана. Тĕрĕссипе пăхсан эпĕ кунта айăплă та мар. Тен, эсĕ те айăплă мар пулĕ. Пирĕн пурнăç çулĕсем çапла килсе тухрĕç. Эпир йывăр саманара тĕл пулса

туслашрăмăр, пирĕн юратусем йывăр вăхăтра хĕрсе çулăмланчĕç. Анчах та эпĕ сана юратни вăл манăн чи малтанхи таса юрату пулчĕ. Вăл нимĕнпе те вараланман, илемлĕ юрату. Çавăнпа та ăна эпĕ хам виличченех манаяс çук.

Каллех калатăп: ан ÿпкелеш, ан çиллен. Урăх качча тухма килĕшнĕшĕн каçар мана. Ку мĕн пирки капла килсе тухнине эпĕ тĕплĕнех çырса пĕлтертĕм ĕнтĕ. Эсĕ ăна ху та аванах ăнланса илме пултаратăн..."

Вуласа тухнă çырăва сĕтел çине хутăм та ун çинчен куçăма илмесĕр шухăша кайрам. Пÿлĕмре никам та çук, шăпăртах, никампа калаçса та кăмăла йăпатма пулмарĕ. Çав самантрах ман ума утмăлтурат чечекĕ евĕр таса кăвак куçлă та шурă питлĕ сăпай хĕр сăнарĕ тухса тăчĕ. Вăл ăшшăн пăхса, çемçе сасăпа йăвашшăн: "Ан ÿпкелеш, Сережа! Эпĕ айăплă мар", - тет. Ăшчикĕм тăвăлса килчĕ, чĕрем пăчăртанчĕ. Çавăнтах, такам вăйлă алăсемпе йăтса тăратнă пек, хăвăрт çĕклентĕм те тарăннăн сывла-сывла юпа пек хытса тăтăм. Чылай вăхăтран ăшри тăвăл иртсе кăкăр уçăлнă пек пулчĕ. Çак самантра хамран çĕр аллă çухрăмра пурăнакан хĕре умрах тăнă пек туйса лăпкăн каласа хутăм:

- Тĕрĕс, Лена! Тĕрĕс. Эсĕ ним чухлĕ те айăплă мар кунта. Сан пекех, эпĕ те айăплă мар. Эсĕ ăслă хĕр! Чăнах та, пирĕн пурнăç çулĕсем çапла килсе тухрĕç... Анчах эпĕ сана урăх нихçан та кураяс çук ĕнтĕ! Ку çырăву та юлашки çыру пулчĕ пулĕ. Сана та телейлĕ ырă кунçул сунатăп... Сывă пул! Сывă пул!., -терем.

Ку çыру чăнах та Ленăн юлашки çырăвĕ пулчĕ. Эпĕ хам та ун патне çырма пăрахрăм. Çакăнпа пĕрлех ăна часрах манма, чĕрене лăплантарма тăрăшрăм.

Анчах эпир шухăшлани тĕрĕс пулман иккен. Халăх калаçăвĕнче сăртпа сăрт кăна тĕл пулаймаççĕ, çынпа çын тĕл пулма пултарать текен сăмах пур. Пирĕн пурнăçра та çакăн пек килсе тухрĕ.

**6**

...Йывăр самана хыçа тăрса юлчĕ. Лăпланнă пурнăç çултан-çул юсанса пычĕ. Çак вăхăтра эпĕ çывăх юлташсем чĕннипе тин çеç чăмăртаннă Чăваш автономии столицине - Шупашкара - куçрăм. Кунта пĕр хаçат редакцине вырнаçса

журналист ĕçне вĕренме тиврĕ. Паллах, хаçат-журналта ĕçлесси те çăмăл мар. Хаçат ĕçĕсене тунă чух унта пĕтĕм ăса-пуçа кӳлсе вĕсене малтан палăртнă план тăрах виçеллĕ те лайăх, хăвăрт туса çитермелле. Апла пулин те иртнĕ вăрçăпа выçлăх çулĕсенче совет органĕсенче канма пĕлмесĕр ĕçленисемпе танлаштарсан мирлĕ вăхăтра редакцинче ĕçлени мана темиçе хут çăмăл пек туйăнчĕ. Кунне сакăр сехет кăна ĕçлетĕн. Ĕçленĕ чух нервусене никам та турткаламасть. Ĕçӳ пĕтсен каçпала ирĕклĕн уçăлса çӳреме, канма е кирлĕ кĕнекесене тупса вуласа хăвăн пĕлӳлĕхне ӳстерме пултаратăн. Çакна пула çулталăкранах манăн сывлăх çирĕпленни палăрчĕ, эпĕ хам вăрçăра сусăрланнине те асăрхами пултăм.

Çĕнĕ вырăнта акă ĕнтĕ виççĕмĕш çул ĕçлетĕп. Килĕшрĕç мана хаçатри ĕçсем. Малтан корректорта, унтан вырăсларан чăвашла куçарас ĕçре, каярахпа хаçат страницисенчен пĕр пайне майлаштарса тăраканни пулса ĕçлерĕм. Çак хушăра пĕр çитменлĕх пурри кăна хытах сисĕнчĕ. Ку çитменлĕх - эпĕ çаплах хусах пурнăçпа пурăнни. Халь ĕнтĕ эпĕ текех çамрăк йĕкĕт мар, часах вăтăралла çитетĕп. Анчах та авланман!.. Кунта çакна калас пулать. Арçын тени вăл пĕр çирĕм пиллĕк урлă каççан, вата хусах шутне кĕрсен, авланасшăн питех хыпмасть те вара. Çапах та хусах пурнăç мана тунсăхлатма тытăнчĕ. Майлă мăшăр тупсан авланни те пăсăк мар тесе шухăшлама пуçларăм эпĕ.

Пĕччен пирки апатланма кулленех столовăйсене çӳреттĕм. Ку тĕлĕшрен тăтăшах хула уçлăхĕнчи пĕр пысăк мар столовая каяттăм. Унта мана пĕр Настя ятлă официантка килĕшетчĕ. Эпĕ хам ăна чăвашла "Наçтӳç" тесе чĕнеттĕм те унпа яланах калаçма тăрăшаттăм. Вăл, эпĕ ăшшăн калаçнине кура пулас, хăй те манпа лайăхчĕ, мана хуть хăçан та тараватлăн пăхма тăрăшатчĕ.

Ун чух хули пысăк мар пирки столовăйсенче те çын йышлах пулмастчĕ. Çакна пула официанткăсен апат çиекенсемпе калаçмалли пушă самантсем те чылаях тупăнатчĕç. Пуринчен ытла вĕсем апат вăхăчĕ иртес вăхăталла, çын сахал чух, калаçса ларма пултаратчĕç.

Эпĕ кăмăллакан официантка пит çамрăках та марччĕ. Вăл, çирĕм пиллĕк урлă каçнăскер, чăмăр питлĕ те пысăк хура куçлă, вăтам пӳллĕ хĕрарăмччĕ.

Сăмах тăрăххăн, вăл качча кайса уйрăлнă хĕрарăм тенине те илтнĕччĕ эпĕ ун çинчен. Анчах çав вăхăтрах мана вăл упăшкипе мĕншĕн уйрăлни питех хĕтĕклемерĕ. Унăн сăн-пичĕ, кĕлетки тата вăл уçă кăмăлпа калаçни килĕшетчĕ. Кăмăл туртнине пула эпĕ унпа хаваслансах калаçаттăм.

Хампа ăшшăн калаçнисене кура ку официанткăн кăмăлĕ те лайăх пек туйăнчĕ мана. Анчах та унăн пĕр йали килĕшсех каймастчĕ. Каçхи апатсене пырсан эпĕ çак официантка час-часах эрех-сăра ĕçсе ларакан çамрăксем таврашĕнче сăмах çапса, кулкаласа тăнине асăрхаттăм, хăйне ĕçме сĕнсен вăл туртăнса тăманнине те кураттăм. Пуринчен ытла ун çумне пĕр сарă сăн-сăпатлă самăр арçынпа тепĕр хытканрах вăрăм йĕкĕт çыпăçатчĕç. Настя вĕсемпе хăй те манпа калаçнă пекех калаçса ларма юрататчĕ.

Официанткăн çакнашкал йăли килĕшсех каймастчĕ пулин те эпĕ ăна тиркеместĕм. Ун пирки çапла шухăшлаттăм: халь ирĕклĕ хĕрарăм-çке-ха вăл, чаракан çук, çавăнпа ĕçет пулĕ; упăшкасăр хĕрарăм арçынсемпе калаçма та пултарать ĕнтĕ теттĕм.

Пĕррехинче çак официанткăпа лайăхрах калаçас тесе эпĕ столовая юриех апат вăхăчĕ иртес тĕлелле тин пырса кĕтĕм. Унта пĕр-икĕ çын пурччĕ те, вĕсем те часах çисе пĕтерсе тухса кайрĕç. Наçтўç мана пăшăрханнă пек, анчах та хавассăн йышăнса илчĕ.

- Ах, мĕншĕн кая юлтăр?!. Апатсем пĕтсе çитрĕç, тата юлнă пекки те халь сивĕннĕ ĕнтĕ! - терĕ те вăл мĕн пурри-çуккине пĕлме кухньăна васкарĕ.

Наçтўç ман валли икĕ чашăкпах юлашки апат çимисене пырса пачĕ. Унтан хăй валли те илсе тухса манпа юнашар сĕтел патнех вырнаçса ларчĕ. Апачĕсем чăнах та сивĕннĕ ĕнтĕ, вĕсем тутлах та мар. Ун вырăнне мана илемлĕ официанткăпа юнашар ларни килĕшет.

Пирĕн хушăра малтан шўтлесерех, унтан чăнласах та таттисĕр калаçу тапранса кайрĕ. Халь тинех ĕнтĕ эпир пĕр-пĕрин пурнăçĕ çинчен ыйта-ыйта пĕлтĕмĕр. Вăл хăй те эпĕ авланман çын тенине илтнĕ иккен, анчах та ăна ĕненсех кайман-мĕн. Мĕншĕн тесен арçынсем ют хĕрарăм умĕнче суйма юратаççĕ вĕсем тесе шухăшланă. Халь эпĕ чăнахах та хусах-йĕкĕт иккенне ĕненсен вăл ман

çума тата ытларах çывхарчĕ, ман пурнăçпа интересленме пуçларĕ.

- Хăвăр çамрăках та мар. Пĕччен кичем пулĕ-çке? Мĕншĕн авланмастăр-ха вара? - тĕлĕнчĕ вăл.

Эпĕ ăна авланма майлă вăхăт та, килĕшӳллĕ мăшăр та тупăнманни çинчен каласа патăм.

- Кай, тĕлĕнтеретĕр! Авланасах тесен мĕнле вара ятарласах майлă вăхăт кирлĕ унта? Ăнланмастăп... Мăшăрне те тупма пулатех, - терĕ Наçтӳç кула-кула.

Хăй качча кайса уйрăлнине вăл пытармарĕ. Мĕншĕн уйрăлтăр тесе ыйтсан тытăнкаласарах çапла каласа паче:

- Упăшка пекки ман питĕ усал çын пулчĕ. Ырăнсăрах кĕвĕçетчĕ, ниме те шанмастчĕ. Ĕçсе ӳсĕрĕлсен хĕнесе пĕтеретчĕ. Тата ача-пăча тавраш ĕ пулмарĕ те пирĕн, çавăнпа пушшех ӳпкелешетчĕ... Тӳссе пурăнаймарăм. Уйрăлтăм та хулана килсе кĕтĕм... Юрать-ха парти обкомĕнчи хĕрарăм пайĕ тăрăшнипе çак столовăйра вырăн тупса пачĕç. Унта пĕр паллакан çын пурччĕ те, çав пулăшрĕ... Анчах та пурнăçăм çапах çăмăл мар манăн... Пĕччен эпĕ, чухăн, - терĕ вăл куçĕсене сăмса тутăрĕпе шăлкаласа.

Наçтӳç хăйĕн пурнăçĕ йывăр пулни çннчен каласан эпĕ ăна хĕрхенсе кайрăм. Эпĕ хĕрхеннине туйса унăн пысăк та хура куçĕсем пушшех шывланчĕç. Эпĕ ăна лăплантарма тăрăшрăм:

- Ан хурлан-ха аплах. Халь ĕнтĕ эсĕ ирĕклĕ хĕрарăм, лайăх ĕçлесе пурăнсан хăвăн пурнăçна чиперех юсаса яма та пултаратăн акă, - терĕм.

Юлашкинчен эпĕ ăна кинона пыма чĕнтĕм. Вăл пĕр туртăнмасăрах килĕшрĕ.

Каçхине эпир Атăл хĕрринчи çуллахи театрта пултăмăр. Кинораn тухсан бульварта çӳрерĕмĕр, нумай калаçрăмăр. Çав кунран пуçласа Настя манпа тусланса çитрĕ. Вăл мана юрататăп терĕ. Эпĕ хам та сивлемерĕм.

Тепĕр уйăхран çак хĕрарăм ман хваттере куçса пычĕ те, эпир пĕрле пурăнма пуçларăмăр.

Палла тăран арçынĕсенчен уйăрас, çыпăçакан каччисене мантарас тесе

пĕрле пурăнма пуçласанах эпĕ ăна столовăйри ĕçĕнчен кăлартăм. Вăл хваттерте ирĕклĕн пурăнма тытăнчĕ.

- Кĕнекесем, хаçат-журналсем вула, лайăхрах çырма вĕрен. Çитĕннĕ çынсен шкулне çӳресен аванччĕ те - кăмăлу темле? - терĕм эпĕ ăна хам патăма куçса пырсанах.

Наçтӳç пуçне пăркаларĕ те шăппăн кулса илчĕ.

- Ытла та ансат пулать-çке капла манăн пурнăç! Ĕç сахаллипе кичем те пулĕ, асту! - терĕ вăл, анчах та çав самантрах шкула çӳреме килĕшменни çинчен пĕлтерчĕ.

- Шкулта вĕренме эпĕ текех çамрăк хĕр мар ĕнтĕ. Мана килĕшмест ку. Тата хут вĕренес ĕçе халь пуç та пымасть! - терĕ.

Наçтӳç çак вăхăтра "ĕç сахаллипе кичем те пулĕ, асту!" -тесе асăрхаттарни тĕрĕс те пулнă иккен. Вăл ун чухне, пурнăçĕ çапла килсе тухнипе, ĕçе хăнăхнă пулнă мĕн-ха, çавăнпа ĕçсĕр ларма ăна кичем пек те туйăннă. Анчах та эпĕ çакна ăнланманнипе шута илмесĕр хăвартăм. Çакă кайран иксĕмĕршĕн те питĕ сиенлĕ пулса тăчĕ. Манăн йăнăш эпĕ ун чух çак хĕрарăмăн пурнăçне çăмăллатасси çинчен, ăна пурăнма лайăх майсем туса парасси çинчен кăна шухăшланăран килсе тухрĕ...

Эпĕ ăна вĕренмех хистерĕм:

- Вĕренесех пулать санăн, Наçтӳç. Çырăва сахал пĕлетĕн. Кăçалхи кĕркуннеренех акă çитĕннисен шкулне кайма пулать. Унтан рабфака çӳреме пуçлăн. Вĕренес тĕлĕшпе халь çитĕннисемшĕн те çул уçă, — терĕм эпĕ ăна татах.

Вăл чĕнмерĕ, малтанхи пек кулмарĕ те, хура куçĕсене мăч-мăч хупкаларĕ те çĕрелле пăхса пуçне пăркаларĕ. Ку, паллах ĕнтĕ, вăл вĕренме килĕшменнине пĕлтерчĕ. Çакăн хыççăн эпĕ ăна вĕренме текех хистемерĕм.

Лайăх пурăннă чух вăхăт сисĕнмесĕр иртет. Икĕ çул пурăнтăмăр ĕнтĕ Наçтӳçпе пĕрле. Малтанхи тапхăрта уйăх хыççăн уйăх пĕр евĕрлĕн аван иртсе пычĕç. Пирĕн хушăра хирĕçӳ-мĕн палăрмарĕ. Анчах мана вăл тăтăшах

столовăйсене кĕрсе çӳреме тата май килнĕ чухне ĕçкелеме юратни çеç пăшăрхантаратчĕ. Çапах та эпĕ ку унăн столовăйра ĕçленĕ чухнехинчен юлнă йăли пулмалла, пурăна киле вăл ăна пăрахатех пулĕ-ха тесе лăпланаттăм.

...Туслашса чунтан калаçма пуçланă чухнех Наçтӳç мана хăй чухăнни çинчен пĕлтернĕччĕ, пурнăç çăмăл мар манăн тенĕччĕ. Вăл чăнах та чухăнччĕ вара. Ялтан хулана килнĕ чух унăн ик-виçĕ кĕпе, пĕр хура сăхман, кивĕрех пушмак тата ытти вак-тĕвек ăпăр-тапăр кăна пулнă. Столовая кĕрсен вăл пĕр çула яхăн чашăк-тирĕк çуса пурăннă, ĕç укçийĕ пысăк пулман. Çапах та укçа пуçтаркаласа çитсă платьесем çĕлеттернĕ, майлăрах тутăрсем туяннă. Официантка чух вăл çавсемпе "капăрланкаласа" çӳретчĕ.

Пĕрле пурăнма пуçласан хам мăшăр çын арăмĕсенчен кая ан пултăр тесе эпĕ ăна вăй çитнĕ таран тумлантарма тытăнтăм. Пĕр-икĕ çул хушшинчех лайăх платьесем, хĕллехипе çурхи пальтосем çĕлеттертĕм, туфлисем илсе патăм. Тумланса пынă май унăн кăмăлĕ те улшăнчĕ: вăл хăйне мăнаçлă тытма пуçларĕ, ялтан килекен хĕрарăмсемпе вĕсем чухăн тумланнă пулсан тиркешсе те йĕрĕнерех калаçрĕ, час-часах театра, кинона, паллакан çыннисем патне хăнана кайса çӳреме пикенчĕ. Юлашки вăхăталла тата таçта кая-кая çухалма та пуçларĕ. Эпĕ занятирен таврăнатăп - Наçтӳç килте çук, манăн çиес килет - вăл нимĕн те хатĕрлемен. Хăш-пĕр чух апатне те хамах хатĕрлетĕп е столовая кайса çиетĕп.

- Ăçта çухалса çӳретĕн эс, Наçтӳç? Апат та пĕçерместĕн-çке? - тетĕп те ун пек чух, вăл вара мĕн те пулин каласа ĕнентеретех:

- Ксени Ивановнăсем патĕнче пултăм. Чĕнтĕр çыхма вĕренетпĕр унпа...

- Матрена Петровнăсем патĕнче лартăмăр, платьесем касса çĕлеме вĕрентет вăл мана...

Чĕнтĕр çыхма вĕренни те, çĕвĕ çĕлеме пĕлни те питĕ кирлĕ япала ĕнтĕ вăл.

- Апла пулсан юрать, вĕрен, лайăххрах вĕрен! Ку усăллă япала, - теттĕм те эпĕ урăх шарламастăм.

Пурте пур, пурте çителĕклĕ пекчĕ ĕнтĕ ку вăхăтра. Хваттер тĕлĕшпе çеç начартăрахчĕ. Пĕр тăлăх мещен карчăкĕ патĕнче унăн вăрăм та кивĕ пӳрчĕн картиш енчи пайĕнче пурăнаттăмăр та, эпĕ мăшăрланнă хыççăн кил хуçи усалланма тытăнчĕ. Анчах вăл мана мар, Наçтӳçе кăна юратмастчĕ.

- Тислĕк купинчен тухнă çарамас хĕрарăм тумланчĕ те сăмсине каçăртса пăрахрĕ! Çук, килĕшмест вăл мана! - хирĕçме тытăнчĕ çак хваттер хуçи, çамрăк мар хĕрарăм.

Наçтӳçĕн сăмçине каçăртасси чăнах та пурччĕ ĕнтĕ.

- Итле-ха, Наçтӳç, - теттĕм эпĕ ăна тăтăшах, - пуçна ан каçăрт! Асту-ха иквиçĕ çул каялла ху мĕнле пулнине! Мăнаçланни вăл çыннăн культурăлăхĕ çуккинчен килет. Эсĕ вĕренесшĕн те мар-çке-ха тата?! Сана мăнаçланни ним чухлĕ те килĕшмест!

Пĕррехинче вăл çапла ӳкĕтленĕшĕн çилленчĕ те тутине пăркаласа ман çине хаяррăн пăхса илчĕ:

- Культура?!. Ху мĕнле культурлă çын-ши тата?!. Кашни кун ир пуçласа каçчен, чăх-чĕп арпа çинче чаваланнă пек, хут купи çинче кăштăртаттарса ларатăн! Тьфу!

- Ну, юрать, эсĕ калана пек пултăр эппин... Кала-ха: мĕнле пулмалла, мĕнле çӳремелле апла, сан шутпа, культурлă çынсен? - ыйтрăм эпĕ унтан.

Наçтӳç айккинелле пăхса чылай вăхăт шарламасăр тăчĕ, унтан аллине сулчĕ те çапла каласа хучĕ:

- Культурлă çын тени таса, хӳхĕм тумланса çӳремелле, хаклă пассутсем çинчен ĕçсе-çимелле, çынсем хушшинче хăйне мăннăн та кĕрнеклĕн тытмалла. Ну, вăт... Пĕр сăмахпа каласан, чаплă пурăнмалла.

Çак самантра эпĕ сасартăк чунăм Настьăран писме пуçланине туйрăм.

- Ăнланмастăн иккен эсĕ ку сăмах мĕне пĕлтернине. Йăнăш çулпа каятăн, Наçтӳç, - терĕм эпĕ.

Анчах калас тенине каласа пĕтерейменрĕм, Наçтӳç хăвăрт кăна тумланчĕ те:

- Санăн культуру маншăн виçĕ пус та тăмасть! — тесе таçта тухса кайрĕ.

Эпĕ йывăр шухăша путрăм. Мĕн пирки, хăçантанпа капла пăсăлма тытăнчĕ

ку?!. Халь кăна-и е тахçанах çакнашкал кăмăл туртăмĕсем пулма пултарнă унăн? Пĕр-пĕрин кăмăлне тĕплĕн пĕлсе çитичченех пĕрлешрĕмĕр çав. Юратсах та мар, хĕрхенсе, нушари çынна пулăшас тенипе çеç пĕрлешме килĕшрĕм пулас çав эпĕ унпа...

Çапах та эпĕ çак хĕрарăма чăн-чăн юлташла ўкĕтлесе сăпайлă та йĕркеллĕ пулма вĕрентес шухăша пăрахмарăм-ха, вăл хăех ăнланса тĕрĕс çул çине тăрас шанчăка та çухатмарăм.

Анчах нумаях та иртмерĕ, Наçтўç çинчен манăн каллех путсĕр хыпар, пушшех те кўрентерекен сăмахсем илтмелле пулчĕ...

Ĕçкĕпе аташма юратакан Наçтўç еркĕн арçынсемпе ашкăнма, упăшкине намăс кăтартма, çав вăхăтрах хăй йăнăшне ăнланнă пек йăпăлтатма пăрахмасть. Атăл леш енне канма кайсан вăл ĕçсе сўпĕлтетсех каять. Çавна курса тăракан çын - Наçтўç ентешĕ - Сергей Андреева арăмĕн ялти пурнăçĕ çинчен тĕрĕссине каласа параты унăн ашшĕпе малтанхи упăшки пуян çынсем пулнă, вăрăпа çакланса тĕрмене лекнĕ. Повеçĕн 7-мĕш сыпăкĕнче Сергей редакцире пĕрле ĕçлекен Кашăк Хĕветĕрĕпе туслă пулнине уçса панă. Вĕсем иккĕшĕ те - вăрçă инваличĕсем. Федор Ложечкин хăйне хваттер хуçи арăмĕ нумай пулăшнине каласа парать. Çав хĕрарăм — Елена Яковлевна. Вăл хăйĕн çемйипе Шупашкара куçса килнĕ пулнă. Йывăр пурнăçпа асапланса, Лена сăн-питрен хытă улшăннă. Сергей ăна тўрех палласа те илеймест. Тĕл пулнă самант вунă çул ĕлĕкхи пĕрремĕш юратăва аса илтерет.

* * *

Çўллĕ çыран хĕррипе тăвалла хăпарса, ватă çăкасен бульварне кĕтĕмĕр. Кунта çын сахал-ха. Хамăртан тăварах кăна, çыран хĕрринче, виç-тăватă хĕр калаçса тăни, анатăрах икĕ каччă пирус туртса ларни курăнать. Ватă çăкасемпе лапсака тирексем хушшинче çерçисем кăна савăнăçлăн чериклетсе вĕçкелеççĕ. Эпир те хамăра ирĕклĕн тытса çеремлĕ çыран хĕрринчи пĕр тенкел çине лартăмăр та нихçан пĕтермесле ăшшăн пуплеме пуçларăмăр.

- Эсĕ те чылай улшăннă, Сережа... Çапах та эпĕ сана часах палласа илтĕм, - терĕ вăл мана тенкел çине ларсанах.

Малалла Лена эпĕ авланнипе авланманни çинчен тата ку хулана хăçан куçса килни çинчен ыйтса пĕлчĕ.

-Арăму мĕнлескер? Ачăрсем.те пулĕ-ха?.. Юратсах пурăнатăр-и тата? - ыйтрĕ вăл сасартăк пĕр вăхăт калаçса ларнă хыççăн.

- Хурламаллах мар пек. Ачасем çук. Пурăнасса - аптрамаллах мар, пурăнкалатпăр, - терĕм эпĕ хам кампа тата хăçан мăшăрланни çинчен каласа панă хыççăн.

Вăл ман çине сăнаса пăхса илчĕ те - кулмарĕ, арăм пирки текех шарламарĕ, хăвăрт урăх сăмах çине куçрĕ.

- Пĕлместĕн-ха, Сережа. Эпĕ сана, хамăр пата пыричченех, хула хушшинче виç-тăватă хутчен те курнă вĕт, - терĕ вăл ăшшăн кулкаласа. - Кашни курмассерен чарăнса тăрса куçран çухаличченех пăхса юлаттăм. Ах туру, çавах-ши е ун евĕрлĕ урăх çын-ши?" -тесе шухăшлаттăм. Анчах йăнăшас мар тесе сăмах хушма хăяймарăм. Мĕншĕн тесен эсĕ ку хулана килсе вырнаçни çинчен эпĕ хам та пĕлеймен-çке-ха...

Унтан Лена эпĕ ыйтнипе кĕскен хăй юлашки вунă çул хушшинче мĕнле пурăнни çинчен каласа паче.

Вăл 1918-мĕш çулта кĕркунне качча тухнă. Упăшки пуласси ун - Михаил Николаевич Попов — революциччен вулăсри писарь помощникĕ пулнă, революци хыççăн вулăс ĕçтăвкомĕн секретарĕнче ĕçленĕ, хальхи вăхăтра республикăри финанс комиссариатĕнчи ревизор. Ревизи ĕçĕпе тăтăшах вулăссенче çÿрет иккен. Ку вăхăтра та пĕр эрне ытла ĕнтĕ вăл тахăш вулăсра пуранать. Вĕсен халĕ икĕ ача-мĕн: пĕри пиллĕкре, тепри вунă уйăхра. Ачисем вĕсен татах та пулнă, анчах пурăнман... Поповсем Шупашкара пĕр çулталăк каялла, 1925 çулта кăна, куçса пынă. Вĕсем пурăнакан çурт хăйсен мар, упăшки мăнаккăшĕн иккен. Мăнаккăшĕ - Михаил Николаевич ашшĕн йăмăкĕ, ача-пăчасăр карчăк- старике вилсен Поповсене хăй патне чĕнсе илнĕ те пĕтĕм çурт-йĕрне вĕсене халалланă. Халь ĕнтĕ вĕсем çав çуртра хăйсен килĕнчи пекех пурăнаççĕ.

Упăшкăрпа мĕнле пурăнатăр тесен Лена, ман пекех, хăй мăшăрне ни ырламарĕ, ни хурламарĕ.

- Пĕр усал йăли пулмасан аванах тейĕттĕм эпĕ ăна. Ĕçме вĕренсе кайрĕ!

Ӳсӗр чух тата чӑкӑлташма тытӑнать. Ҫак йӑли лайӑх мар! - тесе хучӗ вӑл.

- Апла пулсан мӑшӑр тӗлӗшӗпе санӑн та манӑнни майлах килсе тухнӑ-мӗн, Лена! - терӗм эпӗ ӑна.

Унӑн йӑвашшӑн йӑлкӑшакан кӑвак куҫӗсем манӑн куҫсене тинкерчӗҫ. Вӗсем мана темӗнле кӑшт кӑна тусанпа витӗннӗ, шанма пуҫланӑ утмӑлтурат чечекесем пек туйӑнчӗҫ. Анчах та кӗҫ-вӗҫ хӑрса типес евӗрлӗ мар, пӗрре ҫумӑр ҫусанах ҫӗнӗрен чӗрӗлсе ешерес кӑвак чечек евӗр курӑнчӗҫ.

- Эсӗ те хӑвна ун пек шутлатӑн-и? - ыйтрӗ вӑл ман патӑрах сиксе ларса.

- Ҫапларах ҫав. Йӑнӑшрӑм пулас. Пӗр-пӗрин кӑмӑлӗпе пурнӑҫне лайӑх пӗлсе ҫитичченех пӗрлешрӗмӗр... Хусах пуҫҫӑнах ватӑлса каяс мар тесе васкарӑм, - терем ӑна.

Хӗрелнӗ хӗвел Атӑлӑн ҫӳл вӗҫӗнчи вӑрманлӑ тӑвайкки хыҫне анса ларчӗ. Унӑн юлашки ярӑмӗсем тӳпенелле карӑнса пӗлӗт хӗррисене тӗлкӗшекен кӑвар пек хӗретсе ячӗҫ.

* * *

...Тепӗр икӗ кунтан Кашӑк Хӗветӗрӗ мана хӑй патне хӑнана пыма чӗнчӗ.

- Ыран, шӑматкун каҫ, ҫӗнӗ хваттере куҫнӑ ятпа пӗчӗк ӗҫкӗ тӑвас тетӗп. Хваттер хуҫи хӑй - Попов - текех шахвӑртать, тепӗр чух тата, шӳтлесе пек, хистесех те калать. Ӗҫтересех пулать ӗнтӗ, - терӗ вӑл.

- Ӗҫме юрататъ пулмалла вӑл. Арӑмӗ те ун пирки ӳпкелешет, - хушса хутӑм эпӗ.

Ӗҫкӗ каҫӗ валли Елена Яковлевна кукӑльсем, икерчӗсем пӗҫерсе хатӗрленӗ, Хӗветӗр илсе панӑ юр-варпа тӗрлӗрен апат пӗҫерсе лартнӑ.

Кунта эпӗ Лена упӑшкипе чи малтанхи хут тӗл пулса паллашрӑм. Вӑл ҫырӑ питлӗ те вӑтам пӳллӗ, вӑтӑр пиллӗксенчен иртнӗ кӗре шӑмшаклӑ арҫын. Хура уссийӗсене самӑр питҫӑмартисем ҫинелле пӗтӗрсе янӑ, ҫаврака хура куҫӗсем ҫынпа калаҫнӑ чух ӑшшӑн ҫиҫсе йӑлкӑшаҫҫӗ. Сасси Поповӑн вӑйлӑ та ҫӑмӑллӑн нӑтӑртатса тухать. Ҫынсем хушшинче вӑл хӑйне ҫивӗччӗн тыткалать, кӗлеткипе сӑн-сӑпачӗ енчен кӗрнеклӗ те илемлӗн курӑнать. Унӑн пӗртен-пӗр кӑлтӑк кӑна:

вăрçăра сусăрланнă алли хытса ларнă та, ăна ирĕклĕн хускаткалаймасть. Лена пĕлтернĕ пăсăклăхĕ пулман пулсан ку çынна лайăх хĕрарăмăн ырă упăшкийĕ теме те юратчĕ.

Поповпа мана Лена хăй паллаштарчĕ.

-Итле-ха, Миша, - терĕ вăл упăшкине ман пата чĕнсе илсе: - ку çын, Сергей Андреич, пирĕн патри Федор Иванчăн çывăх юлташĕ пулать...

Пирĕн питĕ тĕлĕнмелле килсе тухрĕ, Миша. Сергей Андрейчăпа эпир тахçанах, вунă çул каяллах паллашнăччĕ. Эпĕ Нурăсра ĕçленĕ чух вăл, тин çеç вăрçăран аманса таврăннăскер, пирĕн больницăра выртрĕ... Акă халь кĕтмен çĕртен, ăнсăртран каллех тĕл пултăмăр...

Ăшшăн кулакан Попов хура мăйăхĕсене пўрни вĕçĕсемпе хиврелетсе пĕрре ман çине, тепре арăмĕ çинелле пăхкаласа тăчĕ-тăчĕ те:

- Тĕлĕнмелле! Чăн та тĕлĕнмелле, Лена, ун пек пулнипе! – тесе манăн алла тепĕр хут тытса пăчăртарĕ. Алла тытса силленĕ май вăл темпе сĕрсе якатнă çырă çўçлĕ пусне ман еннелле çăмăллăн тая-тая илчĕ. - Эпĕ пит те кăмăллă. Паллашар, малашне туслă пулар. Мана Михаил Николаич теççĕ. Хушаматăм - Попов. Финанс комиссариатĕнче ревизорта ĕçлетĕп...

Манпа паллашнă хыççăн Попов ман арăмпа, Наçтўçпе, калаçма пуçларĕ. Лайăх платйĕпе капăр тумланса пынă хĕрарăм, чипер кĕлеткеллĕ те хурлама çук сăн-питлĕскер, Попова килĕшрĕ пулмалла. Çакна пула вăл ĕçкĕ хушшинче тăтăшах Наçтўç патне пырса çыпçăнчĕ, унпа ăшшăн калаçрĕ, вылятрĕ, черккисене тултарса, ăна уйрăммăн хăналарĕ.

Ман Наçтўç ку ĕçкĕре, яланхи пекех, хăйне ирĕклĕн тытрĕ. Эпĕ ăна чармарăм. Çынсем пырса çыпçăнсан вăл именсе тăмарĕ, кам та пулин ташлană чух ыталама тăрсан е калаçса ларнă чух чуптума тытăнсан юрать-ши кунашкал хăтланма тесе ман çинелле те пăхмарĕ.

.Кунта пĕр Лена кăна хăйне сăпайлă тыткаларĕ. Упăшки хушнипе кунĕпех ĕçме-çимеллисем хатĕрлесе ывăннăскер, вăл ташламарĕ те, юрламарĕ те, тепĕр енчен тата ăна кунта ачисем те канăç памарĕç. Пўртри шăв-шавпа тата пирус тĕтĕмĕпе чыхăнса пăшăхнăран пулас пĕчĕк ачи текех макăрчĕ. Ăна хăш-пĕр чух

хуллен сăпка кĕвви мăрласа сиктерекен кинемей карчăкĕ те йăпатма пултараймарĕ. Çакна пула Ленăн тăтăшах юнашар пӳлĕме кĕре-кĕре ачине хăйĕн лăплантарма тиврĕ. Çак хушăрах пилĕк çулхи ывăлĕ те час-часах амăшĕ патне пырса юншăхларĕ, вăл е çимелли ыйтрĕ, е куçĕсене пӳрни вĕçĕсемпе сăтăркаласа, ыйхă килет тесе йăнкăртатрĕ.

Ачисене лăплантарсанах Лена кĕреке патне пырса ман çума ларчĕ, тараватлăн та ăшшăн калаçрĕ, ман пурнăç çинчен тата Наçтӳçĕн иртнĕ пурнăçĕпе вăл халĕ мĕн ĕçлени çинчен ыйта-ыйта пĕлчĕ. Калаçнă хушăра унăн ĕшенчĕк, кăвак куçĕсем тăтăш Наçтӳç хусканăвĕсене сăнарĕç.

- Кĕлеткипе сăнарĕ чипер вара сан мăшăрун: кĕрнеклĕ, таса, хӳхĕм хĕрарăм, - терĕ вăл мана ĕçкĕ хăй вĕçнелле çывхарнă вăхăтра.

- Килĕшет-и? - ыйтрăм эпĕ.

- Тулашĕнчен пăхсан хурламалла мар. Анчах... кăмăлĕ темле вара.

- Кăмăлĕ килĕшсех каймасть пек-и-мĕн?

- Ун пирки çынна пĕрре курнипех татса калама пултараймастăп, -терĕ те Лена тата тем калас çĕртенех шăпланчĕ. Эпĕ ăна малалла калама хистерĕм.

- Ху мĕн шухăшланине тӳррипех кала мана, Лена. Пытарма кирлĕ мар. Çынри çитменлĕхе хĕрарăмсем часрах курма пултараççĕ. Мĕнле пек?

- Пĕлместĕп, пĕлместĕп, Сережа! Пĕрре курса калаçнипех ăçтан хак пама пултаратăн çынна?! Чăн та, илемлĕ вăл... анчах темле хăйне ытлашширех тыткалать-ха, хĕрарăмшăн кирлĕ чикке пăхăнмасть пек туйăнать. Ĕçессинче арçынсенчен юлмасть пулмалла, - терĕ Елена Яковлевна.

- Эсĕ калани тĕрĕсех те пулĕ, - килĕшрĕм эпĕ вăл каланипе.

Хам енчен эпĕ унăн упăшкине мухтарăм:

-Ӳрĕк те маттур çын евĕр курăнать вăл, çынпа çаврăнăçуллă калаçать, - терĕм ăна.

- Кĕлетки енĕпе, чăн, Мишăна та хурламалли çук. Чĕлхи-çăварĕ те çивĕч... Урă чух аван вăл, йĕркеллĕ çын майлах. Анчах ытлашши ĕçет-çке-ха! Кашни кун тенĕ пекех ĕçет. Ху куратăн акă: епле хăвăрт ирĕлсе кайрĕ вăл! Çав ĕçнипех шăнăрĕсем çемçелсе пыраççĕ унăн. Эрех-сăра тесен - пуçне вута чикме те хатĕр.

Эпĕ килте тăвакан ĕçсене ĕç вырăнне те хумасть. Пÿрт-çуртри ĕçсемпе, ача-пăча пăхассипе каç еннелле ураран ÿкес патне çитетĕп. Вăл пур - çаксене кăшт та шута илмест! Укçи-тенкине ĕçсех пĕтерет те тумланма та юлмасть. Каплах пулсан хамăн та пĕр-пĕр ĕçе кĕме тивет. Больницăра-мĕнте санитарка вырăнĕ пулĕ, тен... - каласа пачĕ Лена.

Ленăн йăваш кăмăлĕпе ĕшенчĕк куçĕсенчен эпĕ вăл паян чăннипех те çав тери ывăнса çитнине туйрăм. Ĕçке хатĕрленес ĕçĕн пĕтĕм йывăрлăхĕ çак хĕрарăм çине ÿкнĕ, анчах та халь ĕçкинче вăл кĕреке айккинче юрламасăр, шавламасăр ларать. Уншăн та, хăйшĕн те упăшки кăна савăнать. Çаксене курса эпĕ сăпай та ĕçчен хĕрарăма çав тери хĕрхенсе кайрăм. Манăн ăна темле ырă ĕç туса парса пулăшас килчĕ, лайăх сăмахсем каласа хаваслантарас килчĕ. Анчах эпĕ унпа хăюллăн калаçма та, ăна йăпатма та пултараймарăм...

Ĕçкĕ çур çĕр иртсен иккĕмĕш сехет тĕлнелле тин пĕтрĕ. Попове хăй ураран ÿкрĕ те, ăна юнашар пÿлĕме кĕртсе вырттарчĕç. Кашăк Хĕветĕрĕ - ĕçкĕ хуçи - сĕтел хушшинче ларнă çĕртех малалла ÿпĕнсе анчĕ те калаçма чарăнчĕ. Малтан çамрăксем тухса кайрĕç. Вĕсем кайсанах эпĕ кĕрекере Хĕветĕр ентешĕпе сÿпĕлтетсе ларакан Наçтÿçе пуçтарăнма чĕнтĕм. Вăл хирĕçме пăхрĕ. Эпĕ Ленăна тав туса сывлăх сунтăм та тухса кайрăм. Çакна кура хуллен юрласа, тайкаланса ман хыççăн Наçтÿçпе Хĕветĕр ентешĕ те тухрĕç. Вĕсем урамра та пĕрлех калаçса пычĕç.

Пире ăсатса яма пĕр Лена кăна тухма пултарчĕ.

- Ложечкин пур чух час-часах килкелесе лар, Сергей. Сана курсан — кăмăл çĕкленет, хама çăмăллăн туятăп, - терĕ вăл эпĕ калинккерен тухнă чух аллăмсене тепĕр хут тытса пăчăртаса.

Ку сăмаха вăл пĕр эпĕ кăна илтмелле хуллен аларĕ.

9-мĕш сыпăкра Наçтÿç чирлĕ упăшкине улталани, еркĕнĕпе çÿрени çинчен каласа панă. Çакна театрта хăй куçĕпе курнă хыççăн Сергей чунĕ тăвăлса çитет...

Шăв-шавлă калаçу пирĕн шăматкун каçхине пулса иртрĕ. Тепĕр кунне ирхине ирех эпĕ хваттер шырама тухса кайрăм. Кăнтăрлаччен çÿрерĕм - манерлĕ хваттер

тупаймарăм. Чылай утса ĕшеннĕскер ҫул майĕпе Кашăк Хĕветĕрĕ патне кĕрсе ларма шухăшларăм, ăна манăн хамăн хуйхă ҫинчен каласа парас килчĕ.

Анчах Хĕветĕр килте пулмарĕ. Вăл, лара-тăма юратманскер, ирхи апат хыççăнах тухса кайнă тет те халĕ те таврăнман-ха. Поповсен килĕнче мана Лена хăй кĕтсе илчĕ. Эпĕ пынипе вăл савăнчĕ, анчах та ун сăн-питĕнчи савăнăç йăлтăравĕ нумая пымарĕ, часах тĕксĕмленчĕ, сасси те сӳрĕкленчĕ. Ку вăхăтра Ленăн упăшки те килте ҫукчĕ-ха. Пĕр кинеми карчăкĕ кăна шалти пӳлĕмре пĕчĕк ачисемпе чарăна пĕлми ҫуйхашатчĕ.

- Темшĕн кичемлентĕр, Елена Яковлевна? Е эпĕ килсе кĕни килĕшмерĕ-и? - ыйтрăм эпĕ Лена пит-куçĕ салхуланнине курсан.

Вăл ирĕксĕррĕн кăна кăшт куланçи пулчĕ те хуллен: - Пирĕн пурнăçĕ савăнăçлă мар-ха, Сергей Андреич... Сана тӳрех калас пулать: Михаил Николаича ĕçрен кăларса ячĕç. Халь вырăнсăр ĕнтĕ...

- Мĕншĕн апла ку?!. Пĕр кĕтмен çĕртенех-çке?! - тĕлĕнтĕм эпĕ.

Лена час чĕнмерĕ, имшеррĕн йăлкăшакан кăвак куçĕсене таçта, пушă пӳлĕм кĕтессинелле, тĕллерĕ те чылай вăхăтран кăна пăшăрханчăк сасăпа калаçма пуçларĕ:

- Кĕтмен çĕртенех мар çав. Ĕçнĕшĕн, ĕç йĕркине пăснăшăн, службăра хушнисене туманшăн... Хăйсен учрежденине вăл темиçе хутчен те ӳсĕр пынă пулнă. Хăш чух кая юлса çитнĕ, хăш чух тата занятисем пĕтичченех тухса кайса ĕçлеменнисем те пулкаланă тет. Ун çинчен эпĕ хăйсен пуçлăхĕ патне ятарласах хам кайса пĕлтĕм... Тата командировкăсене кайсан та вулăссенче ӳсĕрĕлсе çӳренĕ тет. Жалобăсем пур теççĕ. Ак çавăнпа ĕнтĕ. Нимĕн тума та çук...

- Ну, çапах та уншăнах ытла хытă кулянса ан ларăр-ха. Хулара учреждени сахал мар. Урăх вырăна кĕме пултарĕ, - терĕм те эпĕ ăна лăплантарас шухăшпа сăмаха урăх еннелле пăрса яма тăтăм. Анчах та Лена чĕнмерĕ. Тен, хуйхă капланнă ăшчикне уçăлтарас тесе пулĕ, вăл пукан çинчен тăчĕ те ерипен уткаласа çӳрерĕ, чӳрече патне тăрса урамалла пăхрĕ, унтан каллех хĕсĕк пӳлĕм тăрăх уткаласа илсе малтанхи вырăннех ларчĕ. Паллах, упăшки ĕçке ернĕ пирки

вăл пайтах шухăшласа пуçне ватнă пулмалла, анчах та мана ун çинчен халичченех тĕппипе пĕлтерменччĕ-ха. Халĕ ак упăшкин чăрсăрлăхĕ пĕтĕм çемйине чухăнлăх умне çитерсе тăратнине курсан Лена мана ун çинчен каласа памасăр чăтаймарĕ.

- Вырăнĕ тупăнĕ те-ха... Анчах тӳрленмесен, çаплипех ĕçсен ниçта та пуçран шăлса тăмĕç çав, - терĕ вăл ман çине тинкерсе пăхса. -Хĕрхенмĕç. Каллех кăларса ярĕç. Çемйине мĕнле тăрантармалла, мĕнпе тумлантармалла?! Халĕ те вăл кашни уйăхрах хăй илнĕ ĕç укçинчен çуррине ытла ĕçсе пĕтерсех пыратчĕ. Мĕн чухлĕ ӳкĕтленĕ, ӳпкелешнĕ ăна - итлемерĕ! Чăн та, урă чухне ӳкĕннĕ пек те пулать, хăйне хăй вăрçать. Çапах чарăнаймасть, укçи пулсанах каллех ĕçме тытăнать. Ĕçке ерни - темĕнле тӳрленми чирпе чирленĕ евĕрлех пулса тăчĕ ĕнтĕ унăн! Чирленĕ пекех. Капла пурăнма май çук. Хамăн та ĕçе кĕмеллех пулать...

Эпĕ ăна лăплантарасшăн пултăм. Тен, çакăн пек вырăнсăр юлнă хыççăн тарăнрах шухăшлакан пулĕ, тен, ĕçме те пăрахĕ малашне терĕм. Упăшки ĕçме пăрахассине Лена ĕненмерĕ:

- Ун пек пулсан тем пекехчĕ те çав, анчах шанчăк сахал. Эх, урă пурăнсанччĕ! Ĕçмен чухне, хăвăр та курнă, чипер çын манерлех вăл, - терĕ те хайхи ассăн сывласа илсе шăпланчĕ.

Малалла эпĕ ăна хамăн хуйхă çинчен тата паян иртенпех хваттер шыраса çӳрени çинчен каласа патăм. Ман сăмахсене илтсен Лена йӳççĕн кулянçи пулчĕ те пăшăрханса каларĕ:

- Апла иккен! Мăшăрсем тĕлĕшĕнчен иксĕмĕр те телейсĕр пултăмăр эпир, Сергей Андрейч!.. Тĕлĕнетĕп эпĕ: мĕнле вăл саккунлă мăшăру пур çинченех урăх çынпа пурăнмалла?!. Мĕншĕн ху мăшăрнах суймалла, улталамалла?!. Мăшăрланнă чух пĕрле пурăнма сăмах панă-тăк-пурăн!.. Ман телейсĕрлĕх хуть - Миша ĕçке ернинчен килчĕ. Çӳрет-и вăл урăх хĕрарăмсемпе, çук-и - эпĕ ăна пĕлместĕп... Санăн телейӳ Настя тĕрĕсмарринчен пĕтрĕ. Ку тĕлĕшрен ăна каçарма çуках вара! Хăйне юратакан упăшки пур çинченех вăл ăна суйма, улталама, урăххисемпе пурăнма тытăннă. Этем-и вăл?! Акă эпĕ те сана юратнă, çаплах юрататăп та. Çиелтен шутласан, хама тарăхтарса çитернĕ упăшкана

пăрахмалла та санпа пурăнма пуçламалла кăна пек. Анчах та çук! Миша пурăннă чух эпĕ урăх арçын ытамне кĕме ниепле те килĕшместĕп. Эсĕ калан: санăн ачусем пур, çавăнпа килĕшместĕн тейĕн. Чăн та, ачасем пурри мана нумай çыхса тăрать. Анчах çапах та кирек мĕнле пулсан та эпĕ хам упăшкана суйма е улталама пултараймастăп. Пĕрлешнĕ чух - тулли лава пĕрле туртса пыма сăмах панă, пĕрле туртма кӳлĕннĕ - пĕрлех пыр! - терĕ те Лена шăпланчĕ.

Пĕр тапхăр эпĕ каланине кăна итлесе ларнă Лена сасартăк мана чарчĕ те хавассăн çапла каласа хучĕ:

- Чим-ха, Сережа. Эсĕ хваттер шыратăп тетĕн? Тупатпăр, ăна вăл никама та пама ĕлкĕрмен пулсан... - Кунта вăл пуçне çăмăллăн çĕклерĕ те кăвак куçĕсене йăвашшăн йăлкăштарса илчĕ. - Кӳршĕрех, Чернышевски урамран пирĕн тăкăрлăка пăрăнса кĕнĕ çĕрти кĕтесре, икĕ хутлă йывăç çурт ларать. Çав çурт хуçи, Разумов, пушанса юлнă хваттер пур тетчĕ. Квартирантсем тупăннă-ши, çук-ши, - кайса пĕлес пулать, -тесе мана çав Разумов патне кĕрсе пăхма сĕнчĕ.

Эпĕ ăна хампа пĕрле пыма чĕнтĕм. Вăл килĕшрĕ.

Кашăк Хĕветĕрĕ хваттер хуçине — Попова - издательство бухгалтерине ĕçе вырнаçма пулăшать. Йĕркеллех ĕçлеме пуçлать Лена упăшки. Анчах Хĕветĕр Самар хулине чăвашла хаçат кăларма тухса каять те, Сергей Андреевичăн Поповсен çуртне çӳремелли сăлтав пĕтет.

Эпĕ Поповсем патне çапах та тăтăшах кайкаларăм-ха. Анчах та мана Лена хавассăн йышăнса илни унăн упăшкине килĕшмерĕ. Манпала вăл сӳрĕккĕн калаçрĕ: кĕвĕçрĕ пулмалла тата ĕçкĕшĕн кичемленни те палăрчĕ. Эпĕ ĕçкĕ таврашне юратманнине Попов пĕлетчĕ, тепĕр енчен, çакăн пирки те пулĕ вăл манпа сахал калаçрĕ, пĕр-пĕр кĕтесерех ларатчĕ те, хура куçĕсемпе салхуллăн пăхкаласа текех тути хĕррисемпе аялалла усăннă мăйăхĕсене шăлкалатчĕ, пĕр сăлтавсăрах ачисене вăрçатчĕ.

Ĕçке ернĕ çынсем нумайăшĕ тапхăр-тапхăрĕпе ĕçеççĕ: хăшĕсем ик-виçĕ эрне е пĕр-икĕ уйăх таран та нимĕн ĕçмесĕр, урă пурăнаççĕ. Çакăн хыççăн вара урăлăх шайĕ тулса çитнĕ пек пулать пулас та вĕсем каллех кашни кун ĕçсе супма

пуçлаççĕ. Пĕр ĕçме тытăнсан ун пек çынсемшĕн ним те шел мар: вĕсем ачи-пăчи выçă е çарамас ларассине те пăхмаççĕ, укçи пĕтсен килти паха япалисене çемйинчен вăрттăн сутса ĕçеççĕ е кăшт палла тăран çынсем хушшинче кĕлмĕçленсе укçа ыйтса çÿреççĕ.

Поповшăн та çакăн пек тапхăр çитрĕ пулас. Халь ĕнтĕ вăл, пĕр енчен, хăйне Ложечкин çуккипе те ирĕклĕн туйрĕ, ĕçнĕшĕн пĕр хăй арăмĕнчен пуçне никам та кÿренес çуккине курчĕ, тепĕр енчен тата -ĕç укçи илкеленĕ хыççăн кĕсйинче укçа пулни те унăн пырне кĕçĕттерчĕ пулас.

Попов кунран-кун хытă ĕçме пикенчĕ. Малтан праçник ячĕпе ĕçрĕм терĕ, унтан пурнăç кичем пирки чуна йăпатма ĕçетĕп текелерĕ. Вăл занятисене те ÿсĕр пыма пуçларĕ. Малтан ăна аслă бухгалтер, унтан издательство пуçлăхĕ хăй те иквиçĕ хутчен асăрхаттарчĕ. Попов темиçе хутчен те урăх ĕçместĕп тесе сăмах пачĕ, анчах сăмахне тытаймарĕ. Çакăншăн ăна, хăй пурнăçĕнче иккĕмĕш хут ĕнтĕ, каллех вырăнтан кăларса ячĕç.

Попов ĕçсĕр тăрса юлчĕ. Çакăн хыççăн вăл пушшех те чĕмсĕрленчĕ, усалланчĕ. Арăмĕ ăна урăх ĕç шырама хистерĕ. Çакна пула вĕсен çемйинче хирĕçÿсем пуçланчĕç. Манăн вĕсем патне çÿрес кăмăл пĕтрĕ. Лена хăй кăна тăтăшах пырса ларкаларĕ, анчах вăл пырсан та унпа савăнăçлăн калаçса ларасси пулмарĕ.

Пĕр-ик эрне иртсен ман пата халиччenхи пек мар савăнăçпа çуталнă Лена пырса кĕчĕ.

- Ну, Сергей Андрейч, эпĕ паянтан вара каллех санитарка! Мана халь çех уçăлнă поликлиникăна илчĕç... Халăх хушшинчи пурнăça санитаркăпа пуçларăм, ăна ĕнтĕ çак санитаркăпах вĕçлеме ĕмĕтленетĕп. Чăн, санитаркăн ĕç укçи пысăк мар та, çапах ку хам юратнă ырă ĕç. Эпĕ чирлĕ çынсене пăхма вĕреннĕ, вĕсене хĕрхенетĕп; мĕн чухлĕ те пулин пулăшса, вĕсен пурнăçне çăмăллатас килет. Çĕнĕ пысăк çуртра таса халь, çутă, илемлĕ. Ĕçлес килет! Ку - пĕр енчен... Тепĕр енчен тата халь ĕнтĕ кашни пĕр-икĕ тенкĕ укçашăнах Михаил Николаевич куçĕнчен пăхса мĕскĕленмĕп, - терĕ вăл.

Ленӑпа пӗрле эпӗ хам та хӗпӗртерӗм. Мана пуринчен ытла унӑн кӑмӑлӗ ҫӗкленни савӑнтарчӗ.

Тепӗр виҫ-тӑватӑ кунтан Лена мана упӑшки те вырӑн тупса ӗҫе кӗни ҫинчен пӗлтерчӗ.

- Вырӑнӗ пысӑках мар: инвӑлидсен кооперативӗнче счетовод ӗҫӗ анчах, - терӗ вӑл. Ҫапах та юрӗ. Килте ахаль вӑрҫса лариччен пӗчӗк счетовод пулса ӗҫлени те усӑллӑ. Кам айӑплӑ-ха уншӑн? Хӑй! Лайӑх ӗҫлеме пултарас ҫӗртенех ӗҫкӗ пирки аялтан аялалла анса пычӗ. Кунтан та кӑларса ярсан - таҫта кайса кӗрӗ-ха вара, - терӗ вӑл кула-кула.

Попов хӑй сиввӗн йышӑннине кура эпӗ вӗсем патне сайра хутра кӑна кайкаларӑм. Ун вырӑнне Лена хӑй ман пата тӑтӑшах кӗрсе ларма пӑрахмарӗ.

11

Пӗччен пурӑнам та чӗреме лӑпкӑрах пулӗ тесе шухӑшларӑм эпӗ ҫӗнӗ хваттере куҫнӑ чух. Вӑтӑртан иртнӗ ҫыншӑн, чӑн, хусаххӑн пурӑнни те илемлех мар ӗнтӗ: вӑхӑчӗпе тунсӑх е кичемлӗх те пусма пултарать. Ҫапах та ӗҫлени ытлашши кичемленмех памӗ-ха терӗм. Ӗҫме эпӗ юратмастӑп, ҫавӑнпа манӑн кӑмӑлӑм та ҫирӗп. Кӑмӑл ҫирӗп пулсан темле йывӑрлӑха та ҫӗнме пулать.

Манӑн пурнӑҫ улшӑнса тӑни хампа пӗрле ӗҫлекен юлташсенчен хӑшне-пӗрне пӑшӑрхантарчӗ, теприсене, пурнӑҫ ҫине ҫиелтен пӑхакан ҫамрӑксене, хаваслантарчӗ те темелле. Мӗншӗн тесен вӗсем, ирӗклӗ хусахсем, занятирен пушӑ сехетсенче ман пата хӑюллӑнах пырса ларма пултарчӗҫ, хӗрарӑм ҫук ҫӗрте хӑйсене пӗр именмесӗр тыткаларӗҫ, мана шахматла, доминолла выляма хутшӑнтарчӗҫ.

Кашӑк Хӗветӗрӗ эпир уйрӑлнине ырларӗ. Хӑй те сахал ӗҫекен ҫын, вӑл эпӗ ӗҫменнине мухтарӗ.

- Эсӗ тӗрӗс тӑватӑн: ан ӗҫ!.. Эпӗ сана ӗҫке ернӗ арӑму пӑсса ярасран хӑраттӑм. Уйрӑлтӑр - ку питӗ аван! - терӗ вӑл мана. Ҫавӑнпа та эпир унпа малтанхи пекех туслӑн пурӑнтӑмӑр.

Маншӑн халь Лена та чӑн-чӑн ҫывӑх тус, тӗрӗс юлташ пулса тӑчӗ. Эпӗ ӑна

ĕнтĕ кашни кун тенĕ пекех курма пултартăм. Унăн ансăр тăкăрлăкпа урамалла тухакан çулĕ ман хваттер çумĕпех иртсе каять. Вăл ирхине ирех, витрисене чăнкăртаттарса, сăртран шыв ăсма анать-и, çăкăр, юр-вар таврашĕ илме магазина е пасара-мĕневаскать-и, эпĕ хам хваттерте чухне ăна яланах куратăп. Вăл иртсе пыни мана кашни чӳречеренех урамалла та, тăкăрлăкалла та курăнать. Темле васкаса иртнĕ чух та Лена ман чӳречесем енне пăхса илетех. Эпĕ ăна алăсемпе сĕлтсе саламлатăп. Вăл йăл! кăна кулса илет те хăй те аллипе сулса илсе малалла утса каять. Васкамаллах мар чухне Лена самантлăха ман пата кĕрсе те тухкалать.

- Мĕн илмелле? Илсе килсе парам. Сана çӳреме çăмăл мар... Хуралнă кĕпӳ-йĕмӳсем пулсан илсе пыр. Çуса парăп, - тет вăл мана тăтăшах.

Пуша вăхăтсенче Лена ятарласах калаçма тесе те пыра-пыра ларать. Калаçусем хушшинче эпир хамăр малтан тĕл пулнисене, пĕр-пĕрне мĕнле юратнисене, курас килнипе чĕререн çунса тунсăхланисене аса илетпĕр. Çакăн пек калаçусенче ман ума час-часах вунă çул каялла курнă çамрăк Ленăн ытарайми сăнарĕ туха-туха тăрать... Çаксене аса илсен Ленăна ман каллех ĕлĕкхи юратупах хĕмленсе юратас килсе каять. Чĕрем хăвăрт тапма пуçлать, шăмшак вĕриленет...

Анчах ман умра халь вунă çул каялли пек яштак пӳллĕ çамрăк Лена мар ĕнтĕ...

* * *

Çуркуннене хирĕç Наçтӳç ман пата - хваттере те, ĕçленĕ çĕре те -пырса кĕме пуçларĕ. Вăл текех укçа ыйтрĕ:

- Эпĕ выçă, эпĕ çĕтĕк... Тавай мана халех пĕр икçĕр тенкĕ. Унсăрăн суда паратăп, алимент шыратăп. Мĕншĕн тесен манăн сывлăх санпа пурăннă чух пĕтрĕ... Пуç ыратать, шăмшак та шултăркарĕ. Манăн сывлăха эсĕ пĕтертĕн! - тесе ӳпкелешрĕ вăл кашни пымассерен.

Наçтӳçрен çакăн пек сăмахсене илтсен эпĕ çав тери тарăхса каяттăм.

- Эх, Наçтӳç, Наçтӳç! Мĕнле кутăн çын эсĕ?!. Чĕлхӳ мĕнле çаврăнать-ши сан

çакăн пек сăмахсем калама?! Сывлăху хавшать пулсан, вăл ху йĕркесĕр пураннинчен, ĕçке ернинчен килет вĕт? Тӳрĕ çын пулнă пулсан эсĕ мана çапла кăшламăттăн, чĕререн тав тăвăттăн кăна, - терĕм эпĕ ăна ун пек чух час-часах.

Анчах та вăл ман сăмахсене хăлхине те чикмерĕ, кăмăлне улăштармарĕ. Эпĕ укçине пур чух паркалаттăм, çук чух е хытă тарăхтарнă чух-памастăм. Ăна пĕр-пĕр вырăна ĕçе кĕме сĕнтĕм, вăл килĕшмерĕ; тăтăшах столовăйсене, пивнойсене кĕре-кĕре ларатчĕ, хула хушшинче пĕр ĕçсĕр сулланса çӳрерĕ. Мана ăçта тĕл пулнă - унта çыпçăнчĕ, çынсем умĕнчех юри хыттăн кăшкăрашса ӳпкелешрĕ, намăслантарма тăрăшрĕ. Эпĕ унтан пăрăнса çӳреме пуçларăм, хулана та сахал тухрăм. Çакна пула вăл час-часах ирĕн-каçăн ман хваттере пырса кĕме тытăнчĕ.

Çавăн пек кĕтмен çĕртен пынă сехетсенче вăл мана ик-виçĕ хутчен те Ленăпа калаçса танине курчĕ. Наçтӳç кашнинчех шăлĕсене йĕрсе, йĕкĕлтешсе калаçма пуçлать.

- А-а, вăн кампала пурăнатăн эсĕ? Попов арăмĕпе! Çавăнпа манна пăрахрăн. Чим-ха, лайăх вĕрентĕп сана çын арăмĕсемпе пурăнма! - хирĕлчĕ вăл юлашки хут курсан.

Çакăн çинчен вăл часах ман хваттер хуçине Разумова та каласа пана.

- Сергей Андрейч ман упăшка вăл. Мана пăрахса тарчĕ те кунта Попов арăмĕпе пурăнать. Ленăна текех Çерки патĕнче тĕл пулатăп, -

тенĕ ăна.

Разумов старик, столовăйсенче эрех кĕленчи умĕнче сĕнксе ларма юратаканскер, Наçтӳçе официанткăра ĕçленĕ чухнех паллана пулнă иккен. Çавăнпа ăна вăл кăмăлласах йышăннă, унăн элекне ĕненнĕ тата ку элеке хăй енчен те çирĕплетсе панă.

- Чăн, Попов арăмĕ ун патне час-часах килсе çӳрет. Сергей Андрейч хăй те вĕсем патне тăтăшах каять. Эпĕ вĕсене хам та курнă, - тенĕ вăл.

Наçтӳç чăнах та хăйĕн ĕçне часах туса хунă. Вăл Попов патне кайнă та:

- Сан арăму ман упăшкапа пурăнать, ун çинчен сана Разумов та ĕнентерсе пама пултарать, - тесе элекленĕ.

Эпĕ çакăн çинчен пĕлменччĕ-ха. Пĕр кунхине, каçпала, калаçса лармалла тесе Поповсем патне кайрăм. Килĕнче малтан Ленăпа ун упăшкин мăн аппăшĕ тата ачисем анчахчĕ. Аслă ачи, улт-çичĕ çулалла çитнĕ ывăлĕ Коля, ашшĕ пекех хура çӳçлĕ те пысăк хура куçлăскер, сĕтел хушшинче картинлă кĕнекесем пăхса ларать; ик-виçĕ çулти шурă пуçлă хĕрачи, Сима, урайĕнче чупкаласа çӳрет, ватă кинемĕш-карчăкĕ тĕпелте ăна асăрхаса тăрать.

Лена мана малтанах сӳрĕккĕн те хуйхăллăн йышăнса илчĕ. Пăртак ларнă хыççăн кинемĕшĕ умĕнчех вăл пĕр пытармасăр çапла каласа паче: - Сергей Андрейч, Настьăпа Разумов старик пирĕн Михаил Николаича тӳсме çук элеклесе тултарнă. Эпĕ санпа пурăнатăп пулать вара... Мĕнле йĕплĕ çынсем!! Чĕлхисемпе, çĕлен пек, чĕререн сăхаççĕ. Миша манна вăрçса пĕтерчĕ...

Кунта вата кинеми те хăй сăмахне хушса хучĕ:

- Тахçантанах паллана-пĕлнĕ тантăшпа курнăçса калаçни нимĕнех те мар пек те, уншăн çилленмех те юрамасть те... Ну, пирĕн Миша кăмăлĕ çăмăлах мар çав. Ĕçке ерчĕ вăл, çакна май кăмăлĕ те усаллансах пырать, - терĕ.

- Эсĕ мана ăнланатăн, кинемей, - терĕ Лена. - Эпĕ хам упăшкана, вăл темĕнле çын пулсан та, халиччен пĕрре те суйман, нихçан улталаман... Сергей Андрейча эпĕ тахçанах пĕлетĕп. Чăнах та, çамрăк чух ăна юратнă, халĕ те кăмăллатăп.. Ну, пирĕн хушăри таса юрату нимĕнпе те вараланман. Эпĕ ăна халичченех таса халлĕн тытса упратăп. Уншăн мана вăрçма кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен хăш-пĕр чух манăн пурнăçри савăнăçпа хаваслăх та, илемлĕ çутă лаптăк та пĕр çав асаилӳсенче анчах. Миша хăй вĕççĕр ĕçет, вăрçать, çемйине мĕскĕнлĕхе кĕртсе ячĕ. Эпĕ çаплах тӳсетĕп, хам ачасен ашшĕ тесе хĕрхенетĕп ăна, - терĕ те Лена ĕсĕклесе макăрма пуçларĕ.

-Михаил Николаич тăнсăр-пуççăр çынах мар-çке-ха вăл. Епле вара эпир хамăр çылăхлă марри çинчен чунтан каласа панине те ĕненмĕ-ши? - терĕм те эпĕ ăш вăрканипе урăх нимĕн калама та аптраса кăна ларатăп.

- Çук çав. Ăна ĕнентерме питĕ хĕн! - тет Лена куçĕсене тутăрпа шăлса.

Пирĕн хушăра хуйхăллă калаçу пычĕ. Лена макăрнипе унăн ачисем те

салхуланчӗҫ, вӗсем амӑшӗ умне пырса ун ҫине мӗскӗннӗн пӑхса тӑчӗҫ.

- Ан макӑр, анне! Чарӑн! - терӗ ӑна Коля.

Вӗсем, паллах, ашшӗ ӳсӗр таврӑнсан амӑшне вӑрҫнине, амӑшӗ хурланса йӗнине пӗрре ҫеҫ мар курнӑ пулмалла, ӑна хӑнӑхнӑ та ахӑр ӗнтӗ.

- Ҫак ачасем ҫех ҫыхаҫҫӗ мана Мишӑпа. Вӗсем пулман пулсан эпӗ ӑна тахҫанах пӑрахса кайнӑ пулӑттӑм. Ҫаксемшӗн ҫех ӑна, хама асаплантаракана, пӑхса пурӑнатӑп. Ашшӗпе амӑшӗ хӑйсен ачисемшӗн таса ҫынсем пулмалла, - терӗ Лена ачисене пуҫран ачашласа.

Эпӗ тухса кайма пуҫтарӑннӑччӗ ӗнтӗ. Шӑпах ҫак самантра Попов хӑй пырса кӗчӗ. Вӑл ӳсӗр, енчен енне тайкаланать: урӑ чух питҫӑмартисем ҫинелле пӗтӗрӗнсе тӑнӑ хура мӑйӑхсем халь ӗнтӗ тути ҫинелле усӑнса аннӑ, вӗсем сурчӑкпа, сӗлекепе вараланнӑ.

Мана курсан унӑн пысӑк хура куҫӗсем пушшех чарӑлса кайрӗҫ.

А-а!.. Эсӗ-и ку?!. Мӗн тума килтӗн ман киле?!. Лена патне-и?! - кӑшкӑрса ячӗ вӑл тӗпелелле сулкаланса пырса.

- Лена патне ҫех мар, Михаил Николаич... Сире иксӗре те курма, калаҫма, халапласа ларма килтӗм, - терӗм эпӗ ӑна шӑртлантарас мар тесе лӑпкӑн та ирӗксӗрех кулкаласа.

- Эпӗ санӑн юлташу мар санпа калаҫса ларма! Лена та арҫын мар - санпа пӗрле пулма! Килӗшмест ку!.. Халех тухса кай та ман киле санӑн уру урӑх килсе ан пуснӑ пултӑр! Илтетӗн-и? - кӑшкӑрса譯ларӗ вӑл мана алӑк патнелле тӗксе ярса.

- Мӗншӗн ку, Михаил Николаевич! Эпӗ нимпе те айӑпа кӗмен: май пулсан халех чуна уҫса кӑтартӑттӑм... Курӑттӑн эсӗ - епле таса та ултавсӑр манӑн чунӑм! Лена та ман пекех таса, - терӗм эпӗ. Унтан ӑна Наҫтӳҫ мана курайманни ҫинчен, вӑл ахалех суйса элеклени ҫинчен каласа ӗнентерме тӑрӑшрӑм.

- Настя кӑна мар, Разумов кам тата?! Вӑл манӑн кӳршӗ, ватӑ ҫын - нихҫан та суйса элеклес ҫук... Настя сӑмахӗсене вӑл та ӗнентерсе пачӗ! - кӑшкӑрать Попов.

Лена ку вăхăтра пĕр кĕтесре тăнă та нимĕн калама пултараймасăр макăрать.

Темĕн каласа та ĕнентерме çуккине кура эпĕ тухса кайма тăтăм.

- Ахалех ку, Михаил Николаич! Эпир пĕр айăпсăр - урă, тӳрĕ кăмăллă çынсем, - терĕм те алăк хăлăпне тытрăм.

- Итле! - кăшкăрчĕ вăл мана юнаса. - Ман киле урăх килнĕ ан пултăр. Лена та сан хваттерна пынă ан пултăр. Тепре курсан иксĕре те касса вĕлеретĕп... Астăвăр: вĕлеретĕп! - терĕ те урипе каллех урайне тапса илчĕ.

- Юрĕ, килмĕп... Анчах та эсĕ арăмна таса çинченех ан тив. Тархаслатăп сана: ăслă пул! - терĕм те эпĕ чĕрене чул катăкĕ пуснă пек йывăррăн туйса Попов патĕнчен мĕскĕннĕн тухса кайрам.

- Кай, кай! Урăх ан килнĕ пул! Ман куçăмсем сана урăх ан курччăр! - кăшкăрса юлчĕ вăл уçнă алăкран.

- Çак самантрах Лена кăшкăрса йĕни илтĕнчĕ. Амăшĕ йĕнине кура ачисем те макăрма пуçларĕç.

- "Пĕтрĕ манăн тăкăс пурнăçăмри пĕртен-пĕр хаваслăх... Пĕлĕт хыçне пулчĕ тӳпери çутă çăлтăр", - шухăшларăм эпĕ тăкăрлăкпа хам хваттер еннелле утнă май. Лена хытă макăрнине аса илсен вăл та халь ман пекех шухăшласса тавçăрса илтĕм те чĕрем пушшех хытăрах ыратма пуçларĕ.

- Çав кунхине эпĕ хам валли лăпкă вырăн тупаймарăм. Каçхине те çывăраймарăм.

- "Ахалех-çке ку! Чăнах та таса çинченех! Эх, Наçтӳç, Наçтӳç! Епле сиенлĕ çын вăл! Хăй еркĕнĕсемпе асса çӳренĕ чух та эпĕ ăна çакăн пек хыттăн вăрçса кӳрентерме пултарайман. Уйрăлмалла пулнăшăн, еркĕнĕсем пăрахнăшăн хăйне мар, манах айăплать... Ленăпа иксĕмĕр хушăмăрти тахçантанхи туслăха пĕтерсе хучĕ! Тĕрĕссипе илсен пирĕн туслăхĕ йăлтах пĕтмĕ-ха вăл, анчах та Ленăпа ĕнтĕ пĕр-пĕрин патне çӳреме пултараймастпăр. Ăнсăртран тĕл пулсан кăна кăшт-кашт калаçма пултарăпăр", - шухăшларăм эпĕ çав сехетсенче.

- Çав вăхăтран пуçласа эпĕ Поповсем патне урăх кайма хăяймарăм, Лена хăй

те пымарĕ. Хăш-пĕр чух, вăл пысăк урамалла тухнине е килне таврăннине кантăк витĕр курсан çех, эпир пĕр-пĕрне алăсемпе сулса саламлаттăмăр та йăл кулса илеттĕмĕр.

- Пĕррехинче урамра тĕл пулсан вăл хăйне çав кун упăшки хытă хĕнени çинчен каласа пачĕ те шывланнă куçĕсене шăлкаларĕ.

- - Халь эпĕ кăмăлăма поликлиникăра ĕçленипе çеç лăплантаратăп. Ачамсене хамăн пĕчĕк ĕç укçипех тăрантарса тумлантаратăп. Миша хăй мĕн ĕçлесе илнине йăлтах ĕçсе пĕтерет, - терĕ вăл мана.

## 14

Наçтӳçе еркĕнĕсем улталаса хăварнă хыççăн вăл Сергей Андреевич хваттерне япалисемпех куçса пырать. Хваттер хуçи Разумов та пĕрле ĕçекен-çиекен Наçтӳç майлă. Анчах пĕр сивĕннĕ чуна çакă ăшăтас çуккине Сергей лайăх ăнланать. Вăл каллех урăх хваттере куçса каять. Çакăн хыççăн упăшкипе арăмĕ пулнă çынсен судпах татăлма тивет. Вара Наçтӳç тĕрмерен тухнă малтанхи упăшкине шырама Самара тухса каять. Ырă сунса ăна Сергей çул çине укçа парса пулăшать.

## 15

Ленăн хуйхи-суйхи иртмест. Ĕçке ернĕ Попова ĕçре вăрах тытмаççĕ. Вăл ĕнтĕ ĕренкине çухатнă. Пĕринче ăна Сергей çырма тĕпĕнчен сĕтĕрсе тухса килне ăсатать, Тав тăвас вырăнне урăлма пуçланă çын ăна кĕвĕçсе хăвалама пуçлать. Çакăн хыççăн Сергей Ленăпа нумай çул вуçех тĕл пулмасть.

1941-мĕшçул çитсе тăчĕ. Тăван çĕршывăн аслă вăрçи пуçланса кайрĕ.

Вăрçă пуçлансан ик-виçĕ уйăхранах Шупашкарта та аманнă салтаксем валли икĕ пысăк госпиталь уçрĕç. Пĕр госпитале, Лена ĕçлекен поликлиникăран инçе те мар, куç чирĕсен институчĕ çуртĕнче уçăлчĕ.

Госпитальсем уçăлсан кĕркунне çитеспе эпĕ пĕр кĕтмен çĕртен çыру илтĕм. Çыруне куç чирĕсен институтенчи госпитальте выртакан хамăн хурăнташ Афанасьев Пурис çырнă. Вăрçăра Пурис батальон командирĕ пулнă, халĕ мана хăй патне пырса курма чĕннĕ.

Çыруне илнĕ куннех кăнтăрла иртсен эпĕ Афанасьева курма кайрăм. Госпиталĕн аялти хутĕнчи курнăçмалли пӳлĕме кĕрсен мана дежурнăй сестра кĕтсе ларма хушрĕ.

- Эсир курас тенĕ командир утма пултарать пулсан хăех кунта килĕ, - терĕ те ăна пĕлтерме иккĕмĕш хута хăпарса кайрĕ.

Афанасьев час анмарĕ. Ăна кĕтсе ларнă вăхăтра йывăр аманнисем выртакан палатăсем енчи коридортан сасартăк шурă халатлă Лена пыни курăнса кайрĕ. Эпĕ картах сикрĕм. Вăл хăй те мана палласан тăп чарăнса юпа пек хытса кайрĕ.

- - Сергей Андрейч! - терĕ вăл пăртак тăнă хыççăн. - Мĕнле ĕçпе килнĕ вара эсĕ кунта?!. Пĕр хуларах пурăнатпăр, çапах та курманни миçе çул ĕнтĕ! Чăнах, миçĕ çул!

Лена ман пата пырса ларчĕ те, калаçу пуçланчĕ. Эпĕ ăна хам мĕн пирки килни çинчен пĕлтертĕм. Вăл мана хăй кунта госпиталь уçăлсанах куçса килни çинчен каласа паче.

- - Йывăр суранлисен палатинче ĕçлетĕп те - ĕçĕ çăмăл мар манăн. Час-часах операци тунă çынсене пăхма лекет. Каçхи дежурствăсенче кăшт выртса канма та çук... Çапах хамăн ĕçе хурламастăп эпĕ. Суранпа асапланакансен пурнăçне çăмăллатма тăрăшатăп-çке-ха. Вĕсене мĕн чухлĕ те пулин усă кӳнине шута илсе хама хам лăплантаратăп...

Эпĕ вăл нумай улшăнса кайнинчен тĕлĕнтĕм. Унăн сăн-пичĕ туртăннă, сасси те йăвашшăн тухать.

- - Елена Яковлевна, ма вара хăвна хăв çак териех тертлентеретĕн-ха эсĕ?!. Текех çамрăк çын та мар. Килĕнте ӳсĕр упăшку канăç памасть, кунта йывăр чирлисене пăхса хăшкăлатăн. Халь çамрăк санитаркăсем те нумай вĕт, чирлисене вĕсем пăхма пултараççĕ. Тата, куратăп акă, сывлăху та çирĕпех мар пулмалла санăн, — терĕм эпĕ ăна.

Лена шухăшласа ларчĕ те хуллен кăна:

- - Эсĕ калани тĕрĕсех пуль, Сергей Андрейч, - терĕ. -Темскер, чĕре ыратакан пулчĕ. Сывлăхăм хавшанă пек туйăнать. Ывăнатăп...

Çав самантра уçă кантăк умĕнче пирус туртса ларакан клюшкăллă салтак, тĕксĕм кăвак халатпа сарлака шăлавар тăхăннă çамрăк çын, кăшт ÿсĕркелерĕ те вичкĕн чакăр куçĕсемпе ман çине кулараххăн пăхса хыттăн çапла каласа хучĕ:

- Ну, ан калăр эсир, гражданин, тетя Лена ватă çын тесе! Аманнисене пăхас тĕлĕшпе вăл тепĕр çамрăк санитаркăран ирттерет. Ӳркенмен çын, нимрен те йĕрĕнмен чи лайăх санитарка! Йывăр чирлисем патĕнче çĕрĕ-çĕрĕпе ларать... Ырă анне вăл пирĕн, анне!

Лена хăйне мухтанă салтак енне пăхса кăшт куланçи пулчĕ те аллине сулчĕ:

-Ах, ун пекех ан мухтăр ĕнтĕ, Ваççа! Эпĕ мухтавах тивĕçлĕ мар... Чирлисене пăхас енĕпе чăн та ÿркенместĕп те-ха... Хавасланса ĕçлеттĕм. Анчах халь акă ĕшенетĕп... Врачсем чĕре ревматизмĕ теççĕ. Тĕрĕсех пулсан ку чир хăрушă япала! - терĕ вăл ман енне çаврăнса.

Лена малалла хăйĕн ку госпитале мĕнле куçса килмелле пулни çинчен каласа пачĕ. Госпиталь уçма хатĕрленнĕ чух поликлиникăра ĕçлекен врачсен, медсестрасен, санитаркăсен пысăк пухăвĕ пулнă-мĕн. Çав пухура вара харпăр ĕçне лайăх тума пултаракан темиçе медсестрапа санитаркăна çак госпитале ямалла тесе йышăннă. Вĕсен шутне Ленăна та кĕртнĕ. Вăл хăй те çакăнпа хаваслансах килĕшнĕ. Хаяр вăрçă вăхăтĕнче Тăван çĕршывшăн нимĕнле йывăр ĕçрен те пăрăнма юрамасть, халăха мĕнле те пулин ытларах усă кÿмелле тесе шухăшланă вăл. Халĕ те çавăн пекех шухăшлать, анчах та сывлăхĕ йăшса пыни çех ăна шиклентерме тытăннă,

Хĕрсех калаçса ларнă самантра пирĕн пата çÿлти хутран аннă Афанасьев пырса тăчĕ. Хытанкарах вăрăм çын, вăтăр урлă каçнă çирĕп сăнарлă комбат, суранланнă сылтăм аллине шурă бинтпа çыхса мăйĕнчен çакса янăскер, пире сывлăх сунчĕ те:

- Каçар, Сергей Андрейч. Дежурнăй сестра пырса калана чух эпĕ шăпах врач патĕнче лараттăмччĕ. Сурана çуса тасатрĕç, çыхрĕç. Çавăнпа часах килеймерĕм, - терĕ.

Лена кайма тăчĕ.

- Вăхăт пулсан тепĕр çур сехетрен килме пултаратăп, - терĕ те вăл тÿшек çиттисемпе минтер пичĕсем илме кастелянша патне каймалла тесе çÿлти хуталла хăпарчĕ. Эпир Афăнасьевпа ларнă чух вăл пирĕн пÿлĕм витĕр ик-виçĕ хут та иртсе кайрĕ, анчах унăн пирĕнпе калаçса тăма вăхăт пулмарĕ.

Афанасьев ман атте шăллĕн ывăлĕ пулать. Эпир унпă курнăçманни пилĕк çул ытлаччĕ ĕнтĕ. Вăрçа вăл действительнăй çар службинченех кайнă пулнă. Халь мана курсан çав тери хĕпĕртерĕ. Вара икĕ сехете яхăн пулĕ пĕр таттисĕр калаçса лартăмăр.

- Аван-ха, хамăр республика столицинех илсе килчĕç. Ку маншăн -кĕтмен пысăк телей! Кунта эпĕ тăвансене, хамăр чăваш халăхне куратăп. Виçĕмкун анчах ялтан аннепе йăмăксем килсе курса кайрĕç. Çав тери хĕпĕртерĕмĕр. Савăннипе анне макăрса ячĕ, - каласа парать мана Пурис.

Юлашкинчен эпĕ ыйтнипе вăл мана фронтри хаяр çапăçусем тата хăй мĕнле суранланни çинчен каласа кăтартрĕ.

* * *

Пĕр санитарка каçхи апат пуçланни çинчен пырса пĕлтерчĕ. Эпĕ госпитальтен тухрăм та веранда çинче Лена тухасса кĕтсе лартăм. Вăл пĕр çирĕм минутран кĕске вăхăтлăха кăна тухрĕ. Халь ĕнтĕ тухсанах хăйне пусакан хуйхипе нушисем çинчен каласа пама тытăнчĕ.

- Пирĕн Кольăна Хĕрлĕ Çара кайма шута илсе хучĕç. Тин ÿссе çитĕнекен çамрăк, пурнăçпа та ыррăн паллашса çитмен-çке-ха вăл! Йăваш путек пекех! Вăрçа кĕрсенех пĕтме пултарĕ тетĕп, - пăшăрханса илчĕ Лена. Малалла вăл хĕрĕ Сима кăçал тăххăрмĕш класра вĕренни çинчен тата хăй упăшки çаплах ĕçни çинчен каларĕ.

- Вăрçă пуçланнăранпа ун валли маляр ĕçĕ те тупăнми пулчĕ ĕнтĕ. Пĕр-пĕр çĕре каллех счетовода кĕресшĕн тăрăшать те-ха, темле, те кĕрейĕ. Кĕрсен те каллех кăларса ярĕç... Хам вилсе кайăп акă. Вара ачамсем мĕнле пурăнкалĕç? - кулянчĕ вăл.

Мĕнле те пулин пулăшас тесе эпĕ ăна уйăхсерен хамăн ĕç укçинчен çуррине

парса тăма пултăм. Вăл ман сĕнĕве йышăнмарĕ.

- Хам пурăннă чух, ĕçленĕ чух никамран та пулăшу илме килĕшместĕп. Аван мар вăл ун пек... Теплерен вилсе кайсан вара ачамсем мĕнле пурăннине асăрхани аван пулĕччĕ. Ашшĕ вĕсене пăхма пĕлес çук. Тен, хăш чухне пулăшу та кирлĕ пулĕ. Çакна ан манччĕ, Сергей Андрейч, мана ырă тăвас тетĕн пулсан, - терĕ те вăл ассăн сывласа илчĕ.

- Чим-ха, Елена Яковлевна, текех вилĕм çинчен ан калаç-ха эсĕ! Салху шухăшсене сир! Пурăнмах ĕмĕтлен! Пĕтĕм вăйна хурса пурнăçшăн кĕреш! - терĕм эпĕ ăна.

Лена ирĕксĕр куланçи пулчĕ.

- Эх, Сергей Андрейч... Тем пекех пурăнасчĕ те, анчах чирĕ çавăн пек-çке-ха! Тӳрлетме çук теççĕ ăна.

Сентябрь хĕвелĕ катрам пĕлĕтсем хыçне анчĕ. Вăл вăхăт-вăхăт кăна пĕлĕтсем хушшинчен йăмăшса пăхса хулари çуртсене йăваш çутăпа çутатрĕ. Эпĕ Ленăна чĕререн хĕрхенсе кайрăм, анчах та ăна лăплантарса савăнтарма нимĕнле сăмах та тупаймарăм. Темле ырăрах та ăшăрах сăмах тупса каласчĕ тесе ун çине пăхса тăратăп. Вăл та хăйĕн ывăннă кăвак куçĕсемпе ман çине тинкерсе пăхать, - вĕсем анса ларакан хĕвелĕн йăмшак çутипе имшеррĕн йăлтăраççĕ. Хăй вăл ĕлĕкхи пекех лăпкă, сăпай. Анчах сăн-сăпатне пăхсан унăн чĕринче çаплах пурнăç вут-хĕмĕ тĕлкĕшни сисĕнет, вăйĕ хавшанă пулин те - кăмăлĕнче çынна ырă тума, мĕнле те пулин усă кӳме ĕмĕтленни палăрать.

Çак самантра ун патне хулă пек ӳссе кайнă яштак пӳллĕ хĕрĕ Сима чупса пычĕ. Вăл, тин çеç вунçиччĕ тултарнăскер, амăшĕ пекех шурă сăнлă, сенкер кăвак куçлă. Ун çине пăхсан мана çирĕм пилĕк çул каялла тĕл пулса паллашнă, чи малтан юратнă çамрăк Лена аса килсе кайрĕ. Сима пур енчен те амăшĕн сăн-сăпатне йышăннă илемлĕ хĕр. Анчах амăшĕнчен хăюллăрах та харсăртăрах пулмалла.

- Анне, - терĕ вăл пырса çитсенех, - халь тин шкултан таврăнтăм та - эпир выçă. Коля паян çăкăр илеймен. Пур çĕрте те фронт патĕнчен куçса килнĕ

çынсем тулса ларнă. Çăкăр çитмеçт. Атте таçта вăл!.. Ху паекна çисе яман пулсан, тархасшăн, парса яр мана, - терĕ вăл тилмĕрсе.

- Эх, мăнтарăн ачисем, хăйсем тĕллĕн çăкăр та илеймеççĕ-çке! -терĕ те Лена госпитальтен хăй паекне илсе тухса хĕрачине паче.

Халь ĕнтĕ вăл текех калаçса тăма пултараймарĕ.

- Ну, каçар, Сергей Андрейч... Манăн ĕçсем пур, васкамалла, - тесе госпиталь алăкне уçса кĕрсе кайма тăчĕ. Анчах темскер аса илнипе хăвăртах каялла çаврăнчĕ те хĕрне чĕнсе илчĕ. - Итле-ха, Сима, çак çынна паллатăн-и эсĕ? Лайăх паллатăн-и? - ыйтрĕ вăл ман çине кăтартса.

- Мĕнле палламастăп? Пĕлетĕп-çке! Тахçан, эпĕ пĕчĕкрех чух, хамăр пата та пыратчĕ... Эпĕ ăна астăватăп, — терĕ хĕрĕ кулараххăн.

- Пĕлетĕн пулсан аван, Сергей Андреевич Андреев пулать ку, Сима. Андреев тетӳ - манăн ентеш вăл, кĕнекесем кăларнă çĕрте ĕçлекен ырă кăмăллă этем. Маншăн, асу хыççăн, чи çывăх тус-юлташ шутланать. Ваттисем калаççĕ: çĕр тенкĕ укçа вырăнне çĕр тусу пултăр теççĕ. Таврара ырă туссем пулсан пурăнма та çăмăлтăрах, Сима... Эс пĕлетĕн: ман хамăн сывлăх тайăлсах пырать. Аçу ĕçкĕпе япăхнă çын. Çавăнпа та ун çине нумаях шанма çук... Йывăр вăхăт килсен çын пулăшни те кирлĕ пулĕ... Ун пек чух асту, хĕрĕм, Сергей Андрейч сире аннӳ ячĕпе яланах пулăшу пама та хапăл пулĕ... Çапла-и, Сергей Андрейч? Эпĕ тĕрĕс калатăп-и? — терĕ Лена ман çинелле пăхса.

- Тĕрĕсне тĕрĕс ку, Лена... Анчах эсĕ каплах хурланмалла ан калаç-ха. Ĕмĕте ун пек татма юрамасть. Умра яланах ĕмĕт пултăр - çутă ĕмĕт! - тавăртăм эпĕ ăна паттăрлатма тăрăшса.

- Çаплах! - терĕ вăл куçне шăлкаласа. - Ĕмĕте ăна çухатасшăн мар-ха эпĕ. Пурăнмах ĕмĕтленетĕп. Çапах та каласа хуни юрать вăл.

* * *

Пĕр хĕвеллĕ ăшă кун Пичет çуртне Лена хĕрĕ Сима пырса кĕчĕ. Унăн сăнĕ салхуллă та хурлăхлă.

- Мĕн капла эсĕ, Сима, питĕ салхуллă пек? - ыйтрăм эпĕ унтан.

- Колька вăрçăра вилнĕ. Çырупа пĕлтерчĕç, - терĕ вăл хĕрелнĕ куçĕсене шăлкаласа.

Эпĕ ăна лăплантарма тăрăшрăм. Вăл лăпланмарĕ, хытăран хытă макăрчĕ. Каярахпа шăппăн ĕсĕклесе ерипен каларĕ:

- Пĕлетĕр вĕт, Сергей тете, анне ĕлĕк те сывах марччĕ те, Коля пирки çыру илсен кулянниппе вăл пушшех йывăрланса кайрĕ. Икĕ эрне больницăра выртрĕ. Халь ĕçрен тухрĕ ĕнтĕ, килтех пурăнать. Çапах та вăйсăр. Чĕрипе аптрать... Лайăхрах çимелли кирлĕ те - тупса илейместпĕр. Тупсан та - мĕнпе илес?!. Атте "Металлист" эртелĕнче ĕçлекелет те - укçи-тенки çук унăн. Çаплах ĕçет... Мана анне сирĕнпе калаçса пăхма ячĕ те...

Ку вăхăтра - пытарма çук ĕнтĕ - çимĕç магазинĕсенче, çавăн пекех пасарсенче те, çимелли тавраШне укçапа илме çукчĕ. Хура çăкăра та кашни çын пуçне виçеллĕн кăна карточка тăрах илеттĕмĕр. Çакна пула эпĕ чирлĕ Ленăна укçапа пулăшма май çуккине шута илтĕм те урăх мелпе пулăшасси çинчен шухăшлама пуçларăм.

- Итле-ха, Сима, - терем ăна пăртак шухăшласа ларнă хыççăн. - Халь укçапа та эçир нимĕн тупса илеес çук. Акă мĕн. Кил эсĕ ман пата, çакăнтах, тепĕр виçĕ кунтан. Эпĕ çав вăхăта мĕн те пулин тупса хатĕрлĕп, тен.

Симăна пултарнă таран йăпатса, амăшне часрах сывалма ырлăх-сывлăх тата лăпланма сунса ăсатрăм та нушари çемьене мĕнле майпа пулăшас пирки плансем тума тытăнтăм.

Çакăн хыççăн, пĕр вырсарникуна хирĕç, хамăр директорпа калаçса виçĕ кунлăх отпуск илтĕм. Вара издательство машинĕпех, пĕр япăхнă кивĕ грузовикпа, виç-тăватă çын ларса хуларан инçерехри колхозсене тухса кайрăмăр.

Вăрçă вăхăтĕнче йӳнелнĕ хут укçана ун чух колхозсенче те хакламастчĕç, укçалла нимĕн те сутасшăн марччĕ. Çимелли продукт тавраШне ялсенче пир-авăр, атă-пушмак е ытти çавăн пек таварсемпе çеç улăштарма килĕшетчĕç. Çакна шута илсе эпир, яла каякансем, пурте çавăн пек япаласем тупса хатĕрлерĕмĕр. Манăн хамăн вăрçăчченех илсе хунă костюмлăх пустав, мăшăр калуш, кĕпе çĕлетме

тесе илнĕ вун-вуникĕ метр сатинпа толденор пурччĕ. Эпĕ çавсене илтĕм. Асăннă "таварсемпе" пĕр колхозра икĕ пăт çăнăх, виçĕ пăт çĕрулми, икĕ кило çу, икĕ кило пыл улăштарса илтĕм. Чирлĕ çынна валли тата çăмартапа аш-какай кирлĕччĕ ĕнтĕ. Çуллахи вăхăтра ашне тупма май пулмарĕ. Анчах çăмарта илме те манăн урăх нимĕнле "тавар" та юлмарĕ. Ман юлташсенчен иккĕшĕ хăйсен "таварĕсемпе" те мĕн кирлисене илсе çитерейменччĕ-ха. Çакна пула ял çыннисем пире пĕр пуянрах колхозник патне кăтартса ячĕç. Колхозник çемйинче - пĕр хĕрĕх пиллĕксене çитнĕ чăлахрах кил хуçипе арăмĕ тата икĕ хĕрĕ кăна.

Вĕсен çăмарта та, тăварласа лартнă аш та тата ытти çимĕç таврашĕ те пур. Ман юлташсем мĕн кирлине пурне те туянчĕç. Мана çăмарта кирлĕ, анчах та улăштарса илме ним те çук. Колхозниксене эпĕ çимĕç таврашне хамшăн мар, пĕр нуша куракан çын валли илни çинчен тата çăмартапа аш питĕ кирлĕ пулни çинчен каласа патăм. Çакна илтсен ырă кил хуçи арăмĕ мана нимĕнсĕрех пĕр çирĕм çăмарта илсе пырса пачĕ. Çакна кура савăннипе тата ырă кăмăллă хĕрарăма тав тăвас тенипе эпĕ хам çири пиншака хыврăм та унăн упăшкине тăхăнтартса ятăм. Вăл мана шӳтлет пулĕ тесе пиншака малтан тăхăнчĕ, унтан часах капла лайăх мар тесе шухăшласа илчĕ пулас та пиншака каялла пачĕ. Эпĕ ăна илмерĕм, ырă кăмăлпах йышăнма сĕнтĕм те каллех тăхăнтартрăм. Упăшкипе арăмĕ куçран куçа пăхса илчĕç. Çакăн хыççăн вĕсем мана тепĕр вăтăр çăмарта, ик-виçĕ кило чухлĕ тăварланă аш тата пĕр хутаç пăри кĕрпи тултарса пачĕç. Эпĕ вĕсене чунтан тав турам та ку паха продуктсемшĕн пĕр-пĕр чух каллех мĕн те пулин илсе килсе пама пултăм.

- Кирлĕ мар пире ним те, кирлĕ мар. Пирĕн пур-ха. - Çав хуйхăллă, чирлĕ хĕрарăм çемйине пулăшăр. Сывалтăрччĕ вăл, - терĕç вĕсем манпа хампа та кăмăллă юлса.

Ку йывăр вăхăтра ялта çакăн чухлĕ продукт тупасçине эпĕ хам малтан шанма та пултарайман. Хулана хĕпĕртесе таврăнтăмăр.

Пыма калана кун Пичет çуртне Сима пырса çитрĕ. Эпĕ ăна продуктсене патăм та, вăл çав тери тĕлĕнсе, хавасланса кайрĕ.

- Мĕнле майпа, ăçтан тупрăр кусене эсир, Сергей тете?!. Мĕнпе тӳлесе

татар, мĕнпе тав туса тавăрар куншăн сире?!. Кусем аннене ик-виçĕ уйăха çитеççĕ! Вăл халĕ ĕнтĕ сывалма та пултарать, - тесе çемçе чĕлхи-çăварĕпе чĕкеç пек чĕвĕлтетрĕ çамрăк хĕрача. Вăл мана хăйсем патне пыма чĕнчĕ, мана ашшĕ-амăшĕ хăйсем тав тунине кăтартасшăн пулчĕ. Анчах та ашшĕ мана хăйсем патне пыма хушманнине вăл та маннă пулнă е, тен, ăна пĕлмест те пулĕ.

- Çук, Сима. Халĕ пыраймастăп-ха сирĕн пата. Мĕншĕн пыйрайманнине аннӳ хăех пĕлет, манăн ĕç нумай, - терĕм те эпĕ ăна амăшне салам калама тата ырлăх-сывлăх суннине пĕлтерме ыйтрăм. Тата çакăнпа пĕрлех эпĕ ăна ку продуктсене кам тупса панине хăй ашшĕне калама хушмарăм. Эсир ăна госпиталь начальнике пулăшрĕ тейĕр терĕм эпĕ ăна. Сима пĕр самант ăнланмасăр пăхса тăнă хыççăн пуçне сĕлтсе илчĕ.

- Юрать, - терĕ вăл.

Панă çимĕçсене Сима пĕр хутрах илсе каяймарĕ, икĕ хутчен пычĕ. Юлашки хут пырсан вăл хăйĕн амăшĕ вĕçĕмсĕр хĕпĕртени çинчен тата савăннипе унăн сывлăхĕ те самайланнă пек туйăнни çинчен каласа паче.

Çакăнтан кайран тепĕр уйăха яхăн иртрĕ. Çак хушăра эпĕ Поповсем çинчен нимĕнле хыпар-хăнар та илтмерĕм.

1942 çулхи июнь уйăхĕ. Çилсĕр типе çанталăк тăрать. Кунĕсем тӳсме çук шăрăх та пăчă.

Çак вăхăтра пирĕн пурте хисеплекен пĕр çамрăк поэт вилсе кайрĕ. Янкăр уяр тӳпери хĕвел çунтарса ярас пек хĕртет. Кăнтăрла иртсен пĕр икĕ сехет тĕлнелле юратнă поэта пытарма кайрăмăр.

Фронтран аякри тылра пулин те, пур çĕрте те вăрçă хĕнĕ пусса тăни сисĕнет. Çынсем савăнăçлă мар, ниçта та савăк юрă-кулă илтĕнмест. Анчах та çынсем пушшех пикенсе, шăлĕсене çыртса ĕçлеççĕ. Ку ĕнтĕ, паллах, кашни патриот хăй çĕршывне мĕнле те пулин ытларах пулăшма тăрăшнинчен, тăван Совет çарĕн тĕрекне çирĕплетме мĕнпур вăйне хунинчен килет.

Йывăççем ӳссе ларнипе çамрăк раща пек курăнакан çăва патне çывхарсан унăн хапхинчен пире хирĕç икĕ грузовик кĕрлесе тухрĕ. Вĕсем çине туллиех çын тиеннĕ. Акă машинăсем пирĕнтен пăрăнса иртеççĕ. Вĕсенчи çынсем хушшинче -

пуринчен ытла хĕрарăмсем. Мана акă мĕн тĕлĕнтерчĕ: кунта хĕрлĕ херес паллиллĕ медсестрасем, паллакан врачсемпе санитаркăсем йышли курăнса кайрĕ.

-Госпитальте пĕр-пĕр врач, сестра е командир таврашĕ вилнĕ пулĕ, çавна пытарса тухрĕç пулмалла, - калаçса илтĕмĕр эпир.

Акă хыçалти грузовик пăрăнса иртсе кайрĕ. Ун çинчи çынсене пăха-тăп. Кузов хыçнерех икĕ медсестра ларса пырать. Вĕсем шурă çитсă кĕпе тăхăннă çап-çамрăк хĕре ыталаса тытнă. Хĕрĕн çинçе кӳлепи, вăл хытă ĕсĕклесе йĕнипе, сике-сике чĕтренсе пырать. Ăна курсанах, эпĕ шартах сикнĕ пек пултăм, чĕре сӳлетсе, çанçурăм пĕçерсе кайрĕ.

"Чим-ха, Сима мар-и вара ку?!. Амăшĕ вилмен пулĕ вĕт?" - шухăшласа илтĕм эпĕ. Анчах та Попов хăй курăнмарĕ.

Манăн канăçлăх пĕтрĕ, юратнă поэтăмăр вилнипе те хытă хурланнă кăмăл-туйăм пушшех пăлханса кайрĕ. Часрах çăва çине çитсе кама пытарнине пĕлес килчĕ. Анчах апла пулсан та мана хамăр ушкăнтан уйрăлса кайма юрамарĕ. Вилнĕ юлташа пытариччен чăтмаллах пулчĕ.

Çăра йывăç тĕмĕсем хушшине малтанах чавса хатĕрленĕ шăтăк патне пырса çитрĕмĕр. Манми хаклă юлташăмăр пурнăçĕпе унăн пархатарлă ĕçĕсем çинчен виç-тăватă çын сăмах каларĕ. Поэта пытарса вилтăпри çине чечек кăшăлĕсем хутăмăр.

Пытарма пынă çынсем хăшĕ машина çине ларса, хăшĕ çуранах хуланалла кайрĕç. Эпĕ пĕчченех юлтăм. Васкасах госпиталь машинĕсем тухса кайнă йĕре тупрăм та ун тăрах масарăн хыçалти кĕтесçинелле утрам.

Пĕр тăвăр уçланкăра çĕнĕ вилтăпри тĕмескипе тин çеç лартнă шурă юпа курăнчĕ. Ерипен ун патнелле çывхаратăп. Тăпра тĕмескин тепĕр енче, тĕксĕм çулçăллă сирĕньпе тутар вĕрени тĕмĕсем хушшинче, пĕр çара пуçлă арçын усăнса ларни курăнса кайрĕ. Чĕре картах сикрĕ.

"Кам-ши ку?"

Палларăм: Лена упăшки, Попов иккен!.. Кăмăл пăлханса кайрĕ, чĕрене курăнми кăвар пĕçертсе илчĕ.

"Эх, шеремет!.. Чăн та çавах вилнĕ иккен! Лена вилнĕ, ăна пытарнă! Мĕнле ытла та хăвăрт ку?!. Нумай пулмасть кăна больницăран самайланса тухнă тетчĕç-çке?!. Мĕншĕн Сима мана пĕлтерейменши? Ăна больницăна кайса юлашки хут курмаллаччĕ хуть", - пăшăрхантăм эпĕ.

Попов патне пырса тăтăм. Вăл çĕрелле ӳпĕннĕ те мана асăрхамарĕ те. Йĕрет-и вăл, çывăрать-и - «нимĕн те паллă мар; куçĕсем уçă-и ун, хупă-и - вĕсем манна курăнмаççĕ.

- Михаил Николаич! Эсĕ-и ку? Мĕнле капла хăвăрт килсе хуçрĕ-ха йывăр инкек? - сас патăм эпĕ.

Вăл пуçне çĕклесе ман çинелле пăхрĕ те таса мар аллипе куçĕсене шăлкаларĕ.

- Елена Яковлевна вилчĕ-им вара? Ăна пытартăр-и?

Попов хирĕç чĕнес вырăнне пуçне сулчĕ. Унтан ман çине тинкererех пăхрĕ те тĕлĕннĕ пек пулса тӳрленерех ларчĕ.

- А-а, Андреев... Сергей! Ăçтан эсĕ... Кунта килтĕн-и? – сăмахне уçăмсăррăн тăсса ыйтрĕ вăл.

Паллах, ӳсĕр. Инçе мар, сирĕнь теме кутĕнче, çурри таран пушатнă денатурат кĕленчи выртать.

- Пирĕн те пĕр юлташ вилчĕ. Ăна пытартăмăр, - терĕм эпĕ.

- Илтрĕм эпĕ: шавлатчĕç, сăмахсем калатчĕç... Эсир-и унта? - ыйтрĕ те вăл эпĕ каласса кĕтмесĕрех малалла хушса хучĕ: - Лена вилчĕ... пытартăмăр... Ывăл та вăрçăра вилчĕ... Халь ĕнтĕ пĕччен тăрса юлтăм...

- Нумай пулмасть больницăран самайланса тухрĕ тенĕччĕ-çке?! Сима каланăччĕ. Мĕнле апла, каллех чирлесе ӳкрĕ-и? Шел, калама çук шел, Михал Николаич! Куна пĕлсен хамăн та чĕре вутпа çуннă пекех пулса кайрĕ, - терĕм эпĕ.

Попов каллех пуçне çĕрелле усрĕ те сăмахĕсене татăклăн-татăклăн каласа мăкăртатма пуçларĕ:

- Хăвăрт!.. Каçпала больницăна хунă - çур çĕр тĕлĕнче вилсе кайнă... Чĕрепе...

Чĕре порокĕпе ревматизм пĕрле терĕç... Мур пĕлет-и вăл чире? Врачсем чĕртеймеççĕ! Ĕмĕрне хăйсем патĕнче, больницăра, ĕçленĕ санитаркăна чĕртеймерĕç!.. Мур пĕлет-и вĕсене!..

- Вилнĕ тенине ĕненес килмест! Мĕншĕн мана пĕлтермерĕр вăл чирлесе ӳксен? - терĕм эпĕ чĕререн кулянса.

Попов пуçне йывăррăн çĕклесе шывланнă куçĕсемпе ман çине тĕллесе пăхрĕ. Вăл темле хаяртăрах сăмах каласшăнччĕ пулмалла. Малтан тем мăкăртатса, ӳсĕркелесе илчĕ, унтан тарăхăвĕ иртрĕ пулас та сăмахĕсене татса хыттăн, хирĕлсех ыйта-ыйта хучĕ:

- Сана чĕнмеллеччĕ-и?.. Мĕн, эсĕ сыватма пултараттăн-им ăна?.. Тухтăр чĕртейменнине эсĕ чĕртеттĕн-и?.. Эсĕ мĕн, унăн тăванĕ-хурăнташĕ пулатăн-им тата?!.

Усĕрскер, вăл ман çине хура куçĕсемпе сиввĕн пăхса ларчĕ, эпĕ мĕскер калама пултарасса кĕтрĕ.

- Михал Николаич, - терĕм эпĕ ăна, - вилнĕ çын умĕнче ун пек хирĕлсе калаçни килĕшсех каймасть вăл. Эсĕ пĕлетĕн: Елена Яковлевнăпа эпир çамрăклах паллашнă, таса туслăхпала кăна пурăннă, пирĕн туслăхра нимле çылăх та çук. Елена Яковлевна ырă кăмăллă, тӳрĕ хĕрарăмччĕ. Вăл сана нихçан та улталаман, суйман. Сана тĕрĕс çул çине тăратасшăн, ĕçме пăрахтарасшăн анчах çунатчĕ. Ачусене тутă та питĕ усрасшăн сахал мар нушаланче. Эсĕ элекçĕсене ĕненсе, пире ахалех курайми пултăн. Ку айванлăха халĕ те пулин сĕтĕрме пăрахсамччĕ хуть!

Попов час чĕнмерĕ, каллех пуçне усрĕ, куçĕсене аллипе шăла-шăла илчĕ.

- Чăн калатăн, Сергей Андрейч!.. Лена ырă кăмăллăччĕ, - терĕ вăл ларсан-ларсан. - Ăна поликлиникăпа госпитальте ĕçлекенсем те пурте хисепленĕ иккен! Çакна эпĕ акă халь, Лена хăй вилсен тин, куртăм. Епле чаплăн пытарчĕç ăна! Пĕтĕм тухтăрсем, сестрасем, санитаркăсем ура çине тăчĕç! Ик-виçĕ кун чупкаларĕç, тăрăшрĕç; паян мухтавлă сăмахсем каласа пытарчĕç. Акă епле хитре чечек кăшăлĕсем хучĕç ун çине. Ăна тирпейлесе пытарас ĕçре эпĕ хам ним

туманпа пĕрех. Манăн аласем усăнчĕç, урасем утайми пулчĕç. Мана нумай пулăшрĕç, Ленăшăн пулăшрĕç... Чăн, эпĕ, тен, йăнăшнă та пулĕ. Элексĕсене те ĕнентĕм пулĕ. Чăн...

- Йăнăшрăн çав. Хăвна тата ачусене епле ырă кăмăлпа çунса пăхнă хĕрарăма хисеплеме пĕлмерĕн... Эрех ăшне путсах пĕтрĕн! - терĕм те эпĕ, манăн юлашки сăмах Попова каллех кăмăла каймарĕ.

- Пăхма пĕлмерĕн тетĕн? - Ну, кала-ха, мĕнле пăхмалла пулнă тата ăна?!. Алă çинче йăтса çӳремелле пулнă-им? - хăрăлтатса илчĕ вăл пуçне хăвăрт çĕклесе.

- Пĕлмерĕн! - тепĕр хут каларăм эпĕ. - Çав çумăнта ларакан бутылкăри пек ханжапа эрехе ĕçе-ĕçех чикĕрен тухрăн. Ленăна сан юлашки укçупа пăхмаллаччĕ, тахçанах ĕçрен кăлармалла пулнă. Сан тискерлĕхӳ пирки Лена выçă та, çарран та çӳрерĕ. Эсĕ унăн пысăк мар ĕç укçине те вăрла-вăрла илсе ĕçнĕ. Усĕрпе вăрçма тытăнсан вăл килтен туха-туха тарса сивĕ сарайĕнче те, урамра та нумай çĕр каçнă. Паллах: шăннă, пăсăлнă, чирленĕ. Чĕри те çавăнтах начарланса пынă унăн, - терĕм те эпĕ, Попов йынăшса ячĕ. Унтан вăл çерем çине выртрĕ те вăраххăн калаçма пуçларĕ:

- Пулнă пуль... Пулнă ун пеккисем... Ну, халь мĕн тăвас-ха, Сергей?!. Мĕн пулни пурте иртсе кайнă - вĕсене тӳрлетесси кая юлчĕ. Ан вăрç... пăхма пĕлменни те пулнă. Тĕрĕс! Вăрçас мар. Унăн тăпри умĕнче вăрçса калаçас мар... Ленăн мар, ман хамăн вилмелле пулнă... Унăн пурăнмаллаччĕ, - терĕ те вăл çавăнтах ача пек ӳлесе ячĕ. - Эпĕ пĕтнĕ çын! Пĕччен акă... Хамăн вилмелле манăн! - кăшкăрчĕ вăл макăрсан-макăр-сан хĕрелнĕ куçĕсене шăлкаласа.

- Лăплан, Михал Николаич... Эсĕ пĕтĕмпех пĕтнĕ çын мар-ха. Ахалех ун пек шухăшлатăн. Пĕччен те мар, - хĕрӳ пур. Ăна пăхмалла, вĕрентсе кăлармалла, - тавăртăм эпĕ ăна.

Вăл аллипе сулкаларĕ:

- Çук, пĕтнĕ эпĕ, пĕтнĕ! Чăн, эрехпех пĕтрĕм... Ленăсăр пурăнни -пурнăç-и вăл маншăн?!.

- Ĕçме пăрахас пулать, Михал Николаич! Ак халех çумăнти бутылкăна

ывӑтса яр та малашне пӗр черкке те ӗҫнӗ ан пултӑр! Вара каллех чипер ҫынах пулатӑн, - терӗм те эпӗ, Попов каллех хуралса хытнӑ аллине сулса ячӗ.

- Ӗҫме парах тетӗн-и? Сана калама ҫӑмӑл! Мӗн, шӳт тӑватӑн-им эсӗ манпа?!. Пӑрахма кирлине эпӗ хам та пӗлетӗп ӑна. Ну, халь мар. Ӗлӗкрех, ҫамрӑкрах чух, вунӑ е ҫирӗм ҫул каялла пӑрахмалла пулнӑ, - хӑйӑлтатса тавӑрчӗ вӑл эпӗ хистенине хирӗҫ.

- Халь ма юрамасть тата? - ыйтрӑм эпӗ.

- Халь ҫу-ук, кая юлчӗ! Пӗлетӗн-и, халь эпӗ ӗҫмесӗр пурӑнаймастӑп, - мӑкӑртатрӗ вӑл. - Манӑн халь ӑшчик, ӳт-тир, чун, пӗтӗм пурнӑҫ - пурте ӗҫме ыйтаҫҫӗ. "Эрех! Эрех!" теҫҫӗ. Эрех ҫук пулсан - денатур е самогон. Унсӑр пурӑнаймастӑп...

- Тӗлӗнтеретӗн! Епле вара кӑмӑлу туртнине ҫӗнтерме вӑю-халу ҫитеймест сан? Эсӗ пурнӑҫа сахал мар курнӑ ҫын. Ҫамрӑк мар. Кӑмӑл туртнине чарма хал тупмаллах. Вӑй-халу ӑс-хакӑлна пӑхӑнтӑр. Ҫирӗп кӑмӑллӑ пулмалла, - тетӗп ӑна.

- Ну, шалишь! - тавӑрчӗ вӑл мана пӳрнипе юнаса. - Ҫамрӑкла пӑрахман пулсан ватӑлсан пӑрахаймастӑн.

- Вилетӗн вӗт эрехпех?!

- Вилем каям - ӗҫме пӑрахаймастӑп ӗнтӗ халь. Вилнӗ чух та хампа пӗрле тупӑка эреххурса яма хушатӑп...

- Эсӗ ху шӳт тӑватӑн пуль, Михал Николаич! Е чӑнласах калатӑн-и ку сӑмахсене?

- Чӑнласах пулмасӑр! - кӑшкӑрчӗ те вӑл каллех чыхӑнкаласа кайрӗ. - Ӗҫкӗ сиенне эпӗ хам та чухлатӑп ӑна. Ӗҫке ерни ҫынна пӗтерет. Пурнӑҫа, сывлӑха лачакана туртса кӗртет. Ну, ӗҫме вӗренсен пӑрахма хӗн... Кала эс ҫамрӑксене, тин ӗҫме тытӑннисене: вӗсем вӑт ан ӗҫчӗр. Вӗсене пӑрахма та ҫӑмӑлтӑрах... Ну, ман пеккисем - пӗтнӗ ҫынсем. Пире пӑрахтарма ҫук. Вилетӗп - ӗҫетӗп...

Эпӗ ӑна килне таврӑнма чӗнтӗм. Вӑл пуҫне сулкаларӗ те: - Каймастӑп. Виличченех кунта ларатӑп, - тесе хучӗ. - Чӑнах, килте Ленӑна асӑнмалла, ӑна пытарма килнӗ ҫынсене тав тумалла... Ну, унта Сима пур, кӳршӗсем пур, сестрасем, санитаркӑсем пур. Вӗсем хӑйсемех пурне те майлаҫҫӗ, - мӑкӑртатрӗ

вăл.

Унпа калаçса тăрса йĕркине тупас çуккине кура эпĕ йывăç тĕмĕсем хушшинчи çеремпе утса кайрам. Пĕр ывçă шурă, хĕрлĕ, кăвак куçлă чечексем татса пухрăм та вĕсене Лена тăпри çине пырса хутăм.

Эпĕ чечексем пухнă вăхăтра Попов бутылкинчи денатуратне пĕтĕмпех ĕçсе янă та ним пĕлми пуличчен ўсĕрĕлсе сирĕнь теме айне хутланса выртнă. Вăл ĕнтĕ калаçма та пултараймасть. Эпĕ чĕннине хирĕç темскер мамласа, ĕнĕрлесе кăна выртрĕ.

* * *

Вилнĕ этем илтме те, курма та пултараймасть ĕнтĕ. Апла пулин те халăх хушшинчи йăла тăрăх çĕнĕ вилтăпри умне тăрса тайма пуçа тайрăм та, çунакан кăмăла лăплантарас тесе лăпкăн кăна çапла каларăм:

- Лена тусăм! Вăхăтсăр татăлчĕ санăн ĕмĕрў. Вăхăтсăр сўнчĕ таса пурнăçу. Ир хупăнчĕç чечек пек илемлĕ кăвак куçусем! Татах та нумай пурăнмаллаччĕ-ха санăн. Хăвăрт вилсе выртнипе сана юлашки хут курса калаçаймарăм та. Мĕнле те пулин кўрентернĕ пулсан, - каçар! Лăпкăн çывăр! Тăпру çăмăл пултăр!..

Сăмахăма калана чух эпĕ унăн тăпри çине хунă чечек кăшăлĕсем çине пăхса тăтăм. Çак вăхăтра мана Ленăн тĕрлĕ тапхăрти сăнĕпе кĕлетки аса килчĕ. Унăн вунсаккăрта чухнехи, çирĕм пиллĕкри, вăтăрти, хĕрĕхри сăн-сăпачĕсем кино экране çинчи пек курăна-курăна иртрĕç. Эпĕ унăн сассине илтрĕм: савăннине, пăшăрханнине, куляннине астуса илтĕм. Мана вăл, вăрçăран йывăр аманса таврăннă çынна, малалла хавасланса пурăнма çутă ĕмĕтпе пурнăç шанчăкне чĕртсе панăччĕ. Çавна та аса илтĕм. Лена чĕртсе панă пурнăç ĕмĕчĕ - маншăн ылтăн-кĕмĕлтен те паха шутланать. Мĕншĕн тесен вăл манăн малаллахи пурнăç хаваллăхĕ пулса тăчĕ. Çавăнпа та ман ăна хам ума тăратса чĕререн тав тăвассăм килчĕ. Анчах та пĕрре вилсе выртнă çынна чĕртсе тăратма çук!

Ассăн сывласа илтĕм те тэтах унăн ятне асăнтăм:

"Лена, санăн çутă сану виличчен те асрзн кзяс çук... Тăпру çăмăл пултăр!" - тесе çăва çинчен хурлăхлăн тухса утрăм.

Ленăна пытарсан тепĕр икĕ кунтан Сима ман пата пырса кĕчĕ. Амăшĕ епле хăвăрт вилсе кайни çинчен вăл мана куççулĕ витĕр каласа пачĕ.

- Сире пĕлтерме вăхăт та пулмарĕ, Сергей Андрейч. Ал-урасем çыхăнса ларчĕç. Юрать-ха аннен поликлиникăпа госпитальти пĕрле ĕçленĕ юлташĕсем пулăшрĕç, - терĕ вăл мана.

Çакăнпа пĕрлех Сима хăйĕн ашшĕ кашни кунах çăва çине кайса ларни çинчен тата вăл халь никампа та нимĕн калаçми пулни çинчен пĕлтерчĕ.

- Çимеллисем пур-ха, - терĕ вăл эпĕ ыйтнине хирĕç. - Эсир илсе панă продуктсене анне хăй ыррăн çиеймерĕ те. Начар чĕреллĕскер, Коля вилнĕшĕн куляннипех пулĕ, хăвăрт хавшаса ӳкрĕ...

Эпĕ ăна нушапа аптранă вăхăтсем çитсен каллех хам пата пыма каларăм. Вăл ман патран самаях лăпланса тухса кайре.

Çакăн хыççăн вăхăт нумай та иртмерĕ, тепĕр ик-виçĕ эрнеренех пулас, Сима мана хăйĕн ашшĕ çăва çинчех вилсе выртни çинчен пĕлтерчĕ. Врач касса пăхсан вăл, çимесĕр начарланнăскер, денатурат нумай ĕçнипе вилсе кайнине палăртнă.

Сима сĕннĕ тăрăх, Попова арăмĕпе юнашар мар, унпа ура вĕçлĕн пытарчĕç.

- Аннене вăл нумай нуша кăтартрĕ, çавăнпа вĕсене юнашар пытарас мар, - терĕ Сима ашшĕне пытарма пынă кӳршисене.

Кӳршисем ăна итлерĕç.

Тăлăха тăрса юлнă Симăна пушаннă кил-çуртра пĕччен пурăнма кичем пулчĕ. Вăл хăй патне хваттере яма лайăх çынсем тупса пама ыйтрĕ. Эпĕ ку тĕлĕшпе унăн кӳршисемпе канашласа пăхрăм. Кӳршисем эпĕ тупса панă çынна яма килĕшрĕç.

Çав вăхăтра пирĕн издательствăра Белоруссирĕн куçса килнĕ Анета Казимирова ĕçлесе пурăнатчĕ. Анета Казимирова хăйĕн виçĕ ачипе пĕрле Шупашкара килсе вырнаçнă, унтан пирĕн издательствăна ĕçлеме кĕчĕ. Анчах та вăл пĕрмаях вăхăтлăха вырнаçнă хваттере хĕсĕк пирки юншăхлатчĕ, ачисене ирĕкрех пултăр тесе аслăрах хваттер тупса пама ыйтатчĕ. Вăл хăй йăваш та сăпай хĕрарăмччĕ. Поповсен килне вырнаçсан Анета питĕ кăмăллă пулчĕ.

Сăпайлă Анета Казимировăпа тата унăн ачисемпе Сима та часах туслашса

çитрĕ. Хĕллене валли вĕсене вутă турттарса патăмăр. Казимирова çемйине фронт патĕнчен куçса килнисене пăхакан комитет та пособисем парса пулăшкалатчĕ. Симăна укçа-тенкĕ çитменнипе аптранă вăхăтсенче эпĕ хам пулăшаттăм. Ун чух çимелли продуктсене пурне те карточка тăрăх сутатчĕç те вĕсене илме укçа пулсан выçă вилмеллех марччĕ. Çав майсене пула Симăпа Казимирова çемйи аванах пурăнчĕç. Сима тата тепĕр çул вĕренчĕ те çуркунне вăтам шкул пĕтерсе тухрĕ.

Вăтам шкултан тухсан вăлçуллапа кĕрхи уйăхсенче медсестрасен курсĕнче вĕренчĕ. Вара хĕле хирĕç кӳршисем ӳкĕтленине пăхмасăрах çара кайрĕ.

Малтанах вăл фронт çывăхĕнчи госпитальте ĕçлерĕ, унтан медицина санитарĕсен батальонне куçни çинчен пĕлтерчĕ.

Фронта çитсен Сима ман пата виçĕ çыру ячĕ. "Фронтăн малти линисенчех аманнă салтаксене малтанхи пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлетпĕр", - тесе çырчĕ вăл. Мана яланах хăйне ашшĕ выраннех пăхса пулăшнăшăн тав турĕ. 1944 çулта Совет Çарĕ пысăк çĕнтерӳсем туре, фронт инçетрен инçетелле куçса пычĕ. Ку пире савăнтарчĕ. Халăх Гитлер çарĕ арканса пуçĕпех пĕтсе ларасса, часах мир пуласса кĕтрĕ.

Анчах та çак тапхăртах, кĕр çывхарнă вăхăталла, Симăран çыру килми пулчĕ. Эпĕ вăл фронтра пĕтрĕ пулĕ тесе пăшăрханма тытăнтăм.

Анчах эпĕ кăлăхах шикленнĕ иккен. Вăрçă чарăннă çулхинех, август уйăхĕнче, Сима сасартăк Шупашкара Таврăнчĕ. Вăл хăйĕн кĕлеткипе йăлтах çитĕнсе çитнĕ хĕрсен шутне кĕнĕччĕ ĕнтĕ. Çӳллĕ, тĕреклĕ, витĕр курăнса тăнă пек туйăнакан çутă сарă сăнлă хĕр. Пĕтĕм кĕлеткипе хăй амăшĕн вăйпитти чухнехи сăнарне аса илтерет. Ун çинче - симĕс материрен çĕлетнĕ хĕрарăм костюмĕ, касса кĕскетнĕ çӳçлĕ пуçĕнче совет салтакĕн пилотки, кăкăрĕ çинче - виçĕ медаль. Калаçасса халь вăл çара кайичченхи пекименсе те кулянса мар, хăюллăн та паттăр калаçать.

- Мĕншĕн çырма пăрахрăн? Сана таçта пĕтрĕ пулĕ тесе те пăшăрхантăм эпĕ, - терĕм те ăна, вăл кулса кăна илчĕ.

- Каçарăр, Сергей тете! Айăплă ку енчен... Ак мĕн пирки çырмалла пулмарĕ. Фронт малалла хăвăрт куçса пычĕ. Таçта Польшăпа Румыни çĕрĕсенче те куçкаласа çӳреме тӳр килчĕ... Вăхăт пӳлаймарĕ пулмалла. Çырасах тесен çырма та пулатчĕ пулĕ те – ăс-пуç çыру патне пымарĕ... Ак мĕн пирки çыраймарăм сирĕн пата. Каçарăр! - терĕ Сима хăйне айăплăн туйса.

Çакăнпа пĕрлех вăл çак кĕркуннеренех Мускаври университетăн медицина факультетне вĕренме каясси çинчен пĕлтерчĕ. Эпĕ уншăн савăнтăм кăна.

Поповсен çуртĕнче пурăннă Казимирова Белоруссие куçса кайнăччĕ ĕнтĕ. Вĕсен кивелнĕ çурчĕ пуш-пушах янраса ларатчĕ.

Ку çуртăн чӳречисемпе алăкĕсене хупса лайăххрах çапса питĕртĕмĕр те, август вĕçĕнче Сима Мускава тухса кайрĕ.

* * *

1951 çул çитсе тăчĕ. Июль вĕçĕ. Çанçурăма пĕçертекен шăрăх кунсем тăраççĕ.

Издательствăра хĕрсех ĕçлесе ларнă вăхăтра пирĕн кабинета икĕ çамрăк çын кĕрсе тăчĕ: пĕри - хĕр, тепри - çамрăк арçын. Хĕрĕ - кăтралатнă сарă çӳçлĕ те кĕрен платье тăхăннăскер - Сима пулчĕ иккен! Унăн çутă сăнĕпе кăвак куçĕсем çиççе кăна тăраççĕ. Арçынĕ - кĕске çанăллă кăвак кĕпе тăхăннă тăлпан пӳллĕ каччă - халиччен курман этем. Вăл, хурарах çӳçлĕ те хура куçлăскер, алăк патĕнче шарламасăр пăхса тăрать.

Сима мана курсанах:

- Ав ăçта ларать вăл Сергей Андрейч! - тесе ман паталла ыткăнчĕ, алла тытса илсе хăюллăн калаçма пуçларĕ. Ăна кура çамрăк арçынĕ те пирĕн пата пырса тăчĕ.

- Ку - манпа пĕр факультетран вĕренсе тухнă çывăх тус-юлташ -Арефий Петрович Пушев, - терĕ Сима мана хăйĕн каччипе паллаштарса.

Эпĕ вĕсене пукансем лартса патăм та, пирĕн хушăра хĕрӳллĕ калаçу пуçланса кайрĕ. Калаçу хушшинче Сима эпĕ чылай ватăлса улшăнни çинчен асăрхаттарчĕ.

- Вĕренсе тухрăр апла, тăрăшрăр, - терĕм те эпĕ, вĕсем иккĕш те врач ятне паракан диплом илни çинчен тата виç-тăватă кунтан хăйсене панă вырăна — Пушкăрт республикине тухса каясси çинчен каласа пачĕç.

- Мĕншĕн ху çуралнă çĕршыва килме ыйтмарăн? Шупашкара килмеллеччĕ! - терĕм эпĕ кăшт пăшăрханарах.

Сима сасăсăр кулса илчĕ те хуллен:

- Акă мĕншĕн Пушкăртстана каймалла пулчĕ, Сергей тете, - терĕ. - Ку çамрăк çын - ман юлташ - Пушкăрт республикинчен. Унăн ашшĕ-амăшĕ те, тăванĕсем те унта пурăнаççĕ. Вĕсем ăна хăйсем патне чĕнеççĕ. Вăл хăй те унтах таврăнасшăн... Эпир Арефий Петровичпа ик-виçĕ çул ĕнтĕ туслă пурăннă. Малашне те пĕрлех пурăнма сăмах татрăмăр... Пĕлетĕр-и, уйрăлма пултараймастпăр, - терĕ вăл именчĕклĕн кулса. Унпа пĕрлех унăн каччи те шăппăн кулса илчĕ.

- Уйрăлма хĕн пире, - терĕ вăл та хуллен пăшăлтатса.

- Апла пулсан манăн сире ырлăх сунса пиллемелли анчах юлать, - терĕм эпĕ хам та вĕсемпе пĕрлех кулкаласа.

- Çапла... Пиллемелле кăна, - теççĕ çамрăксем.

Малалла вĕсем Ĕпхӳ хулине тухса каясси çинчен, унтан иккĕш те пĕр çĕре вырнаçса пĕрле ĕçлеме ĕмĕтленни çинчен каласа пачĕç.

- - Пушкăрт республикинчи Сывлăх министерстви пире йышăнасси çинчен хут çырса ячĕ. Эпир çав хутпала каятпăр, - пĕлтерчĕç вĕсем.

- Кунта манăн уйрăммăнах Симăпа калаçмалла пулчĕ.

- - Маттур пултăн эсĕ, Сима! - терĕм эпĕ ăна. - Тăлăха тăрса юлнăччĕ - пуçна усса лармарăн. Пур вăйна хурса вĕрентĕн. Вĕренсе тухсан çамрăк хĕр халлĕнех Тăван çĕршыв кунçулĕшĕн пыракан хаяр вăрçа кайрăн. Çунтăн - тӳсрĕн. Вилĕмрен те, темле асапран та хăрамарăн. Халь акă пурнăçăн аслă çулĕ çине тухрăн, халăха пысăк усă кӳме пултаракан çын пултăн. Çакăншăн эпĕ чунтан савăнатăп! Аннӳ таса чĕреллĕ те ырă кăмăллă çынччĕ, яланах çынна ырă тума, усă кӳме тăрăшатчĕ. Эсĕ те аннӳ çулĕпех кайрăн... Ырлăх, телей, ăнăçлă

пурнăç сунатăп сире иксĕре те!

Эпĕ весен аллисене тытса хыттăн-хыттăн чăмăртарăм та çав каçхинех хамăн хваттере хăнана пыма чĕнтĕм. Çамрăк мăшăр эпĕ чĕннине хапăл туса кăмăллăн тухса кайрĕ.

Кĕске вăхăтлăха тăван хулинче пурăннă чух Сима хăйĕн тантăш-юлташĕсемпе, пĕлĕшĕсемпе курнăçса калаçрĕ, вĕсемпе сывпуллашрĕ. Ку самантсенче вăл сахал мар хумханчĕ, хурланчĕ. Çак хушăрах тата умра таракан çĕнĕ пурнăçĕпе пысăк ĕçĕсем çинчен ĕмĕтленсе хавасланчĕ. Каяс умĕн Сима хăйсен кивĕ çуртне сутса хăйне çыхса тăнă ачалăх сăпкипе ĕмĕрлĕхех уйрăлчĕ.

Тата темиçе кунран эпир Симăна пĕтĕм тантăш-пĕлĕшĕсемпе, кӳрши-аршисемпе пĕрле пăрахутпа ăсатса ятăмăр.

Симăпа юлташне ăсатса яни нумай та иртмерĕ, - эпĕ пысăк çыру илтĕм. Кĕтмен çыру кăмăла хускатрĕ, шухăша ячĕ. Ăна ман пата вунпилĕк çула яхăн пĕр хыпарсăр пурăннă Настя Иванова Уралти пĕр рудникрен çырса янă.

Ку çырура Наçтӳç хăйĕн пĕтĕм чунне уçса кăтартнă. Унпа вăл мана хăй ăçта-ăçта пулнисене, мĕнле пурăнса мĕн тӳссе иртнернисене пĕр пытармасăр йăлтах çырса пĕлтерме тăрăшнă. Мана пуринчен ытла вăл халь йĕркесĕр пурăннине ăнланса илсе ӳкĕнни тата тахçан кӳрентернисемшĕн каçару ыйтни тĕлĕнтерчĕ. Шултра саспаллисемпе кармакласа çырнă пысăк çыру малтан пуçласа вĕçне çитичченех çак хĕрарăм кăмăлĕ чăннипех те улшăннине кăтартса пачĕ.

"...Санран уйрăлса кайнă хыççăн пĕр çул ытла Куйбышевра пурăнтăм, - тенĕ вăл çырăвĕнче. - Кунта эпĕ хамăн малтанхи упăшкана тупма шутланăччĕ. Тупаймарăм. Вăл таçта Çĕпĕр еннелле тухса кайнă терĕç. Унта пурăнакан атте шăллĕ мана хăй патĕнче усрамарĕ. Нимĕнле ĕçе те кĕме тăрăшмарăм. Ресторансенче, столовăйсенче пĕр тĕлсĕр çапкаланса çӳрерĕм. Тӳррипех калатăп сана: тĕттĕм кĕтессенчи таса мар çынсемпе - вăрăсемпе, шулĕксемпе çыхланса кайрăм, вĕсен притонĕсенче пурăнтăм. Ĕçке ерни пĕтерчĕ мана! Аллăмсем кукăрăлчĕç. Ĕçес килет, çиес килет, - укçа çук. Йывăр ĕçе каяс килмерĕ. Çăмăл пурăнса, укçа-тенке те çăмăл майсемпех тупас килчĕ. Çапла вара аллăмсем ют

çын кĕсйисене кĕме вĕренчĕç. Хам та вăрра вĕренсе кайрам. Çакăншăн темиçе хут милицине, суда лекрĕм. Юлашкинчен хытах айăпласа юсанмалли çурта хупрĕç. Унтан лагере ячĕç. Вăрçă çулĕсенче лагерьтен тимĕр тăпри кăларакан руднике куçарчĕç. Кунта та малтан хурал аллинчех ĕçлерĕмĕр. Питĕ йывăр пулчĕ тимĕр чулĕ турттарнă çĕрте ĕçлеме. Йывăр ĕçпе лутăркарĕç, тӳрĕ пурăнма вĕрентрĕç... Халь ĕнтĕ тинех ирĕке тухрăмăр. Хурал аллинчен хăтарчĕç. Çакăнпа пĕрлех рудник ĕçне те хăнăхса çитрĕмĕр... Ирĕкре - йывăр ĕç те çăмăлланнă пек туйăнчĕ!.. Пĕлтĕр кăна пĕр пӳлĕмлĕ хваттер пачĕç. Ку хваттерте халь пĕр арçынпа иккĕн пурăнатпăр. Вăл та хам пекех ларса тухнăскер, хампа тантăшах.,. Ху чухлатăн, Çеркки, халĕ эпĕ текех çамрăк çын мар ĕнтĕ: хĕрĕх саккăр тултаратăп...

Хамăн еншĕн, тăван ялпа Шупашкара курасшăн хытă тунсăхлатăп... Анчах куçса пырсан та халь унта мана никам ыталаса илсе хапăл тăвакан пулас çук ĕнтĕ... Пĕлетĕп: эпĕ сана та хытă тарăхтартăм, нумай кӳрентертĕм; ырă кăмăлушăн пĕрре те тав тума пĕлмерĕм... Каçарăн-ши эсĕ мана хăçан та пулин хамăн тăрлавсăр пурнăçшăн е çук - эпĕ ăна пĕлместĕп. Пĕрре шутлатăп та - мана никам та каçарма пултарас çук, эпĕ хĕрхенме тивĕçлĕ çын мар. Тепре шутлатăп та - пĕр эсĕ кăна хăвăн лайăх кăмăлупа каçарма пултарăн, тен. Анчах каçарсан та хамах ăнланатăп, туятăп: эпĕ текех санпа пурăнма тивĕçлĕ çын мар ĕнтĕ, сан патна пырса кĕме те юрăхлă мар. Санăн тӳрĕ те ырă кăмăл пулнине эпĕ лагерьте пурăннă чух тин лайăххăн ăнланса илтĕм. Тимĕр чулĕсене хирсе мекĕрленнĕ хушăра кăна манăн шухăшсем улшăнчĕç, кăмăл та урăхланчĕ. Хама эпĕ халь çĕнĕрен çуралса ӳснĕ урăх çын пек туятăп, çамрăк ĕмĕре тăрлавсăр ирттерсе янăшăн кулянатăп. Эпĕ ăнланман çав, çын культурăллă пурăнни - вăл чаплăн тумланнинче тата лайăх ĕçсе-çисе ялан савăнса пурăннинче кăна тесе шутланă. Çавăнпа тăтăшах иртĕхиччен ĕçме-çиме, ашкăниччен савăнма юратнă. Кун пек пурнăçра, паллах, эпĕ сана суйни те, улталани те пулнă. Халь куратăп ĕнтĕ: нумай тарăхтарнă сана... Уйрăлмалла пулнăшăн эсĕ мар, эпĕ хам айăплă. Ман чăкăлташма кирлĕ пулман... Арлă-арăмлăх йĕркинчен тухса кӳрентернĕшĕн, паллах, эсĕ мана пĕрре çех мар хытă çилленнĕ. Вĕсемшĕн халĕ

те пулин каçарма ыйтатăп, Çерки... Çакăнпа пĕрлех мана этем вырăнне хурса хисепленĕшĕн, лайăх пăхнăшăн чĕререн спаççипă калатăп. Халĕ манăн ватăлакан пурнăçра санпа пĕрле ирттернĕ çулсем çеç хура шăрçа ярăмĕнчен мерчен пĕрчисем пек йăлтăртатса курăнаççĕ. Чăн, эпĕ хама халь пĕтнĕ çынах теместĕп-ха. Тӳрлентĕм. Пурнăç каллех юсанать. Ватă çын темех те çук-ха мана. Çавăнпа хамăн пурнăç шăрçи ярăмне çĕнĕ ахах пĕрчисем те тирсе лартма пултарăп тен. Вăрçăпа юхăннă çĕршыв хуçалăхĕ те хăвăрт юсанать. Çĕршыв пурлăхĕ ӳснĕ май хамăр пурнăç та лайăхлансах пырасса шанатпăр... Пирĕн пĕр-пĕрне текех курасси пулмасть пулĕ тен. Куçа-куçăн тăрса тав тумалла пуласса шанмастăп. Çавăнпа темиçе çултан та пулин çыру урлах тав туса каçару ыйтма шутларăм санран...

Çырăвăма ырă кăмăлпа вуласа тух, мĕншĕн тесен эпĕ хам тунă çылăхсемшĕн ӳкĕнсе, лайăх кăмăлпа çыратăп. Çырăн-и ман пата каялла çак сăмахсене вуласан, çырмăн-и - ку санăн хăвăн ирĕкӳ. Çыр тесе йăлăнмастăп, тархасламастăп. Анчах пĕр вунă сăмах та пулин кăмăллăн çырса янă çыруна илсе вулани мана савăнтарнă пулĕччĕ. Эсĕ мана тӳрĕ те тĕрĕс çул çине тăратма тăрăшнине, лайăх çын картне лартма хистенисене виличчен те манмăп. Тепĕр хут тав тăвап, ырлăх-сывлăх сунатăп сана, Çерки.

Поповсене манран салам кала. Ленăна сан çумна хушса ахалех кӳрентертĕм. Ăна эпĕ сана хур тăвас тесе чăркашлантăм пулас. Уншăн Елена Яковлевнăран каçару ыйтатăп...

Чунтан хисеплесе çыратăп, чĕререн ӳкĕнсе юлатăп..." Юлашкинчен Наçтӳç хăйĕн адресне кăтартнă, анчах та çыруне хăçан çырни паллă мар. Конверт çинчи почта пичетĕнче кăшт палăракан цифрăсем тăрах çеç ăна вăл 1951 çулхи сентябрь уйăхĕнче янине чухласа илтĕм.

Нумайччен шухăшласа çӳрерĕм эпĕ Наçтӳç çыруне илсе вуланă хыççăн. Манăн ума çак хĕрарăмăн пĕтĕм пурнаçĕ тухса тăчĕ. Эпĕ унăн ĕçĕсене те, сăмахĕсене те аса илтĕм. Вăл çамрăк чух хăйне тыткалама пĕлменни мана çаплах кӳрентерчĕ, халĕ улшăнса урăхланни - хăйне тӳрлетме тăрăшни, иртнĕ йĕркесĕрлĕхне ăнланса ӳкĕнни - тĕлĕнтерчĕ, савăнтарчĕ. Çаксене вăл халĕ хăй

те ăнланса çитнĕ ĕнтĕ.

Нумай шухăша айлăн-çийлĕн çаварса лăпланнă хыççăн эпĕ Наçтӳç патне, хăй ыйтнă пекех, кĕске çыру кăна çырса ятăм.

"...Кăмăлу улшăннăшăн эпĕ савăнатăп, Настя. Çынна чăннипех те пĕр ĕç кăна - халăхшăн усăллă, хăйшĕн те кирлĕ ырă ĕç кăна - лайăхлатса тĕрĕс çул çинче тытса тăма пултарать. Ĕç - çыннăн кăмăлне ырăлатать, унăн шухăшĕсене илемлетет, ăна пурнăç çине ăнланса пăхма вĕрентет. Эсĕ ĕнтĕ тĕрĕс çул çине тăнă; малашне çак çултан ниçталла та ан пăрăн... Эпĕ мĕнле ĕçленине эсĕ пĕлетĕн; халĕ те çаплах ĕçлетĕп.

...Поповсем иккĕш те вăрçă вăхăтĕнчех вилчĕç: Лена - чĕре чирĕпе, Попове хăй - эрех ăшне путсах пĕтрĕ. Лена умĕнче сан маларах ӳкĕнмеллеччĕ, хăй чĕрĕ чух каçару ыйтмаллаччĕ... Пирĕн хваттер хуçисем пулнă Разумов старикпе Анна Михайловна вилни те чылай пулать. Сан ентешӳ пулнă Петр Михайлов хăйсен ялне кайрĕ, унта вăл колхоз председателĕнче ĕçлет... Çапла кунта паян сана ĕлĕк тарăхтарнă çынсем те, мана пăлхантарнисем те çук. Эпĕ хам çемьере савăнăçлăн тата ирĕклĕн те лăпкăн пурăнатăп.

Ку çырăва Настя Иванова илсе вуларех пулĕ тетĕп. Анчах та хăйĕнчен урăх çыру тавраш ĕлеймерĕм. Паллах, хăй пекех тӳссе ирттернĕ, халь тӳрленес çул çине тăнă çĕнĕ мăшăрĕпе килĕштерсе пурăнать пулсан унăн ман пата урăх çырма кирлех те пулман...

* * *

Çав çулхине, тата кайран та, ман пата Сима çырсах тăчĕ. Малтанхи çырăвĕнче вăл хăйсем иккĕш те пĕр районти больницăрах ĕçлени тата Арефий Пушевпа "саккун йĕркипех" мăшăрланни çинчен пĕлтерчĕ.

Юлашки çулсенче хăйсен çемйи хушăнса пыни çинчен, упăшкипе иккĕшĕ те врач ĕçĕпе кăна мар, халăх хушшинчи ытти ĕçсене те тимлĕн хутшăнса ĕçлени çинчен çыра-çыра тăчĕ.

Халĕ те вĕсем Пушкăртстанрах пĕр пысăк район центрĕнчи больницăра ĕçлеççĕ, хăйсен килĕнче телейлĕ те савăнăçлă çемьепе пурăнаççĕ.

*Элкер, Ç. Хурапа шурă : [повесть] / Ç. Элкер // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 383-442.*